27-100

М. П. ПЕТРОВ

# ÇӲРЕВÇĔСЕМ

## ВĔСЕМ ÇӲРЕНИСЕМ ÇИНЂЕН КĔСКЕН КАЛАСА ПАНИ




ЂĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔ
ШУПАШКАР ▫ ▫ 1927 ÇУЛ

# ЂĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔ

## ШУПАШКАР

**ЂĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔН ЂĂВАШ ШКУЛĔ ВАЉЉИ ÇАК КĔНЕКЕСЕМ ПУР:**

„Çулпуçĕ“ (пуквар) 4-мĕш хут тухнă . . . . . . . . 40 пус.
„Çутталла“ пуквар хыççăн вуламалли пĕррĕмĕш кĕнеке . . . . . . . . . . . . . .
„Çутталла“ пуквар хыççăн вуламалли иккĕмĕш кĕнеке . . . . . . . . . . . . . . . . . . 80 пус
„Йăвăçкурăк“ ăна пăхса ӳстересси . . . . . . 1 т 20 пус.
„Сатађ кĕнеки“ I-мĕш пайĕ. 2-мĕш хут тухнă
„ „ II „ 2-мĕш хут тухнă . . . 60 пус.
„ „ III „ „ „ „ . . . 70 пус.
„ „ IV „ „ „ „ . . . 55 пус.
КОВАЛЕНСКИ. Раççей историйĕ. I-мĕш пайĕ . . 1 т. 10 пус.
ТИМОФЕЕВ. Ђăвашла çырасси. . . . . . . . . . 25 пус.
ВАНЕРККЕ. Ђăваш ђĕлхийĕн орфокрафи словарĕ 48 пус.
РАЙКОВ. Етем анатомипе фиçиолоки тĕлĕшĕнђен вĕренекенсен практик ĕç туса пăхмаллисем . . 50 пус.
П. ИВАНОВ. Кеометри . . . . . . . . . . . . . 35 пус.
„ Первая книга для занятий по русскому языку в школах нерусского языка
„ Книга для занятий по русскому языку в третьих группах школ нерусского языка . . . . . . . . . . . . . . . 70 коп.
ЛУНКЕВИЧ. Ђĕрĕ ђунлă йапаласемпе йăвăçкурăксен пурнăçĕ çинђен . . . . . . . . . . . . . 65 пус.
КОТЕНКО И СМИРНОВ. Пионăра шкулта йертсе пыраканни . . . . . . . . . . . . . . . 18 пус.
ВАСИЛЬЕВ. Малтанхи шкулра вĕренмелли фиçикка кĕнеки . . . . . . . . . . . . . . . . 1 т.
РОМАНОВА. Сывлăха сыхласси . . . . . . . . . 45 пус.
ПИКТОРИНСКАЯ. Ленин çинђен (Унăн пурнăçне шкулта аса илнисем) . . . . 35 пус.

**Шкулти ађасем ваљљи çырнă кĕнекесем татах та пур. Вĕсем çинђен Ђăваш Кĕнеки Уйрăмĕн катталăкĕ çине пăх. Катталăкне укçасăрах йараççĕ.**

**Кĕнекесене çырса илмелли атрĕс:**
**г. Чебоксары, Канашская № 15**

**„ЧУВАШГИЗ“**

27-100

М. П. ПЕТРОВ

# ÇӲРЕВÇĔСЕМ

## ВĔСЕМ ÇӲРЕНИСЕМ ÇИНҪЕН КĔСКЕН КАЛАСА ПАНИ

ҪĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔ
ШУПАШКАР — 1927

Отпечатано в типографии
школы ФЗУ. Чебоксары.
Чувашлит № 238.
Заказ № 441. Тир. 5000 экз.

# 1. Авалхи ҫынсем ҫӗр ҫинҗен мӗнле шухӑшланӑ.

Епӗр пурӑнакан Ҫӗр пит пысӑк, вӑл — етем тӗнҗи, унӑн кил-ҫурҗӗ. Пӗҗӗк аҗа хӑй ҫуралнӑ кил-ҫуртне пӗҗӗккӗн - пӗҗӗккӗн пӗлсе ҫитнӗ пек, етем те хӑй тӗнҗине ҫапла пӗҗӗккӗн-пӗҗӗккӗн ҫеҫ пӗлсе пыраҭ.

Җӑн авалхи ҫынсем Ҫӗр йеплине пӗлмен. Вӗсем хӑйсем ҫуралса ӳснӗ ҫӗр-шыва анҗах пӗлнӗ, — катари, айакри вырӑнсене пӗртте пӗлмен. Ҫавӑнпа авалхи халӑхсем ҫӗр ҫинҗен тӗрӗс шухӑшлайман, кашни халӑх хӑй майлӑ шухӑшланӑ.

Авалхи интуссем каланӑ: темӗн пысӑкӑш ҫӗре тӑватӑ (слун) пин тытса тӑраҭ, пинӗсене мӑн тимӗр шапа ҫӗклесе тӑраҭ, вӑл шапа вӗҫӗ хӗррисӗр аслӑ сӗтлӗ тинӗс ҫинҗе ишсе ҫӳрет, тенӗ.

Авалхи йекипӗтсем каланӑ: ҫӗр — вӑл Йекипӗт ҫӗрӗ; пӗлӗт — ҫаврашка, ӑна Йекипӗт җиккинҗи ҫӳлӗ тусем ҫӗклесе тӑраҫҫӗ; ҫӑлтӑрсем — вӗсем пӗлӗт ҫумне ҫакса йанӑ ҫутӑсем; хӗвелӗ — турӑ, вӑл кимпеле пӗлӗт тӑрӑх ҫутӑсем хушшипе ишсе пыраҭ, каҫ пул — ҫӗр тӗпне анса кайаҭ, ир ҫинҗе каллех тухаҭ, тенӗ.



1-мӗш ӳкерҗ. Интуссем ҫӗр ҫинҗен мӗнле шухӑшланӑ.

Авалхи вавилонсем каланӑ: Ҫӗр — вӑл темӗн пысӑкӑш тимӗр-тӑмӑр йупасем ҫинҗе тапранмасӑр тӑраҭ, йуписене тӗпсӗр хаос ӑшне тӗреклетсе хунӑ, ҫаврака пӗлӗт те никӗс ҫинҗе тӑраҭ, мал йенҗе хапха пур, хӗвел ир ҫинҗе ун виттӗр тухаҭ, вӑл йенҗех таса ту пур, унта турӑсем пурӑнаҫҫӗ, ҫӗр айӗнҗе шалта вилесен хули пур, йӗри-тавра ҫиҗӗ хӳмеллӗ, тенӗ.

Авалхи крек халӑхӗ шухӑшланӑ: виҫсе тухма ҫук аслӑ Ҫӗр ҫап-ҫаврака та тӳрем; унӑн тавра ӗмӗр ӗмӗрхи оккеан хуллен йухса ҫавӑрӑнаҭ; ҫаврака пӗлӗте йупасем тытса тӑраҫҫӗ: ҫӗрӗн тепӗр йенҗе, айалта, вилнӗ ҫын җунӗсем анса кайакан тискер

тамăк минђи çавракăшĕ (хуранĕ) çакăнса тăрат; çĕр варĕнђе турăсем пурăнакан Олимп тăвĕ тăрат, ун çинђен пĕтĕм çĕр алă çинђи пек курăнат, тенĕ.

Христос çуралађђен пĕр 500 çул малтан крек сынни Керотот, пит нумай çĕре çитсе курнăскер: Çĕр ђиккине пĕлме çук, тенĕ.



2-мĕш укерђ. Йекипĕтсем çĕрпе тĕнђе çинђен мĕнле шухăшланă.

Тепĕр ђаплă крек çыннийех Пифакор: Çĕр кăлай пек (шар пек) ђăмăр пулмалла, тенĕ.

Унтан кайрантарах Аристоттĕлпе Ераттосфен: Çĕр ђăнахах ђăп-ђăмăр, тесе вĕрентнĕ. Çав вăхăтрах Краттес йатлă ăслăлăхçă пĕђĕк Çĕр кўлепи (клопус) туса кăтартнă.



3-мĕш укерђ. Авалхи вавилонсем çĕр çинђен мĕнле шухăшланă.

Çапла авалхи халăхсем, тĕпĕ-йĕрĕпе пĕлмен пирки, Çĕр çинђен тĕрлĕ шухăшланă. Халĕ те епĕр, пĕр пĕр йапала çинђен тĕплĕрех

пĕлмесен, ун ҫинђен апла та, капла та калаҫатпăр. Ҫавăн пекех пулнă.

Пĕђĕк ађа хăйсенĕн кил-ҫуртне пĕђĕккĕн-пĕђђĕккĕн пĕлсе ҫитет терĕмĕр: утса ҫӳре пуҫласанах, вăл унта ҫитсе курать, кунта ҫитсе курать, ăҫта мĕн пурри-ҫуккине асăрхаса сăнаса пырать. Хăй пурăнакан Ҫĕре те етем ывăл-хĕрĕ, ҫапла туха-туха ҫӳре пуҫласан тин, т ĕ р ĕ с пĕле пуҫланă.

Ҫапла тухса ҫӳрекен сынсем вĕсем тĕлĕнмелле етемсем пулнă. Халĕ Ҫĕр ҫинђе вĕсем ҫитсе курман вырăн ҫукпа пĕрех. Вĕсем хăйсем илтни-курни ҫинђен кала-кала кăтартнă, темĕн ђухлĕ кĕнекесем ҫырса хăварнă. Ҫавăнпа вĕреннĕ сынсем халĕ Ҫĕр йеплине лайăх пĕлсе тăраççĕ. Ҫак кĕнекере ҫав ҫӳревҫĕсем ҫинђен кĕскен каласа паратпăр.




4-мĕш ӳкерђ. Крексем ҫĕр ҫинђен мĕнле шухăшланă.

## 2. Ђăн авалхи ҫӳревҫĕсем.

Авалхи ҫӳревҫĕсенђен ђăн ђаплисем **Керототпа Пифеас** пулнă. Икĕш те вĕсем крек сыннисем пулнă.

**Керотот** Кĕҫĕн Аҫи ҫĕрĕнђе Каликарнас хулинђе ҫуралнă. Вăл Христос ҫуралађђен 484 ҫул малтан пурăннă. Ликтамис тиран, влаҫе йарса илсе, халăха пусмăрласа пурăнаканскер, халăх хутне кĕрекен Керототăн пуҫне ҫийесшĕн пулнă. Вара вăл, 20-ҫулхи ҫамрăк сын, ҫав усал патшаран хăраса, хăй хулинђен Самос утравĕ ҫине пăрахса тарнă. Ҫакăнтан вара Керотот ҫул ҫӳреме тухса кайнă.

Ђи малтан вăл **Йекипĕте** кайнă. Вăл унти ђаплă хуласене Мемфисе, Келиопполисе, тата Фивăна ҫитсе курнă, кунтан тинĕс хĕррипе кайса Афрĕк ҫĕрне шалалла ҫитсе курнă.

Йекипĕтрен вăл малтан **Финиккийе,** унтан **Аравийе** кайнă, кунтан **Вавилона** пынă. Унта вăл ђылай пурăннă, Вавилон халăхĕн пурăнăҫне пĕлме тăрăшнă. Вăл калана тăрăх, Вавилон хули пит пысăк

ђаплă хула пулнă, унăнваррипе Йефрат шывĕ йухса выртнă;халăх тĕрлĕ тырă-пулăпа пахђа çимĕçĕсем туса пурăннă: тулă, урпа, вир акнă, иçĕм çырли, смоквă, тата тĕрлĕ паљмă йăвăçсем лартса ўстернĕ. Вавилон хули ванђăкĕсем халĕ пысăк сăртсем пек саланса выртаççĕ. Ђăн авал çавăнта ђăвашсемпе пĕр тĕслĕ халăх пурăннă теççĕ. Вĕсене шумер тенĕ, вăл ђăваш тенийех пулаť.



5-мĕш ўкерђ. Вавилон хулинђи пысăк çурт.

Вавилон çĕрĕнђен Керотот **Перс çĕрне** кайса курнă. Вăл каланă, тăрăх авалхи перссем аш-пăш апатне йуратман, йăвăç-курăк çимĕçне йуратнă, вăрçă ĕçне хавас тунă, ађипăђисене пит хытă тытса усранă, суйеçтерекене, парăма кĕрекене пĕрре те килĕштермен, вĕсем тата туррине пуççапма ђиркў таврашĕ нимĕн те туман, ăна çўлĕ тусем çине кайса пуççапнă.

Перс çĕрĕнђен Кертот **Инти çĕрне** кайнă. Унти халăхсем вăл вăхăтра хăшĕ-хăшĕ кил-çуртпа пурăннă, хăшĕ-хăшĕ тата вырăнтан вырăна куçса çўренĕ. Интирен çур-çĕрте пурăнакан халăхсем пит харсăр пулнă, вĕсем ылттăн тăпри пуçтарса йут халăхсене сутса пурăннă.

Кунтан Керотот **Мити çĕрне** кайнă. Митисем хăйсен пуç-хули Екпаттан тавра çиђĕ хўме тытса çавăрнă. Вăл питĕ пысăк хула пулнă. Митирен Керотот Капкаса çитсе курнă. Вăл **Каçпи** тинĕсне те пит лайăх пĕлнĕ.

Ку тинĕс патĕнђен вăл аслă çеçен хирсем тăрăх кайса **Çкифсем** патне çитнĕ. Вĕсенĕн хушшинђе ун ђухне ђăвашсем те пулнă пулмалла. Çак çкифсем çинђен Керотот питĕ тĕплесе çырса хăварнă.

Унтан вăл **Фраккипе** пĕтĕм крек çĕрне çўресе тухаť те, тин килне тавăрăнаť. Вăл халăхпа пĕрле Ликтамисе хирĕç тăрса, ăна патшаран кăларса пăрахаť, анђах влаçе каллах йурăхсăр çынсем

йарса илнӗ пирки, вӑл хӑй тӑван ҫӗр-шывне пӑрахса, Иттали ҫӗрне кайаҭ. 444-мӗш ҫулта вӑл Панафиней праҫникӗнҙе пӗтӗм крек халӑхне хӑй курса илтсе ҫӳрени ҫинҙен ҫырнисене вуласа кӑтартнӑ та, халӑх унӑн пит хавас пулнӑ. Вилессе вӑл Туриум хулинҙе 406-мӗш ҫулта вилнӗ.

Ҫапла Керотот хӑй вӑхӑтӗнҙи ҙаплӑ халӑхсем патне пурин патне те ҫитсе курнӑ. Ҫӗре вӑл: ҫаврака пулмалла, унӑн ҙиккине пӗлме ҫук, тенӗ.

**Пифеас** та Марҫҫел хулинҙе ҫуралса ӳснӗ крек ҫыннийех пулнӑ. Вӑл кимпеле Атлант оккеанне ишсе тухнӑ та, Йевроп хӗррипе ҫур-ҫӗр йеннелле кайнӑ. Вӑл Ламаншпа кайса **Алҙпион** утравӗсем патне ҫитсе ҙаранӑ. Унти халӑхсемпе паллашсан, вӑл тата малалларах кайса, Шотлантирен те ҫур-ҫӗртерехре выртакан утравсем патне ҫитнӗ. Кунтан вӑл, тата ултӑ кун шалалла ишсе кайса, **Фруле** йатлӑ ҫӗре ҫитсе кӗнӗ. Фруле тесе вӑл йе хаҙхи Ислантийе, йе Норвекийе калаҭ пулмалла. Кунтан ҫур-ҫӗрелле вӑл ишсе кайайман, мӗншӗн тесен, хӑй каланӑ тӑрӑх, унталла кайма „тинӗс те пулман, ҫӗр те пулман, сывлӑш та пулман.“ Ҙӑнах та унта тӗтрепе пӑс ҙас-ҙасах пӗтӗм ҫанталӑка хупласа илет те, ныҫта та кайма пӗлмелле мар пулаҭ. Пифеас ҫакӑн ҫинҙен калаҭ пулмалла. Кунтан кайран вӑл Палт тинӗс тӑрӑх кайса пӑхнӑ. Унта пӗр пысӑк шыв һатне тухнӑ. Ҫапла Пифеас икӗ хут тухса ҫӳренӗ, икӗ кӗнеке ҫырса хӑварнӑ.

Ҫак икӗ ҙаплӑ ҫын, Керототпа Пифеас, пӗри пӗр йӗнҙе, тепри тепӗр йенҙе ҫӳресе, Йевроппа Аҫи ҫӗрне ҙылайах пӗлсе ҫитнӗ.

## 3. Неарх, Страпон, Птоломей.

Керототпа Пифеасран кайран инҫе кайса ҫӳрекенсем сахал пулнӑ. Вӗсенҙен ҙӑн ҙаплисем: пӗри — **Неарх,** тепри — **Страпон.** Неарх Алексантӑр Маккетонски патша хушнипе Хр. ҫуралаҙҙен 326-мӗш ҫулта, 800 кимпе **Инт шывӗ** тӑрӑх анса, **Инти оккеанне** тухнӑ. Вара ҫыран хӗррипе ишсе пырса, Арави тинӗс урине ҫитсе кӗнӗ. Ҫул ҫинҙе Неарх темӗн ҙухлӗ хурлӑх курса пӗтнӗ: унӑн кимӗсене хайар ҫил-тӑвӑл ҫӗмӗрсе салатса пӗтернӗ, апат ҫимӗҫ пӗтнӗ, пӗр пӗр ҫыран хӗррине пырса ҙаранса тӑрсанах, тискӗр кайӑкла етемсем тапӑна пуҫланӑ, ҫапла, вӗсемпе ҫапӑҫа ҫапӑҫа, Неархӑн 2000 ҫынтан нумайӗшӗ вилсе пӗтнӗ. Ҫапах та вӑл Инти оккеанӗпе Арави тинӗсӗ тӑрӑх ҫӳресе килне таврӑннӑ. Ҫапла Неарх Инти ҫӗрне шывпа каймалли ҫул тупнӑ.

Страпон Христос ҫуралаҙҙен 50 ҫул маллтан Кӗҫӗн Аҫи ҫӗрӗнҙе Амаҫҫире ҫуралнӑ. Вӑл ҫамрӑклах философийе вӗренсе ҫитнӗ те, стоик пулнӑ. Ытти халӑхсем хушшине кайса курса ҫӳреҙҙен, крексем

вĕсене, хăйсенҫен нумай наҫара хурса, киревсĕр етем ăратти тесе шутланă, вĕсене **варвăрсем** тенĕ. Анҫах вĕсем патне кайа кайа ҫӳресен, вĕсемпе суту-илӳ тăва пуҫласан, вĕсемпе вăрҫăра ҫапăҫса курсан, крексем: Ҫĕр ҫинҫи пур халăх та пĕр пулма пултараççĕ, вĕсем пĕр пĕринҫен уйрăм пулни вăл ăрасна йунран килмест, вĕреннипе вĕренменнинҫен çеç килет, тенĕ. Хуҫипе ҫури хушшинҫе те нимĕн уйрăм çук тенĕ. Ҫапла шухăшлакансем **стоиксем** пулнă. Страпон та вĕсем майлă шухăшланă. Вăл хăйĕн „Кеокрафине“ ҫырма шухăш тытсан, малтан тĕрлĕ ҫĕре кайса ҫӳренĕ. Керотот пек вăл Аҫи Ҫĕрне, Йекипĕте, Крек Ҫĕрпе Итталийе ҫитсе курнă. Хăй курса ҫӳренĕ ҫĕрсем ҫинҫен вăл 17 кĕнеке ҫырса хăварнă, вĕсене пурне те пĕрле „**Кеокрафи**“ тесе йат хунă.

Ҫапла пĕҫĕккĕн-пĕҫĕккĕнех пĕрин хыççăн пĕри ҫӳресе, авалхи куљттурлă халăхсем ҫак хамăр пурăнакан Ҫĕре палласа пĕлсе ҫите пуҫланă. **Птоломей** йатлă, кенийлĕ, пит ҫаплă ăслăлăхçă, ҫав пĕлнисене пурне те пухса, пĕр кĕнеке ҫине ҫырнă, ăна „Мăн Кĕнеке“ тенĕ. Ҫак кĕнекере вăл хăй пурăннă вăхăтри тĕрлĕ халăхсем, тĕрлĕ хуласем, тĕрлĕ шыв-шурсем ҫĕр ҫинҫе хăш тĕлтине лайăхрах кăтартса пама тăрăшнă. Вăл хăйĕн „Мăн Кĕнекинҫе“ пирĕн Мăн Атăлпа Ҫулман Атăл [1]) ҫинҫен те калаť, Атăла вăл Ра тет, Ҫулман Атăла — Маййенҫи Ра тет.

## 4. Фа-Хиан.

Фа-Хиан Киттай ҫынни пулнă. Вăл III — IV ĕмĕрте нумай ҫĕре ҫитсе курнă. Вăл Киттай ҫĕрĕнҫен тухсан, 17 кун хушши аслă пушă хир урлă каҫнă та, Лоп кӳлли патне ҫитнĕ. Ку кӳлĕ патĕнҫен вăл Хоттан йатлă тутар патшалăхне ҫитсе курнă. Виç уйăхран вăл ҫӳлĕ тусем урлă каҫнă та, Инти ҫĕрне ҫитнĕ. Унти „Вăта Ҫĕрти патшалăхра“ пурăнакан халăхсем ҫинҫен Фа-Хиан ак ҫапла калаť: ҫак патшалăхри ҫынсем пит тӳрĕ, ырă кăмăллă, вĕсенĕн ни тӳресем, ни сакконсем, ни хурлăх кăтартусем нимĕн те ҫук; вĕсем апат-ҫимĕç тума пĕр ҫĕр-ҫуна та тивмеççĕ; вĕсенĕн патшалăхĕнҫе ыљҫăх-ҫĕрлĕх пусас йăла та ҫук, хупахсем те ҫук,“ тет. Инти ҫĕрĕнҫе Фа-Хиан нумай хуласене ҫитсе курса ҫӳренĕ. Унтан вăл Сейлен утравĕ ҫине каҫнă, кунтан Йавă утравĕ ҫине, йулашкинҫен хăй ҫуралса ӳснĕ Сиан-Фу йатлă хулана таврăннă. Ҫапла вăл пурĕ 18 ҫул йут ҫĕрсем тăрăх, вырăнтан вырăна куҫа, сăнаса ҫӳренĕ. Фа-Хиан ҫырнă кĕнеке тăрăх çеç, епĕр Аҫи варринҫи халăхсем III — IV ĕмĕрте йепле пурăннине пĕлсе тăратпăр.

[1]) Авалхи крексем Атăла „Оар“ тенĕ, ку сăмах ҫăваш сăмахĕ „вар“ тенĕ пек туйăнаť, мĕншĕн тесен, авалхи ҫăвашсем (пăлхарсем) мăн шывсене „вар“ тенĕ пулас.

## 5. Ђиркӳ Çĕр çинђен вĕрентни.

Христос тĕнĕ IV — V ĕмĕрсенђе сарăлнă çемĕн сарăлса, хăватлă-ланнă çемĕн хăватлăланса пынă. Вăйланса çитсен, ђиркӳ науккăна хирĕç пыра пуçланă. Вăл авалхи ăслăлăхçăсемпе çӳревçĕсем Çĕр çинђен вĕрентсе каланине суйа сăмахсем тенĕ. Пуринђен ытла Çĕр кăлай пек ђăмăр тенине ђиркӳ пĕртте йуратман, килĕштер-мен. Авалхи çӳревçĕсем, темĕн ђухлĕ терт курса, таçта çитех кайса, хăйсенĕн куçĕпе курни-илтнисене те, ђиркӳ пуçлăхĕсем нимĕн вы-рăнне хумасăр, астаракан суйа сăмахсем тенĕ.

Тĕттĕм халăха вара „ырă“ аттесем Пипли кĕнеки тăрăх вĕренте пуçланă. Пиплире каланине науккăра каланинђен мала хунă, йе науккăра каланисене, Пипли майлă туса, пăсса пĕтернĕ. Çĕр кăлай пек ђăмăр тесе вĕрентнине пĕтерсе хунă та, вăл ывăс пек çаврашка тесе вĕренте пуçланă, мĕншĕн тесен, Пипли кĕнекинђе пĕр тĕл пур, вăл тĕлте Иссай пророк калаť: турă вăл Çĕр çаврашкинђен çӳлте ларат... вăл пĕлĕтсене çинçе тĕртĕм пек сарса йарса, вĕсене хӳшĕ пек карса хурса, пурăнма йурăхлă тунă, тет. (Иссай кĕнеки, XXX, 22). „Çветтуй аттесем“ вĕрентнĕ тăрăх, Çĕр çинђе хĕвел тухăçĕнђе, Капкасран çурçĕрелле, Кокпа Макок (Гог и Магог) йатлă тискер халăхсем пурăннă. Вĕсем Капкас урлă каçса, Кĕçĕн Аçи çĕрне пырса ан кĕрейђђĕр тесе Александăр Маккетонски тимĕр хапха тута рса, вĕсене питĕрсе хун пулаť. Тата тĕрлĕ кĕнекесем çинђе калама çук тискер çынсем çинђен нумай çырнă: хăрах уралла йе хăрах куçлă, йе ђĕлхе-çăварсăр, йе йытă пуçлă, йе лаша уриллĕ, йе тата урăх тĕслисем те нумай, тенĕ. Çапла христиансенĕн пуçлăлăхĕсем Çĕр çинђен нумай урмăш сăмахсем сарса, халăха хăратса пурăннă.



6-мĕш ӳкерђ. Ђиркӳ вĕрентни.

## 6. Арап çӳревçисем.

VII-мĕш ĕмĕртен пуçласа, арапсем тĕрлĕ халăхсене çĕнтернĕ те, пит пысăк патшалăх тунă. Вĕсенĕн патшалăхĕн пĕр хĕрри Атланти оккеанĕ патне тухнă, тепĕр хĕрри мал йенђе Киттай çĕрне пырса перĕннĕ. Вара арапсенĕн ăслăлăхçисем авалхи крек çӳрев-çисем çырса хăварнă кĕнекесене вĕрене пуçланă, вĕсем ăçта ăçта çитсе курнине пĕлме тăрăшнă, вĕсенђен хăйсенђен те нумайĕшĕ

çӳревçĕсем пулнă. Çак çӳревçĕсем хушшинҫе ҫи паллăраххисем ак çаксем: **Сулейман**—вăл IX-мĕш ĕмĕрте Киттайа çитех çӳренĕ **Ахмет-ипн-Фотлан**—вăл X-мĕш ĕмĕр пуçламăшĕнҫе пирĕн ҫăвашсем патне Пулкар патшалăхне килсе курнă, Атăл таврашĕнҫе пурăнакан халăхсем çинҫен пĕлтерсе кĕнеке çырса хăварнă, пирĕн тĕп аттемĕрсем йепле пурăнни çинҫен епĕр унăн кĕнеки тăрăх пĕлетпĕр. **Массути**—вăл 915-мĕш çулта Интирен пуçласа Перçипе Ермекийе Йекипĕтпе Испани çĕрне çитсе çӳренĕ, хăй курни-илтнине „Ылттăн Улăхĕ“ йатлă кĕнеке çине çырса хунă; йулашкинҫен **Ипн-Патут** çинҫен пĕр-ик сăмах калас пулаť,—вăл Марокко çынни пулнă, пурĕ 30 çул çӳренĕ, нумай çĕре çитнĕ, Киттайра та пулнă, хаҫхи Раççейри çеçен хирсене те çитсе курнă. Арап çӳревçисем çырса хăварнă кĕнекесене вуласа, Йевроп çыннисем кайран нумай усă курнă. Арапсенҫенех вĕсем компăспа çӳреме вĕреннĕ, компăсне арапсем хайсем киттайсенҫен илнĕ.

## 7. XIII—XIV ĕмĕрти çӳревçĕсем.

Çак ĕмĕрсенҫе ҫăн ҫаплă çуревçĕсем пĕри—**Плано Карппини,** тĕпри—**Вилхелм Рупрук**, виççĕмĕшĕ—**Маркко Поло** пулнă. Плано Карппини 1245-мĕш çулта тутарсен Патту йатлă патши патне кайнă. Рупрукĕ те çав тутарсем патнех Аçи çĕрне 1253-мĕш çулта çитсе курнă. Вĕсем икĕш те кĕнекесем çырса хăварнă. Унта вĕсем тутарсем йепле пурăнни çинҫен лайăх çырнă, Рупрукĕ тата Аçи çĕрĕ, мĕн мал-йенелле кайнă çемĕн, çӳлĕ сăртлă пулни çинҫен ҫипер тăнлантарса хăварнă.

XIII-мĕш ĕмĕр вĕçĕнҫе Венетси хулинҫе иккĕн пĕр тăван Поло Маттипе Микули пурăннă. Пĕрре вĕсем сут-тума Константтиноппоҫ хулине кайнă. Вара унта темĕн ҫухлĕ хаклă йышши ҫулсем пуçтарнă та, тутарсем патне Ылттăн Туртува (ортана) кайнă, унта вĕсем çав ҫулсене хаклăраха сутса пулмĕ-ши тенĕ. Вара вĕсем кимпеле Хура тинĕс урлă ишсе каçнă та, Крым çĕрне тухнă, унтан тутар патши пурăнакан Атăл çинҫи Сарай хулине çитнĕ. Тутар патши Перкке вĕсене пит хапăл туса илнĕ, вĕсене куҫҫенеçсем панă.

Сарайран иккĕн пĕр тăван Пуххара çитнĕ, Пуххартан Монколине, кунтан Киттайа. Киттайра ун ҫухне патшара Ҫинкис хунăн ывăлĕ Куплай хун ларнă. Ку хун та вĕсене вашават пăхса йанă. Килне кайма вĕсене ылттăн хăма панă, унта патшан паллисем пулнă, çавăнпа вăл хăма тутар хушшинҫе çӳреме пит аван пулнă, мĕншĕн тесен, вăл хăмана курсан, тутарсем çав çынна хытă хисепленĕ. Çапла Маттипе Микула виçĕ çултан килне тĕрĕс тĕкел çитнĕ.

Килӗнђе хӑйсенӗн ӗҫӗсене майласа ҫитерсен, вӗсем каллех тутар хунӗ патне тухса кайнӑ. Римри паппӑ вӗсемпе пӗрле тутар патшине ҫыру йанӑ, тата Христос тӗнне вӗрентме икӗ манах йанӑ. Вӗсем хӑйсемпе пӗрле Микула ывӑлне 17 ҫулхи Марккӑна та илнӗ. Ерменийе ҫывхарнӑ ҫӗре икӗ манахӗ, йӑвӑртан хӑраса, кайалла таврӑннӑ. Лешсем ҫаплах малалла кайнӑ, Иранпа Памир урлӑ каҫса, Аҫи вӑтам ҫӗрне ҫитсе кӗнӗ, унтан Куплай хун патне Пеккин хули ҫывӑхне пынӑ. Вӗсем пыраҫҫӗ тенине илтсен, хун хӗпӗртесе, вӗсене хирӗҫ тухса илме, ҫынсем йанӑ. Ҫамрӑк Марккона Куплай хӑй умӗнђе тӑракансем хушшине кӳртнӗ.

Ҫак Маркко ђасах тутарсенӗн ђӗлхине те, йӑлисене те, ӥурне те вӗренсе ҫитнӗ, вара ӑна хун Киттайра кӗпӗрнеттӗре кӳртнӗ, шыври ҫар пуҫлӑхӗ тунӑ. Ҫапла Полосем Киттайра 17 ҫул пурӑннӑ, унтан килне таврӑнасси килнӗ вӗсенӗн. Анђах хун вӗсене йарасшӑн пулман. Йулашкинђен ҫапах та вӗсене ылттӑн хӑма панӑ, тата Франтсипе Испани короѕсемпе хӑйшӗн калаҫма тивӗҫ панӑ.



7-мӗш ӳкерђ. Маркко Купалай умӗнђе.

Полосем вара килне тинӗс тӑрӑх 13 караппа кайнӑ. Ҫак карапсем Перс хунӗ патне унӑн ҫураҫнӑ пӗр монкол кнеҫӗн хӗрне ҫитерсе памалла пулнӑ. 18 уйӑхран вӗсем Перҫи ҫӗрне ҫитсе, ҫураҫнӑ хӗре хун аллиӊе панӑ. Вӗсене хун каллех ылттӑн ҫул-хӑми панӑ та, вӗсем вара ђӑрмавсӑр пит лайӑх ҫӳренӗ. Траппес унтран тинӗс тӑрӑх Константтинопполе, унтан килне, Венетси хулине, ђипер таврӑннӑ.

Анђах 24 ҫул хушшинђе Полосене пур те маннӑ. Вӗсенӗн ҫуртне ҫынсем йышӑнса вырӑнаҫнӑ. Вӗсем ҫӗтӗк-ҫатӑк тумтирпе пулнӑ та, вӗсене парасшӑн пулман. Хулара ҫапах та паллакан ҫынсем пӗр-ик-виҫҫӗн тупӑннӑ та, вӗсем хӑйсенӗн кил-ҫуртне

кайалла туртса илнӗ. Вара Полосем пысӑк ӗҫкӗ-ҫикӗ тунӑ, пур тӑванӗсене, пур тус-йышӗсене пуҫтарса сӑйланӑ. Вӗсем пурин умӗнҭе хӑйсенӗн ҫӗтӗк-ҫатӑк тумтирӗсенӗн ӑшӗсене ҫура ҫура пӑрахнӑ та, темӗн ҭухлӗ хаклӑ йышши ҭулсем, мерҭенсем, ахахсем, тата урӑххисене те нумай кӑларса кӑтартнӑ. Вара тин пурте кусем ҭӑнах Маттипе Микула, тата Маркко Полосем иккенне пӗлнӗ.



8-мӗш ӳкерҭ. Маркко Поло.

Пӗр темиҫе ҫултан Венетсипе Кенуй хушшинҭе вӑрҫӑ тухнӑ. Маркко Поло ҫав вӑрҫӑра тыткӑна лекнӗ. Вара тӗрмере ларнӑ ҭух, вӑл хӑй курни илтни ҫинҭен тӗлӗнмелле хитре ҭӗлхепе пӗр кӗнеке ҫырса хӑварнӑ. Вӑл кӗнекене вулакансем Аҫи ҫӗрӗнҭе темӗн ҭухлӗ ырӑлӑхпа пуйанлӑх пуррине курнӑ. Ҫавӑнпа нумайӗшӗ унта, йепле те пулсан, ҫитсе курасшӑнах пулнӑ. Ҫавсем хушшинҭе ҭӑн ҭапли Колумп пулнӑ.

## 8. Колумп Америке тупни.

XV-мӗш ӗмӗрте тинӗспе Афрӗк тавра кайса, ӑна пӗлсе тухнӑ. Хӑшӗ хӑшӗ унтан темӗн ҭухлӗ паха йапаласем илсе тавӑрӑннӑ, ҫавӑн пеккисем пуйнисем те нумай пулнӑ. Ҫавӑнпа инҫетри пӗлмен ҫӗрсем ҫинҭен Йевропри халӑхсем хушшинҭе темӗн тӗрлӗ сӑмах та ҫӳренӗ. Унта кайса курасҭӗ те, пуйса килесҭӗ—текенсем те нумай пулнӑ. Пуринҭен ытла: Атлант оккеанӗ леш йенҭе Аҫи ҫӗрӗ пуҫланса кайаҭ, тенӗ. Христофор Колумп, унҭҭен те тинӗс тӑрӑх ҫӳрекеленӗскер, ҫак инҫетри ҫӗре Атлант оккеанӗ урлӑ кайасшӑн пулнӑ.

Вӑл сӳс-кантӑр арлаканӑн аҭи пулнӑ, ҫураласса Кенуй хулинҭе 1436-мӗш ҫулта ҫуралнӑ. Вӑл хӑйӗн тӑванӗсемпе пӗрле лайӑх шкулсенҭе вӗренсе тухнӑ, тинӗсре ҫӳреме те вӑл 14-ҫулхи аҭа пуҫҫӗнех вӗрене пуҫланӑ. Ара ҫитсен, Колумп тинӗс ҫулӗсене пурне те лайӑх пӗлсе ҫитнӗ те, вара пуйан Инти ҫӗрне, Атлант тинӗсӗ урлӑ кайсан та, ҫитме пулаҭ тесе, шухӑшла пуҫланӑ. Вӑл каланӑ: мал йенне хыҫал йенпе кайса тупас пулаҭ, тенӗ. Анҭах ку ӗҫе туса пӗтерме пысӑк укҫа кирлӗ пулнӑ, Колумпӑн укҫи пулман, вӑл наҭар ҫын пулнӑ. Ҫавӑнпа вӑл хӑй тӑван хулинҭен Кенуйран укҫа

ыйтнӑ, анҁах ӑна нимӗн те паман. Колумп вара, аптӑранипе тӑван ҫӗр-шыва пӑрахса, Порттукали королӗ патне пынӑ, унтан Инти ҫӗрне кайма укҫа ыйта пуҫланӑ. Унӑн сӑмахӗсене тӗрӗслесе тухма короҍ Колумпа мӗн пур планӗсене, карттисене кӑтартма хушнӑ. Ҫапла унӑн планӗсене йӑлтах пӗлсе ҫитсен, короҍ пӗр пӗҍӗк карапа вӑрттӑн Инти ҫӗрне Атлант оккеанӗ урлӑ кайма хушнӑ. Анҍах карапӗ ҫӳресен ҫӳресен, тӑватӑ кунтан, ҫил тӑвӑлтан хӑраса калле таврӑннӑ. Ҫапла Колумп короҍрен пӗр пус укҫа илеймесӗрех килне таврӑнмалла пулнӑ. Вӑл пит наҍара тухнӑ, тумланма та вӑй ҫитеймен, ҫавӑнпа ҫӗтӗк-ҫатӑк тумтирпе ҫеҫ ҫӳренӗ. Йулашкинҍен вӑл, Испани ҫӗрне кайса, унти короҍ патне слушпа кӗнӗ. Кунта Колумпӑн ӗҫӗ майлашнӑ: 1492-мӗш ҫулта ҫурла уйӑхӗн пуҫламӗшӗнҍе тин вӑл Атлант оккеанӗ урлӑ хӗвел анӑҫнелле тухса кайнӑ. Йупа уйӑхӗ пӗтнӗ тӗлте ҫав ҫулпах вӑл Пахам тинӗс утравӗсенҍен пӗрин патне пырса ҍарӑннӑ. Ӑна кунта ҫап ҫарамас ҫынсем хирӗҫ тухса илнӗ. Ҫӳресен ҫӳресен Купӑпа Ханттине тупнӑ та, Испани ҫӗрне таврӑннӑ, вара: Инти ҫӗрне тинӗспе каймалли ҫул тупӑнҍӗ, тенӗ. Колум вӑл хӑй тӗл пулнӑ тинӗс утравӗсене Инти ҫывӑхӗнҍе пулӗ тесе шухӑшланӑ. Куп ӑна Йаппони пулӗ тенӗ.




9-мӗш ӳкерҍ. Ҫӳревҫӗсене ҫап-ҫарамас ҫынсем хирӗҫ тухса илнӗ.

Кайран вӑл тата виҫӗ хут кайса ҫӳренӗ, ҫӗнӗрен нумай тинӗс утравӗсем тупнӑ, Америк ҫӗрне те тупнӑ, анҍах вӑл ку тупнӑ ҫӗнӗ ҫӗрсем Аҫи ҫывӑхӗнҍи Мал-йеппе кӑнтӑр хушшинҍи ҫӗрсем пулӗ тесе шухӑшланӑ. Вӑл виличчҍенех ҫапла шухӑшланӑ. Виҫҫӗмӗш хутӗнҍе ҫӳрени унӑн телейсӗр пулнӑ, мӗншӗн тесен, матруссем йӑвӑра тӳсеймесӗр ӑна хирӗҫ тӑнӑ. Колумп, вӗсене ҫӗнтерсе, пурне те хуптарнӑ та, сут тутарма короҍ патне хут йанӑ. Анҍах короҍ йанӑ улпут Попатил, матруссене сут тӑвас вырӑнне, Колумпа хӑйне сӑнҍӑрласа, тӗрмене хуптарнӑ, унтан ким ҫине лартса короҍ патне

Испанийе йанӑ. Колумп сӑнђӑртине курсан, корољ вӑтанса кайнӑ, ӑна ђасрах ирӗке кӑларса йама хушнӑ. Колумп вилсен, сӑнђӑра хӑйпе пӗрле хурса йама каласа хӑварнӑ. Вилессе Колумп ҫу уйӑхӗн 20-мӗш кунӗнђе 1506-мӗш ҫулта вилнӗ.

Вӑл тупнӑ ҫӗнӗ ҫӗрсене пурте **Инти** тенӗ, кайрантарах, ҫав ҫӗрсем Интипе пӗр маррине пӗлсен, ӑна **Вест Инти** теме пуҫланӑ



10-мӗш ӳкерђ. Колумпа сӑнђарласа кимӗ ҫине лартса йанӑ.

вӑл ђӑвашла Каҫалри Инти тени пулаҭ.

Колумпран кайран тӗрлӗ ҫынсем нумайђђен ҫавӑнта кайа-кайа ҫӳресен тин Йеврон ҫыннисем Колумп ҫӗнӗ ҫӗр тупнине пӗлнӗ. Вӑл ҫӗре **Амерӗк** тенӗ. Ку йата **Амерӗк — Веспуђђи** йатлӑ ҫӳревҫӗ йађӗпе хунӑ.

Ҫак ҫӳревҫӗ 1501-мӗш ҫулта Праҫили хӗррипе Атлант оккеанӗ тӑрӑх кӑнтӑрти ҫурҫӗрелле кайнӑ та, пӗр ђуллӑ сивӗ пушӑ ҫӗре пынӑ, ҫак ҫӗр **Ҫӗнӗ Кеорки** пулнӑ пулмалла. Унтан килне тавӑрӑнсан, Америк ҫав ҫӗнӗ ҫӗрсем ҫинђен ҫырусем ҫыра пуҫланӑ. Вӑл каланӑ: Колумп тупнӑ ҫӗнӗ ҫӗр, Колумп шухӑшланӑ пек, Аҫи ҫӗрӗн Мал Йенӗ мар, хӑйне уйрӑм ҫӗнӗ ҫӗр, ҫавӑнпа ӑна **„Ҫӗнӗ Тӗнђе“** тесе йат хурас, тенӗ. Анђах унӑн ҫырӑвӗсене пиђетлесе кӑларакан пӗр хуҫа: вӑл ҫӗнӗ ҫӗре Америк йађӗне **Америк** тесе калас пулаť, тенӗ.

Ђӑнах та ҫавӑнтанпа Америк йађӗ сарӑлса ҫирӗпленсе ҫитнӗ.

## 9. Васко-те-Кама Афрӗк тавра кайни.

Колумп Америк ҫӗрне тупсан кайран Порттукал королӗ ӑна хӑй патне слушпа ђӗннӗ, анђах лешӗ пыман, Испани королӗ патӗнђех йулнӑ. Ҫавӑнпа порттукалсем испанисене курайми пулнӑ. Вӗсем 100 ҫул ытла Инти ҫӗрне каймалли тинӗс ҫулӗ шыранӑ, ҫав ҫула шыраса, вӗсем Афрӗк тавра темиҫе хут та ишсе тухасшӑн пулнӑ, йулашкинђен тин вӗсем унӑн ђӑн кӑнтӑрти вӗҫне ҫитнӗ те, ӑна малтан Тӑвӑл Сӑмси тенӗ, кайран Ырӑ Ӗмӗт сӑмси тесе йат хунӑ. Ҫапла вӗсем Афрӗк тавра кайса Инти ҫӗрне ҫитес ӗмӗтне пӗлтернӗ.

Ҫав хушӑрах, кӗтмен ҫӗртен, Колумп Испани карапӗсем каҫалалла кайса темӗскерле ҫӗнӗ ҫӗрсем тупнӑ, ку ҫӗрсем патӗнђен Инти ҫӗрне ҫитме те ытла инҫех мар пулмалла тенӗ. Ҫак тери пысӑк ӗҫе курсан, порттукалсем хӑра пуҫланӑ, вӗсем пур ҫӗнӗ ҫӗрсем Испани аллине ленкӗҫ, тенӗ. Ҫавӑнпа та вӗсем, темле те пулсан Афрӗк тавра кайса, Инти ҫӗрне ҫитсе курасшӑнах пулнӑ. Ҫапла 1497-мӗш ҫулта ҫав ӗҫе тума 4 карапа йанӑ.

Ҫак карапсем пӗђӗк те, ҫирӗп пулнӑ, вӗсенӗн парусӗсемпе канађӗсем виҫҫӗ улӑштармалӑх пулнӑ. Карапсенӗн тӗпне, трӳме, пиђӗки пиђӗкипе шыв, ерех, ҫу, тата йешђӗкӗ йешђӗкӗпе ҫӑнӑхпа тӗрлӗ апат-ҫимӗҫсем тултарнӑ. Карапӗсемпе кайма ђӑн хастар матруссем ђӑн ӑста карап ҫӳретекенсем тытнӑ, карапсенӗн пуҫлӑхӗ Васко-те-Кама пулнӑ, вӑл та тинӗс ҫинђе нумай ҫӳресе курнӑ харсӑр ҫын пулнӑ.

Карапсем ҫинђе пурӗ 150 ҫын пулнӑ, тата 10 ҫын пуҫ йанӑскерсем пулнӑ, вӗсене тӗрлӗ сехреллӗ ӗҫсене тутарма илнӗ. Карапсем ҫинђе тата тупӑсем те пулнӑ.

4 уйӑх ҫуртан порттукалсем Ырӑ Ӗмӗт сӑмси патне ҫитнӗ те, унӑн тавра ҫавӑрӑнса иртсе кайнӑ. Ку таранђђен вӗсем ним хуйхӑ та курман, вӗсенӗн пур те ӑнса пынӑ. Ђӳк уйӑхӗ вӗҫӗнђе вӗсем пӗрре, ҫӑл шывӗ ӑсма тесе, Афрӗк ҫыранӗ ҫине тухнӑ. Анђах вӗсене хирӗҫ, пӗркеленђӗклӗ, таса мар, сар ӳтлӗ, тискер етемсем, коттенттотсем, сиксе тухнӑта та, ђулсемпе вӑрӑнтара пуҫланӑ,

нийепле те çăлкуçĕ патне йарасшăн пулман. Кусем вĕсемпе вăрçас шухăшламан: карапĕсем çинђен пăхăртан тунă тĕрлĕ хитре ним мар йапаласем илсе пынă та, лешсене салата пуçланă. Лешĕсем хĕпĕртенипе нимĕн тума пĕлмен, шывне те панă, тата вăкăрĕсене хăвала хăвала пырса, çав пăхăр йапаласемпе улăштара пуçланă. Йукоттенттотсем пилĕк шăхлиђĕ каласа ташша йара панă. Вĕсене кура, Васко-те-Кама та трупасем калаттарма хушнă, вара порттукалсем те ташша йанă. Васко-те-Ками те ташланă.



11-мĕш ўкерђ. Васко-те-Кама.

Çыран хĕррипе кайсан кайсан, порттукалсем кимне çурçĕрелле çавăрнă. Кунта ишме питĕ хĕн пулнă, мĕншĕн тесен, тинĕс хирĕçле йухнипе карапсене кайалла таптарнă. Çапах та 3 уйăхран порттукалсем Мосампике çитнĕ. Васко-те-Кама тăлмађисем урлă кунти арап сутуçисем Интипеле суту-илў туса тăнине пĕлнĕ; çав сутуçăсем Интирен пир-авăрсем, тутлăсем, ĕнђĕсем, рупинсем иле-иле килнĕ. Çакна илтсен, порттукалсем пит хĕпĕртенĕ. Вĕсенђен пĕри хăйĕн кунсерен мĕн мĕн пулни çинђен çырнă кĕнекинђе ак çапла калаť: Инти инçе мар тенине илтсен, хамăр хавас тунă çĕре çитме турă вăй патăр тесе, епĕр хытă ише пуçларăмăр, тет.

Мосампик королĕ порттукалсене турккăсем тесе пит вашават пăхнă, вăл хăй те вĕсенĕн карапĕсем çине кайа кайа хăна пулнă, унта парнесем пара пара йанă. Анђах арап сутуçисем ăна вăл порттукалсем туркăсем мар, вĕсенĕн ђăн киревсĕр тăшманĕсем тесе каласа кăтартсан, вăл вара вĕсене çăл шывĕ те парасшăн пулман. Аптăранипе порттукалсем тупăсенђен персе хăратсан тин, пиђĕкисене шыв тултарма ирĕк илнĕ.

Тепĕр уйăхран вĕсем Мементе çитнĕ. Кунти корођ те вĕсене хапăл туса илнĕ. Корођ ывăлĕ порттукалсем патне карап çине мусыккансем илсе пынă, Васко-те-Ками тупăсенђен пертернĕ. Афрĕк çыннисен, халиђен тар сассине илтменскерсен, сехри хăпнă. Вара порттукалсем Мемент королĕпе суту-илў хуђĕ тунă, кусем

Йăванкĕлпе, лешĕ Коранпа приђак тунă. Порттукалсене Инти ҫĕрне ҫитерме, корођ пĕр ҫул пĕлекен ҫынна йанă.

Ку таранђђен вĕсем йаланах ҫыран хĕррипе ишсе пынă, халĕ питĕ пысăк тинĕс варрипе каймалла пулнă. Вĕсем ҫу уйăхĕнђе тапранса тухса кайнă. Вăл вăхăтра хыҫал йенпе кăнтăр хушшинђен вĕрекен ҫуллахи ҫилсем Инти йенелле вĕрсе тăнă. Ҫапла вара порттукалсем 24 кун хушшинђе 4000 ҫухрăм ытла тунă та, Инти ҫĕрне Каликут хулине пырса ђаранна.

Ҫапла Порттукали ҫĕрĕнђен тухнăранпа вĕсенĕн мĕн пурĕ 10 уйăх иртнĕ.

Карапсем ҫыран хĕррине ђарăнсанах, вĕсем патне кимсемпе интуссем пырса, ҫыран хĕрне ђĕне пуҫланă. Анђах Васко те-Кама сыхђуллă ҫын пулнă. Вăл малтан халăх мĕн ĕҫлине, тата хулара мĕн пурри-ҫуккине пĕлмешкĕн пуҫ йанă ҫынсенђен пĕрне йанă. Лешне интуссем курсанах, тĕпђесе ыйта пуҫланă, анђах ку нимĕн ăнланайманнине курсан, ăна пĕр испан ђĕлхине пĕлекен мавр патне илсе кайнă. Лешĕ вара кăна хăйсем йепле ҫӳренине йăлтах каласа кăтартнă. Маври пурне те илтсе пĕтерсен, карап ҫине кайнă. Вăл, карап ҫине кĕрсенех, ак ҫапла салам каланă: сире ырă сунатăп, сире ырă сунатăп, рупин те, исумрут та нумай, тенĕ.

Ҫакăитан кайран Кама Каликут ратши (патши) патне Порттукали корођ йаđĕпе кайнă. Ратша тĕрлĕ тĕртĕмсемпе, палассемпе илемлентерсе пĕтернĕ пӳлĕмре ăна питĕ ђаплă хăналанă. Ратши ҫинђе калама ҫук хаклă капăр тумтир пулнă, тумтирне тем пысăккăш ĕнђĕсемпе ахахсем тытса илемлетсе пĕтернĕ. Ун таврашĕнђе ытла та ырă шăршă кĕрекен йапаласем пулнă.

Каликут хули ун ђухне пит пысăк хула пулнă, Каликут ратши те пуйан патша пулнă. Камăна вăл вашават пăхнă. Лешĕ ăна: пирĕн Порттукали королĕ санпа пĕрле суту-илӳ хуђĕ тăвасшăн, тесен, вăл: Порттукали королне хам тăванăм, хам тусăм вырăнне хума епĕ хавас, тенĕ. Ратша проттукалсене хăйсенĕн таварĕсене сутма та ирĕк панă. Анђах вĕсем сут тунине курсан, арап сутуҫисем хăйсенĕн суту-илӳ ĕҫне инкек пулĕ тесе хăранă та, ратша патне кайса, ку йутран килнĕ ҫынсем санăн хулуна туртса илсе ҫаратасшăн тесе елекленĕ. Лешĕ вара хăранипе порттукалсенђен тавар укҫи пысăк сум ыйта пуҫланă; унтан таварĕсене те, сут тăвакан порттукалсене те тытса тĕрмене хуптарнă. Камă ҫапах та хăйĕн ҫыннисене аран-аран ирĕке кăларнă та, ђасрах Каликутран пăрахса кайнă. Кайнă ђухне ратша ҫапах та унпа пĕрле корођ патне ҫыру йанă: есĕ йанă ҫын Васко те-Камă манăн ҫĕре килђĕ, вăл килнĕшĕн манăн кăмăл пит хаваслан‌ђĕ. Пирĕн ҫĕрте коритсăпа, квоҫтик, тата

пăрăç пур, унтан хаклă йышши ђулсем нумай. Сирĕн çĕрĕнтен ылттăнпа кĕмĕл, тата коралпа хĕрлĕ сăр илес килет манăн, тенĕ. Çыруне паљмă хуђĕ çине çырнă.

Каликутран тухса кайсанах, Камăна тинĕс вăрă-хурахĕсем тапăннă, вăл вĕсене тупăсемпе пере-пере пĕтернĕ. Вăл ђасрах килнелле кайасшăн пулнă, анђах ăна интуссем апат-çимĕç сутасшăн пулман, çавăнпа ăна унăн вăрçса туртса илмелле пулнă, тата карапĕсене тӳрлетес вăхăт çитнĕ. Çитменнине тата карапĕсене тӳрлетсе пĕтернĕ çĕре кĕркунне пуçланса кайнă та, лап çула май çил çук вăхăт çитнĕ.

Çак тери кансĕр вăхăтра Камăн ирĕксĕрех çула тапранса тухса каймалла пулнă. Карапĕсем аран-аран пынă. Апат çитмен пирки матруссем хушшинђе ђынка ђирĕ пуçланса кайнă, нумайĕшĕ виле пуçланă. Афрĕк çĕрĕ курăнман. Порттукалсем: пĕтрĕмĕр пулĕ, тесе хуйха ӳкнĕ. Йулашкинђен тин çур-çĕрпе хыçалйен хушшинђен муссон çилĕ вĕре пуçлăнă. Интирен тухни виç уйăх çитсен, тин вĕсем Мемент хулине тавăрăннă. Кунта корољ вĕсене ĕлĕкхи пекех хапăл туса илнĕ, апат-çимĕç панă, ђынкапа ђирлекенсене сиплеме аппелçинсем панă.

Ђирлисем пăртак самайлана пуçласан, Васко те-Камă килне кайма тухнă. Килне вăл 1499-мĕш çулта çурла уйăхĕнђе тин çитнĕ.

Унпа кайнă 158 çынтан 55-шĕ çеç тавăрăннă, ыттисем 103-шĕ çул çинђе вилсе пĕтнĕ.

## 10. Фертинант Макеллан.

Амерĕк çĕрне тупсан, нумайах та иртмен, пĕр Макеллан йатлă çӳревçĕ çĕр тавра çӳресе тухас шухăш тытнă. Вăл хăй Порттукал çынни пулнă, анђах ăна хăйсен королĕ йуратман. Çавăнпа вăл Испани королĕ патне кайса слушпа кĕнĕ. Ку кăна кайма карапсем панă. Анђах те ытла шанман пирки темĕскер, вăл Макелланпа пĕрле пĕр Хуан-те-Карттакен йатлă аслă улпута йанă, ăна пĕр кимĕн пуçлăхĕ (кăмантирĕ) тунă. Çак Хуан Макеллана пит курайманскер пулнă. Кунсăр пуçне Макелланăн тата тепĕр курайман тăшман пулнă, вăл—Естевам Кометс. Çакăскер хăй пĕтĕм флотăн пуçлăхĕ пуласшăн пулнă, анђах Макелланран ытла пултарайман. Çапла ĕнтĕ Макеллан тавраш ĕнђе ăна йуратакан шанђаклă йулташсем сахал пулнă, курайманнисем, вăрттăн çыртма хатĕр тăнисем ытлашшипех пулнă.

Макеллан карапĕсем 1520-мĕш çулта авăн уйăхĕн (çентапĕрĕн) 20-мĕш кунĕнђе парăссене карнă та, тинĕселле тухса кайнă. Унђен те пулман Хуан флотăн пуçлăхĕ пуласшăн тăрăша пуçланă

Макеллана нимĕн ыраннe те хурасшăн пулман. Мĕн шаларах кайнă çемĕн, вăл тата ытларах иртĕне пуçланă. Пĕрре вăл Макелланпа хирĕçсе кайнă та, ăна пуçлăх пек хыттăн каласа хăрата пуçланă. Капла ĕç май килмессине Макеллан çавăнта ăнласа илнĕ, вара Хуана кăккăртан мĕн пур вăйĕпе йарса тытнă та, каланă: сана, кăпитан, арĕс тăватăп! тенĕ. Хуана тытнă та, тимĕрлесе, ахаҫ матрус пекех, хупса лартнă. Çакна курсан, пур те Макелланран хăра пуçланă, вăл мĕн калапине итлесе туса пынă.

Макеллан Атлант оккеанĕ урлă каçсан, Праçили хĕррине пырса перĕннĕ. Мăн Кăрлаҫ уйăхĕнҫе 1520-мĕш çулта Рио-те-Шанейро йатлă тинĕс куккăррине кĕнĕ. Вăл Амерĕк çĕрĕ хĕррипе кăнтăралла кайнă. Вăл: кăнтăрта пĕр-пĕр тинĕс хушши пулмаллах, тесе шухăшланă. Хĕл çывăхарса килнĕ. Макеллан пĕр тинĕс куккăрне кĕрсе хĕл каçас тесе шухăшланă. Анҫах унăн матрусĕсем пăлхана пуçланă: çавăнти сивĕ, пушă, киҫем çанталăк вĕсене хăратса пăрахнă. Çитменнине вĕсене Макеллана хирĕç хăйсенĕн пуçлăхĕсемех хĕтĕртнĕ. Вара матруссем Макеллана: аҭа, киле, Испанийе, тавăрăнас! тенĕ. Анҫах вăл пĕр хăрамасăр, пĕр иккĕленмесĕр тăнă. Матруссем хăратсан та, нимĕн тăвайман. Макеллан каланă: киле намăс курма тавăрăнаҫҫен, епĕ вилме хатĕр, тенĕ. Унăн хастарлăхĕ, унăн ҫун хавалĕ çав тери шиксĕррине курсан, матруссем пур те ирĕксĕрех ăна пăхăнса хисепле пуçланă. Пĕр вăхăтлăха пăтранасси те ҫарăннă.

Анҫах кĕл айĕнҫи сӳнмен кăвар çуннă пек, Макеллана курайманнисен кăмăлĕ çавăн пек вăрттăн çунса тăнă. Тăрсан-тăрсан ҫăнах та вут хыпса тухнă: икĕ карап Макеллана итлеми пулса хирĕç тăнă. Çакна курсан, вăл иккĕленсе тăман. Хăйĕн пĕр шанҫăклă çыннине пĕр пăхăнман офитсер патне пăхăнма прикас парса йанă. Лешĕ хутне вуласа пăхсан, Макелланран мăшкăласа кула пуçланă. Макеллан çынни вара ун патне сиксе ӳкнĕ те, киншалпа ҫиксе пăрахнă. Унтан тепĕр пăхăнман офитсере Макеллан пуçне касса тăтнă. Çакăн пек хăрушă ĕçсене ирĕксĕрех туса пĕтерсен, каллех тинĕселле тухса кайнă.

Анҫах çынсемпе вăрçса пĕтерсен, унăн тинĕспе кĕрешмелле пулнă. Унăн флоҫĕ çине калама çук хăрушă тăвăл пырса çапăннă та, унăн карапĕсене ҫутах çапса салатса пăрахман. Темĕн ҫухлĕ сехре, темĕн ҫухлĕ хурлăх курсан та, Макеллан çапах та, кайсан кайсан, Амерĕкĕн ҫăн кăнтăрти вĕçĕ патĕнҫе тинĕс хушшине тупнă. Вара çав хушăпа вăл 1520-мĕш çулта ҫӳк уйăхĕн 27-мĕш кунĕнҫе карапĕсемпе ҫип-ҫиперех ишсе тухса кайнă. Ăна халĕ унăн йаҫĕпе Макеллан хушши теççĕ.

Çапла Макеллан калама çук шутсăр аслă оккеан çине тухнă. Унăн шывĕ пит лăпкă, выљанмасăр сарăлса выртнă. Çавăнпа çак оккеана Макеллан Лăпкă оккеан тесе йат панă. Çак оккеан варринђе вăл Мариан утравĕсене тупнă та, карапсене тӳрлетес тесе, утравĕ хĕррине тухнă. Унти корољ ăна пит вашават пăхнă. Çавăнпа ăна Макеллан унти корољсен королĕ туса хунă. Лешĕсем ăна килĕштереймен, таçтан килсе кĕнĕ çын апла хăтланнине нийепле те йышăнасшăн пулман. Вĕсенђен пĕри Макеллана хирĕç 6,000 çарпа пынă.

Макеллан вĕсене вĕрентесшĕн пулнă,— манăн вĕсене вĕрентмелĕх тивĕç пур, тесе шухăшланă вăл. Ђăнах та вара пăртак салтаксем илнĕ те, хай короле хирĕç кайнă. Çак королĕн пĕђĕк хулине пырса кĕнĕ. Унта пĕр çын та пулман, пушах пулнă.

Макеллан ăна тĕртсе йама хушнă. Анђах çав хушăра таçтан интейсем сиксе тухнă, вĕсем испансене, ухăсемпе, ђулсемпе перепере, вĕлере пуçланă. Малтан испансем пур те çирĕп тăнă, унтан, лешсем нумайланнă çемĕн нумайланнине курсан, хăранипе тара пуçланă хăйсенĕн кимĕсем патнелле. Макеллан пĕр хăрамасăр пынă. Тинĕс хĕррине çитсен, самай кимĕ çине ларас тенĕ ђух, ăна пĕр



12-мĕш ӳкерђ. Макеллана ђиксе пăрахнă.

ђул урине пырса тивнĕ те, вăл кайса ӳкнĕ. Вара хыçалтан хăваласа пыракан пĕр интей ăна сăнăпа ђиксе пăрахнă. Çак ĕç 1521-мĕш султа, ака уйăхĕн 27-мĕш кунĕнђе пулнă.

Çапла Макеллан пĕтнĕ, анђах унăн ĕçĕ çухалман: çынсем çĕр тавра çӳреме пулнине пĕлнĕ. Ђăнах та Макеллан çынĕсем, вăл вилсен, хăраса ђасрах килнелле тара пуçланă. Çул çинђе вĕсем пит нумай хурлăх курса пĕтнĕ. Макелланпа пĕрле кайнă 234 çынтан 13 çын анђах йулнă. Вĕсем те пĕтĕмпех суранланса [сусăрăлса], йухăнса пĕтнĕ, анђах çапах та киле çитнĕ: вĕсем кайасса каçалла тухса кайнă та, тавăрăнасса мал-йенђен тавăрăннă. Вĕсенĕн пуçлăхне, Тел-Канона, тамка (пиђет мĕлки) панă: ун çине кăлай пек ђăмăр

Çĕр ҫăмăрне тунă, çийелтен: „Primus circumdedistime" тесе çырнă, вăл ҫăвашла: «ҫăн малтан есĕ ман тавра çӳресе çавăрăнтăн» тени пулаҭ.

Макеллан Çĕр тавра кайни пит паха, пит ҫаплă ĕç пулнă, мĕншĕн тесен, çавăнтан кайран пур те Çĕр ҫăн-ҫăнах темĕн пысăкăш ҫăмăр кăлай (шар) иккенне куçпа курнă пекех ăнласа илнĕ.

## 11. Çемен Тешҫов.

XVI-мĕш ĕмĕрте çĕр ҫăмăрĕ çинҫи пысăк çĕрсене, маттериксене, пурне те тупнă теме пулаҭ. Çавăнпа XVII-мĕш ĕмĕрте çӳревçĕсем çав тупнă çĕнĕ çĕрсене кайса лайăхрах пĕлме çĕç тăрăшнă. Вырăссем çак вăхăтра Çĕпĕр çĕрне сăнаса пĕлме пикеннĕ.

Çав Çĕпĕр çĕрне касаксене XVI-мĕш ĕмĕрте, Миллер каланă тăрăх, пĕр ҫăваш йертсе кайнă. Вăл çĕр çинҫен унҫен Йевропри халăх нимĕн те пĕлмен. Малтан çав касаксем Урал тăвĕ урлă каçса, каçал йенҫи Çĕпĕр çĕрне çĕнтерсе туртса илнĕ, унтан, пĕҫĕккĕн-пĕҫĕккĕн малалла кайса, Лăпкă (Аслă) оккеан хĕррине çитсе тухнă. 1648-мĕш çулта Çемен Тешҫов йатлă касак Пăрлă тинĕспе кайса, Аçи çĕрĕн ҫи малти сăмсине тупнă, вара ун тавра кайса, килне тавăраннă.

Çав Çемен Тешҫов вăл Сивĕри Твина шывĕ çинҫе ларакан Аслă Уçтук йатлă хулара çуралнă. Пĕҫĕк ҫухнех вăл Çĕпĕре кайнă та, касак пулнă. Малтан вăл Ирттыш шывĕ çинҫе ларакан Тополҫски хулинҫе пурăннă, унтан тата малалла Ленă шывĕ çине кайнă, унҫен анҫах унта касаксем Йаккут Острокĕпе Йаккут хули тунă. Çак хуларан малалли çĕрсем, мал йенҫисем те, çурçĕр йенҫисем те, никам пĕлми çĕрсем пулнă, унта никама пăхăнман халăхсем ирĕккĕн пурăннă.

1641-мĕш çулта Йаккут хулинҫен 15 касак тухнă та, çурçĕрелле тункуссемпе вăрçма кайнă. Касаксенĕн пуçлăхĕ Миххайлăв пулнă, ахалҫ касаксем хушшинҫе пĕри Тешҫов пулнă. Тури Йан тăвĕ урлă каçса кайсан (ăна вырăсла Верхоянский хребет теççĕ), касаксем Йан шывĕ патне аннă та, унти тункус халăхĕсене вырăс аллине пăхăнтара пуçланă. Вăл тункуссем пăлансем пăхса ĕрҫетсе пурăннă, вĕсене çитерсе вырăнтан вырăна куçса çӳренĕ. Вĕсем, касаксем, нумай та пулман куланай пуçтарнă: 320 хăнтăр, тата 2 хура хăмăр тилĕ тирĕ. Çав хысна хăнтăрĕсене леçме Миххайлăв Тешҫова виçĕ касакпа пĕрле йанă. Çул çинҫе çавсене тункуссем 40 çын ухăсемпе тапăннă. Вĕсем касаксене тимĕр вĕçлĕ ухă йĕпписемпе пере пуçланă, касаксем вутҫуллĕ пăшалсемпе пенĕ. Хысна хăнтăрне Тешҫов çапах та ҫипер çитерсе, Йаккутри çар-пуçлăхне панă.

Тепӗр ҫулне Тешҕова каллех ҫурҫӗр йенне йанӑ. Вӗсене унта каллех тункуссем, пӗр 500-ӗн пулӗ, тапӑннӑ. Касаксем мӗн пурӗ те 15-ӗн анҕах пулнӑ. Йаккутсем вӗсем майлӑ пулман пусан, вӗсем пуҫӗсене ҫинӗ пулӗҕҕӗҫ. Йаккутсем пулӑшнипе ҫеҫ вӗсем тункуссене ҫӗнтернӗ, анҕах лашасӑр ҫуран тӑрса йулнӑ. Касаксем вара пӗр Интикир йатлӑ шыв ҫинҕе пысӑк кимӗ тунӑ та, пӑлан тирӗнҕен парӑс карнӑ, ытти хатӗрӗсене ҕӗнрен тунӑ, йакӑр вырӑнне пысӑк ҕул катӑкӗ илнӗ, ӑна ҕӗнрен йавнӑ канатпа ҫыхса хунӑ. Ҫав кимӗпе вара вӗсем шыв тӑрӑх **ҫӗнӗ ҫӗр шырама** кайнӑ. Кайсан-кайсан, вӗсем **Сивӗ тинӗсе** пырса кӗнӗ, вӑл пӗтӗмпех пӑрлӑ пулнӑ. Ҫил пӑрсене ҫыран хӗрринҕен шалалла хӑваласа йарсан, касаксем киммипе мал-йенелле кайнӑ та, Колым варрине ҫитнӗ.



13-мӗш ӳкерҕ. Тешҕов Сивӗ тинӗсре пырать.

Унта кӗрсен, вӗсем хӑйсен Йаккут хулинҕен пынӑ касаксене тӗл пулнӑ, вӗсенӗн пуҫлӑхӗ ӗлӗкхи йулташӗ Миххайлӑв пулнӑ. Вӗсем вара унта пӗр пӗҕӗк кар туса хунӑ та, ӑна **Анатри Колым** тенӗ.

Сивӗ Пӑрлӑ тинӗс хӗрринҕе вӗсем пулӑ шӑлӗсене шыра пуҫланӑ, пулӑ шӑлӗ тесе вӗсем мамӑнт шӑлӗсене каланӑ. Мускавра ҫав шӑлсем слон шӑмми пек пит хаклӑ пулнӑ. Вӗсене пуҫтара-пуҫтара, касаксем Йаккут хулине йанӑ, унтан Мускава тӑратнӑ.

Колымра пуранна ђухне, Тешђов йунашар пуранакан ђукђасенђен илтнӗ: ҫав шӑлсем Анатар вӑрринђе ӑшӑх вырӑнсенђе нумай пулнӑ, тет. Вара 1648-мӗш ҫулта вӑл пӗр усламҫӑпа пӗрле пысӑк партти тунӑ та, 6 кимӗпе Колымран Сивӗ тинӗсс ҫине тухса кайнӑ.

Тинӗсре пӗр пӑр та пулман. Каҫал йенђен кӑнтӑртарахран вӗсене ҫул майӗн ҫил вӗрнӗ. Касаксем хӗпӗртесе кайнӑ, тиртен тунӑ парӑсӗсене карнӑ та, савӑнӑҫлӑ йурӑсем йурласа, кайнӑ мал йенелле ҫӗнӗ ҫӗр шырама. Вӗсем ҫав хушӑрах, Анатар патне ҫитсе, киммисем тулли пулӑ шӑлӗсем тултарасшӑн пулнӑ. Вӗсем шухӑшланӑ; ку ытла инҫех пулмӗ-ха, тенӗ. Анђах вӑл апла пулман. Вӗсем вӑрмансӑр ҫап-ҫара пушӑ ђуллӑ ҫыран хӗррипе 2 уйӑх ытла ишсе пынӑ, Анатарӗ курӑнман та. Ҫил ђас ђасах унталла та, кунталла та вӗрнӗ, парӑссене темиҫе те пуҫтарса хумалла пулнӑ, кӗсменсене алла тытса, тӗтре витӗр, пӑрсем хушшипе ишсе пымалла пулнӑ. 3 кимӗ тӑрса йулнӑ, 3 кимми анђах **Пысӑк Ђул сӑмси** патне ҫитнӗ, ҫак сӑмса Аҫи ҫӗрин ђи мал йенђи вӗҫӗ пулнӑ. Вӑл тинӗселле шала тухса тӑрать, ӑна халӗ **Тешђов Сӑмси** теҫҫӗ. Ҫак сӑмса патӗнђе касаксем ђараннӑ та, ђукђӑсем пуранакан ҫӗре пынӑ, вӗсен унта кит шӑммисенђен купаласа тунӑ крепӗҫ пекки пулнӑ.

Пысӑк ђул патӗнђен касаксем кӑнтӑралла ишсе кайнӑ та, Аҫипе Амерӗке уйӑрса тӑракан хушша пырса кӗнӗ. Унта ҫил-тӑвӑл тапранса кайнӑ. Пысӑк хумсем, касаксен киммисене ҫӑтса йарас пек, мӗкӗрсе ҫеҫ тӑнӑ. Вӗсем парӑссене пуҫтарса хунӑ та, хӑйсене хӑйсем хум ирӗкне панӑ. Вӗсем кимме кӗрекен шыва анђах пӗр май алтӑрсемпе тӑкса пынӑ. Ҫапла 2 ерне вӗсенӗн киммисем тинӗс тӑрӑх ҫапкаланса ҫӳренӗ; ҫӳресен-ҫӳресен, пурте пӗр пӗрин куҫӗнђен ҫухалнӑ.

Йулашкинђен ђӳк уйӑхӗнђе шыв хумӗсем Тешђова йулташӗсемпе пӗрле ҫыран ҫине, Анатартан мала, кӑларса пӑрахнӑ. Тешђов вара 24 йулташӗпе пӗрле Анатар ҫине ҫуран кайнӑ. Вун ерне лӑпах выҫӑллӑ-тутӑллӑ, ҫумӑр виттӗр, йур виттӗр, ҫарамас, ҫара уран ҫӳренӗ. Мӗн ҫисе пуранна вӗсем, пӗлмеҫҫӗ: тунтӑрта пурӑнакан хир-ђӑххисене тыткаласа ҫинӗ пулӗ, теҫҫӗ.

Тешђов калать: Анатар ҫине ҫитсен, епӗр, мӗскӗнсем, уйӑрӑлса, саланса пӗтрӗмӗр, тет. 12 ҫын ҫиме шырама: етеме тӗл пулӑпӑр-и? тесе, Анатар тӑрӑх тӑвалла кайнӑ, анђах вӗсенђен виҫҫӗшӗ анђах тӑрса йулнӑ, ыттисем пӗтнӗ. Тешђов ҫапах та аран-аран хӗл каҫкаланӑ. Вара тепӗр ҫулне пур пек вӑйне пуҫтарса, вӑл унта пурӑнакан ђукђӑсене, корексене ҫӗнтерсе хӑйне пӑхӑнтарнӑ. Вӑл унта Анатар карӗ тунӑ. Малта каланӑ усламҫӑ ҫинђен Тешђов кайран илтнӗ: ӑна тинӗс хумӗсем унран та леререх кӑларса ывӑтнӑ тет те, вӑл ҫавӑнта Камђат таврашӗнђе вилнӗ пулмалла.

Тешҧов Анатар ҫинҧе тата темиҫе ҫул пуранна, унта вал Анатар варри сывахёнҧе мамант (пин) шаммисем нумай тупна. Ҫакна анҧах вал паха йапала тесе шутлана, ыттишён пулсан вал нимён шухашлама та пёлмен. Кайран Мускава пула шалёпе хантар хыснине илсе пырсан, вал ак ҫапла хут ҫырса пана: инҫетре ҫўресе ирттерне вахатра илмен шалу укҫине парар мана, тене. Шалуне ана пана, 19 ҫулшан пурё 126 тенке. Унсар пуҫне ана тата утаман туна. Ҫав ёҫпе тухна приккас ҫинҧе ак ҫапла каласа ҫырна: Ҫав Ҫумккана слушпашан, тата пула шалёсем тупнашан, шамашан, аманнашан — утамана кўртес пулат, шалуне те ана ытти йулташёсенҧен, утамансенҧен, ытларах парас пулат, ҫулталака — 9 тенке, тене.

Анҧах ҫав Тешҧов ёҫне нумайҧҧен никам та пёлмен, ҫаванпа Аҫи ҫёрёпе Америк ҫёрё ҫыпҫанса танипе таманнине те никам та пёлмен. Ҫавна пёлме 1-мёш Петёр патша Раҫҫей флотёнҧе слушпара пуранакан пёр Перинк йатла каппитгана йана. Перинк вара кашт хатёрленне те, Питёртен мал-йенелле типё ҫулпа тўрех кайна. Темиҫе ҫул ҫўресен ҫўресен, вал Камҧат ҫёрне ҫитне те, унта карап туна. Вара ҫав караппа ишсе ҫўресе, вал Америк ҫёрёпе Аҫи ҫёрё ҫыпҫанмасар уйрам танине те пёлне, тата вёсен хушшинҧе йухса выртакан тинёс хушакне те, тинёсне те; лайах пёлне. Кайран вара хушакне те, тинёсне те унан йаҧёпе **Перинк хушшипе Перинк тинёсё** тене.

## 12. Тшон Франклҧан.

Америке тупсан, нумайах та иртмен, 16-мёш ёмёртен пуҫласа, акалҧансем, ҫав ҫёнё ҫёрён ҫурҫёр йенёпе кайса, Лапка Оккеана тухасшан пулна. Анҧах ҫак ёҫ ҫамалах пулман, ҫаванпа ытлах антман. 1610-мёш ҫулта тин пёр Кутсон йатла тинёс ҫўревҫи пёр тинёс куккарне тупна та, ку хай Атлант оккеанёнҧен Лапка Оккеана каймалли ҫул пулат пулмалла тесе шухашлана. Вал куккара халё Кутсон кукри теҫҫё. Вал унта хёл каҫас та, ҫуркунне, ашатсан, малалла кайса пахас тене. Анҧах матруссем вал хыта тытнине йуратмасар палхана пуҫлана, йулашкинҧен вёсем Кутсона аҧипе пёрле тата 8 ҧирленё матроса тытна та, пёр пёҧёк кимё ҫине лартса хаварна, вёсем ваҧҧи апат-ҫимёҫ партак та хаварман. Ҫакан ҫинҧен самах саралсан, Кутсона шырама пёр Пафин йатла ҫынна йана. Вал ширана-шырана та, Кутсона тупайман. Вара ҫул тупса Америк леш йенне Атлант оккеане кайса тухасшан пулна, анҧах вал та ним таvайман, пур ҫёрте те ҫула пысак парсем пўлсе (карт-ласа) пына.

Çакăн пек ăнман ĕçсене курса, акăлђансем пĕр 200 çул хушши ку тĕлĕшпе нимĕн те туман. Йулашкинђен 1845-мĕш çулта тин çур çĕр йенђи тинĕс çулне шырама Тшон Франклђăна йанă. Çак Франклђăн унђен те тинĕсре нумай çӳресе курнăскер пулнă. Хаљ те вăл кăнтăрти Пăрлă оккеанран çеç çӳресе таврăннă пулнă. Ăна ким панă, пĕри — Ерепус йатлă пулнă, тепри Террор. Çав кимсем çинђе пурĕ 129 çын пулнă. Вĕсем хушшинђе нумайĕшĕ Пăрлă тинĕсри пăрсем хушшинђе çӳресе курнисем те пулнă. Апатçимĕç пилĕк çуллăха илнĕ. 1845-мĕш çулта çу уйăхĕнђе вĕсем çул çине тухса кайнă. Утă уйăхĕнђе Крелланти патĕнђе кит тытакан кимсене тĕл пулнă. Кусем вĕсемпе пĕрле килĕсене ку таранђђен тĕрĕс-тĕкел çӳретпĕр тесе çырса йанă. Анђах унтан пуçласа ку таранђђен Франклин киммисене никам та курман. Пĕр-ик çул хушши уншăн никам та ытлах пăшăрханман. Виç çул çине кайсан та, Франкклђăн çинђен ним сас-ђу та илтĕнмен. Вара тин пур те уншăн пăшăрхана пуçланă. Вара 1848 çулта ăна шырама виç çĕрĕн кайнă; пĕрисем — Пафин кукрипе, теприсем — Перинкă хушшипе, тата теприсем—Меккенçи вăррипе. Анђах çӳрени ахалех пулнă: Франклђăна тупайман. 1850-мĕш çулта тата урăххисем кайнă. Çухалнă Франклђăна пĕлтерес тесе, вĕсем темĕн те пĕр хăтланнă: ђулсем çине çырусем çырнă, çикналсем кăтартнă, тупăран пенĕ, кĕтӳ кĕтӳпе тилĕсене тытса, вĕсенĕн мăйĕсене çырусем çырнă мăйкăђсем тăхăнтарса, ирĕке йанă. Анђах нимĕн усси те пулман.



14-мĕш ӳкерђ. Франклђăн.

Тевон утравĕ çинђе çеç Франклђăн çыннисенђен виçĕшин виллисене тупнă. Çавăнтах тата тимĕр татăкĕсем, курупка йулашкисем, тата урăх тыткаланă йапаласем те тупкаланă. Пĕр хĕлне Франклђăн çакăнта иртернĕ мĕн. Анђах малалла ăçта кайнине пĕлме нимĕн йĕр те пулман. Çапла Франклђăна икĕ-виç хут шырама йарса та тупайман пирки, унăн йатне вилнĕ тесе хуратнă. Франклђăн арăмĕ шыракансен ĕçĕ ытла çурçĕрелле кайса шыранăран ăнман, Франклђăн вăл кăнтăртарахра Путти утравĕнђе пулнă пулмалла, тесе

шухăшланă. Ђăнах та пĕр çулне унта пĕр çўревçĕ çĕр планне ўкернĕ ђухне, çавăнта пурăнакан ескимоссенђен акă мĕн илтнĕ: темиçе çул пулат̆ ĕнтĕ, темле шурă çынсем, пĕр хĕрĕхĕн пулĕ, кăнтăралла кайађђĕç, тенĕ вĕсем. Шуррисен кимне пăр çапса ватнă. Вĕсенĕн ĕçме-çиме пĕтнĕ. Пĕр темиçе ернерен епĕр çав шурă етемсен вилисене çыран хĕрринђе тупрăмăр, тенĕ ескимоссем. Кусем каланине çўревçĕ малтан ĕненмен, анђах пăртак тăрсан, çав ескимоссем патĕнђе Франклђăн йатне ўкернĕ йапаласене—сехет çĕмрĕксене, тĕкĕрсене, пăшалсене, кĕмĕл кашăксене тупсан, унăн ирĕксĕрех ĕненмелле пулнă вара.

Çикна илтсен, каллех Франклђăна шырама тытăннă. Шырасан шырасан, ђăнах та çын вилисене тупнă, анђах Франклђăн çырăвĕсене, вăл йепле вилнине çырса хăварнисене тупайман. Франклђăнăн пĕр тусĕ ун çинђен ак çапла калат̆: вăл нимĕнле сехререн те хăрами çынђђĕ, кăмăлĕнђен пулсан пит йăвашђђĕ, шăнана та хур тума пултарасла марђђĕ, тет. Çакăн пек нимрен те хăрамасăр çĕре пĕлесшĕн тăрăшса вилнĕ çынсенђен ђăнах та пит тĕлĕнмелле ĕнтĕ! Йепле пулсан та, çавсем тăрăшнипе Çĕн Тĕнђепе (Америкпе) Кив Тĕнђе (Аçи) хушшинђе сыпăк çук иккенне пĕлнĕ пĕлнех. Анђах çур çĕрте, сивĕре, тинĕсне пăр пўлнипе (картланипе) унта нийепле те çўреме çук, ăна та пĕлнĕ.

## Паљма.

Пурăна киле етем çĕр çинђе мĕн пуррине пурне те пĕлесшĕн пулнă: çийелтине те, айалтине те, çўлтине те. Çапла Паљма йатлă акăлђан çынни Йевропри ђи çўлĕ Мон-План йатлă ту çине хăпарса курнă.

Шак Паљма вăл хура халăхран тухнă çын пулнă. Вăл йанварĕн 19-мĕшĕнђе 1762-мĕш çулта çуралнă. Вăл çирĕп ђĕррелле, хытă пикенђĕклĕ, пĕрре шухăш тытнине тума йуратаканскер пулнă. Малтан вăл Улăп тăвĕсем (Аљпăсем) çинђе çўрекеннисене çул кăтартса пыраканскер çеç пулнă.

Унђен çав Улăп тăвăсенĕн ђи çўлĕ Мон-План йатлă вĕçĕ çине пĕр Соççур йатлă ђаплă çын хăпарса курасшăн нумай хăтланнă, анђах нийепле те пултарайман. Паљма вара çав Мон-План çине хăй хăпарса курас шухăш тытнă. Çак паттăр пек пулнă Соççур тăвайманнине туса, çийеле тухатăпах тесе, хăйне хăй вăл сăмах панă.

Ђăнах та вăл, никам кĕтмен ђух, хăй кил-çуртне, кил-йышне пăрхаса таçта тухса кайнă. Кунĕ кунĕпе вăл çўлĕ тусене хупласа тăракан пăрлăхсем çине улăха-улăха, упалене-упалене хăпарнă,

пысăк тăвайккисен çурăкĕсем урлă каçа-каçа малалла утнă, каçма май çук çĕрте, вĕрен вĕçĕпе пĕр пĕр ђултан çаклатса илсе, вĕрен тăрăх хăпарнă, тарăн йур çинђе ашса пынă.

Унăн вут пек çунса хĕмленсе тăракан шухăшне нимĕн те сӳнтерме пултарайман: вăл çӳлелле хăпарнă çемĕн хăпарса пынă. Пĕрре вăл пĕр ту хĕрринђе тăвата кaç йур ăшĕнђе пĕр тапранмасăр ларнă, кăшт тапрансанах тĕпсĕр шăтăка персе анасран сехри хăпнă; ăна хырăм выççи те, ăш хыппи те аптăратнă, çитменнине тата ђăтма



15-мĕш ӳкерђ. Паљма ту çурăкĕ урлă каçма вĕрен карăт.

çук хайар сивĕ шăнтнă. Çапла çӳресен çӳресен, вăл килне тавăраннă, ывăнса çитнипе урисене аран-аран сĕтĕрнĕ. Анђах çапах та вăл хăй шухăшне пăрахман, хастарлăхĕ те унăн сӳнсе ларман. Утă

çинђе пăртак кансан, кăшт вăй кĕрсен, Палђма каллах никам хăпарса-улăхса курман тусем çине кайнă. Ђăнах та йулашкинђен унăн енеркийĕ, пикенђĕкĕ, çийеле тухнă: авкустăн 9-мĕшĕнђе 1786-мĕш çулта вăл Йевропри ђăн çӳлĕ ту тăрне улăхнă та, хăйĕн тимĕр туйине Мон-План тӳпи çине ђиксе лартнă.

Çавăнтан кайран Палђма тусем çинђе выртакан пăрлăхсене сăнаса пĕлсе çитесшĕн пулнă. Вăл килĕнђен туха-туха кайса, тусем çинђе ерни-ернипе çӳре пуçланă. Пĕрре вăл çенттапĕр уйăхĕнђе тухса кайнă та, вара килне тавăрнман: вăл çӳлтен çĕр шăтăкне татăлса анса вилнĕ. Унтанпа вара ăна никам та курман.

Палђмăран кайран вара çӳлĕ тусем çине улăхакансем нумай пулнă. Халĕ ĕнтĕ çĕр çинђи тусене пĕлмен вырăнсем сахал. Анђах ĕлĕк çӳлĕ тусем çине хăпарма мар, пăхма та хăранă: çынсем унта турăсем—темĕскерсем пурăнаççĕ тесе шухăшланă. Çав Палђма пек паттăр ђĕреллĕ çынсем, нимрен хăрамасăр, тимлесе çӳренипе çеç çавăн пек сехретекен шухăшсем сӳне-сӳне лараççĕ. Çавăнпа та Палђмăсем вилсен те, вĕсене етем ывăл-хĕрĕсем нихçан та манмаççĕ, ĕмĕр асра тытса тăраççĕ.

## 13. Тинĕсри çӳревçĕ Ђемс Кук.

Кук 1728-мĕш çулта Анклире нађар хресђен çемйинђе çуралнă. Ађа ђухне вăл йалта пурăннă. Çиђ çултанпах вăл ашшĕне хирти ĕççене тума пулăша пуçланă. Шкулта вăл çырма, тата шутлама кăна вĕреннĕ. Унтан ăна ашшĕ тинĕс хĕрринђи пĕр пĕђĕк хулара вак-тĕвекпе сутă тăвакан сутуçă патне тарçа панă. Лавкари ĕç ăна пĕртте кăмăлне кайман, вара вăл тинĕс карапĕ çине йункăна кĕнĕ, унтан вара çар карапĕ çине матруса кĕнĕ. Çав вăхăтра акăлђансемпе хрантсуссем Канатă çĕрĕшĕн вăрçă пуçланă. Çав вăрçăра Кук мухтава тухнă та, ăна лейттенант туса хунă. Кайран вăл нумай вĕреннĕ, маттематтĕкпе астрономийе те пĕлсе çитнĕ.

1768-мĕш çулта ăна Лăпкă тинĕсе кайакан çар-карапин каппиттанĕ тунă. Америкĕн кăнтăр йенђи Хорн йатлă сăмси патне çитсен, кăнтăрла йенђе урăх пĕлмен çĕр çук-ши тесе, Кук тӳрех унталла ишсе кайнă. Вăл 120 сехет кайнă, анђах çара тинĕсрен пуçне урăх нимĕн те курман. Вара вăл çавăрăнса, хĕвел-анăçĕпе çур-çĕр хушшипеле кайнă та, Лăпкă (Аслă) оккеана кĕнĕ. Темиçе ерне карап хыçĕнђен алђпатроссемпе шыв ђарланĕсем вĕçсе пынă, кайсан кайсан вĕсем те курăнми пулнă. Пĕр вĕçекен пулăсем анђах хăш ђухне ушкăнĕ ушкăнĕпе шыв çине тухкаланă, тата хăшĕ хăшĕ карап урлă та вĕçе вĕçе каçнă. Икĕ уйăх карап нимĕнле утрав та, пĕр çĕр палли те тĕл пулман, вĕçĕ хĕррисĕр тинĕс тăрăх çеç ишсе

пынă. Анђах кайсан кайсан, инçетре, çанталăк хĕрринђе, çӳлĕ тусем курăнах кайнă. Çав Таитти утравĕ пулнă. Ăна унђен темиçе çул малтан акăљђансем тупнă.



16-мĕш ӳкерђ. Вĕçекен пулăсем.

Карап йакăр йарсанах, ăна темĕн ђухлĕ кимĕсем йĕри тавра сырса илнĕ. Киммисем çинђе тиккисем ларнă. Вĕсем хăйсем килĕштернине, хăйсем хĕпĕртенине кăтартса, симĕс йăвăç турађĕсемпе сулланă. Хăшĕ хăшĕ пулăпа пахђа çимĕçĕсем илсе пынă та, матруссене панă. Матруссем хĕпĕртесе утрав çине тухса, ун тăрăх инçете кайса килнĕ. Пур çĕрте те вĕсем коккос палђмипе çăкăр йăвăçин илемлĕ ăрашђисене курнă. Пĕр тимĕр пăташăн тиккисем акăљђансене ултă коккос мăйăрĕ, йе ађа пуçĕ пысăкăшĕ ултă çăкăр йăвăççи мăйăрне панă. Пĕр сыснана икĕ тимĕр пăталла сутнă. Сутуилӳ тума тиккисем утравăн пур йенђен те пухăннă: нумайĕшĕ ашăкран тунă парăс карнă кимĕсемпе пынă. Ушкăнăн ушкăнăн пухăнса, вĕсем тĕрлĕ вăйăсем выљанă, параппан çапса, шăхлиђĕ каласа ташланă. Тата вĕсем тинĕсре шыва кĕме пит йуратнă; ишессе вĕсем тĕлĕнсе каймалла лайăх ишнĕ: ултă çулхи ађисем те вĕсен шыва пĕр-ик ђалăш таран ђăмнă, витĕр курăнакан шыва пăрахнă пăтасене тупса тухнă.



17-мĕш ӳкерђ. Кук.

Кук малалла кайма пуçтарӑна пуçласан, ун патне темӗн ђухлӗ кимӗсем пухӑннӑ, карап çине шӑнӑçма пултарнӑ таран çын тулнӑ. Пур те: çул телейлӗ пултӑр! тенӗ, нумайӗшӗ макӑрнӑ. Пӗр кӗлӗçӗ Кука: пире ађампала иксӗмӗре илсе кай, тесе йӑлӑннӑ. Кукӑн пӗр тӑлмађӑ та пулман, çавӑнпа вӗсене хӑйпе пӗрле илсе кайма пулнӑ. Акӑ ӗнтӗ йакӑрне хӑпартнӑ, парӑссем карӑнса тӑнӑ, карап вара уçӑ тинӗсе тухса, кӑнтӑралла кайнӑ.

Кук тинӗс тӑрӑх нумайђђен çӗр курмасӑр ишсе çӳренӗ. Вӑл çул çинђе пӗђӗк утравсем темиçе те тӗл пулнӑ. Çил-тӑвӑлра тинӗс пит хумханнӑ пирки, унӑн хӑйӗн çулӗнђен темиçе хут та урӑх çӗрелле пӑрӑнса çӳремелле пулнӑ. Икӗ уйӑх иртнӗ, çӗр çапах та курӑнман. Анђах акӑ вӗсем тинӗспе йухса пыракан пӗренесене тӗл пула пуçланӑ, тата карапӑн мађтисем çине (ђӑвашла каласан— тункатисем çине) кайӑксем пыра пыра лара пуçланӑ. Тунката тӑрне çыхнӑ пиђӗкере ларакан матрусӗ малалла пит хытӑ тинкерсе пӑхса пынӑ. 1769-мӗш çулта йупа уйӑхӗн 6-мӗш кунӗнђе çавӑнтан: çӗр! тесе кӑшкӑрни илтӗнсе кайнӑ. Кӑшт тӑрсан, палуп çинђен те инçетри тусем курӑна пуçланӑ. Патнерех çывхарсан, вӑл тусем йарӑмӑн йарӑмӑн тӑсӑлса тӑни паллах пулнӑ. Пӗр йарӑмӗ çинђе йур выртнӑ.

Хайхи çӳревçӗсем йакӑр йанӑ та, тинӗс хӗррине çӗр çине тухнӑ. Унта вӗсем аслӑ улӑхсем, вӑрмансем курнӑ, анђах вӗсем ӑшӑ çӗрти, троппӗкри пек пулман,—палђӑпа панан тавракшӗ нимӗн те курӑнман. Инçетре ту айаккисенђе уй-хирсем, пӳртсем курӑннӑ; кӗçех унта пурӑнакан çынсем те курӑнса кайнӑ. Вӗсем вӑрӑм сӑнӑсемпе, ђулран тунӑ пысӑк пуртӑсемпе кӗтӗвӗ-кӗтӗвӗпе кӗпӗрленсе пынӑ. Вӗсем çинђе тумтир çукпа пӗрех пулнӑ, кӗлеткисене вӗсем сӑрласа пӗтернӗ. Вара Таиттирен илнӗ çын малалла тухнӑ та, каланӑ: йут çӗрти çынсем кунта суту-илӳ тума килђӗç, вӗсем ђасах кайалла кайаççӗ, тенӗ. Акӑлђансен пит тӗлӗнмелле пулнӑ: тиккисем Таитти çынни каланине ӑнланнӑ. Анђах вӗсем хирӗç ђӗнес вырӑнне вӑрçӑ йуррине йурласа йанӑ та, пит хытӑ çилленнипе пит-куçӗсем вӗсенӗн тискерленсе кайнӑ. Кук йун тӑкасшӑн пулман, çавӑнпа вӑл пӑшалсене çӳлелле пеме хушнӑ. Тиккисем кӑшт ђарӑнса тӑнӑ та, унтан каллех сӑнӑсемпе йунаса малалла кӗре пуçланӑ. Кук вӗтӗ пулђккӑпа пеме хушнӑ, анђах вӑл та пулӑшман. Йулашкинђен вара шултӑра пулђккӑсемпех пемелле пулнӑ: темиçе çын вилнӗ, ыттисем тарса пӗтнӗ.

Çав çӗнӗрен тупнӑ çӗр мӗн пысӑкӑшне пӗлмешкӗн, Кук унӑн çыранӗ хӗррипе кайнӑ. Йӗри-тавра çавӑрӑнса тухсан, Кук çав çӗр Çӗнӗ Çеланти пулнине пӗлнӗ, вӑл çӗре пӗр Тасман йатлӑ çӳревçӗ унтан малтантарах тупнӑ. Çӗрӗн хӗррисене пӑхса çавӑрӑннӑ ђух,

пĕр тинĕс хушăкĕ çав Çĕнĕ Çелантийе урлă татса икĕ утрав тунине Кук курнă. Вăл хушăка халĕ унăн йађĕпе **Кук хушши** теççĕ. Çĕнĕ Çелантирен кайнă ђух, акăљђансем пĕр ту çине ђулсенђен пирамит туса лартнă. Çĕнĕ çĕре Анкли хăй аллине илнине пĕлтерме вĕсем çав пирамит çине Анкли йалавне çакса хăварнă.

Унтан Кук йулташĕсене, канаш тăвас тесе, пухнă та, çавăнта вĕсем кăшт çур-çĕр йеннеллерех пăрăнса, хĕвел-анăç йеннелле иртсе кайас тенĕ. Вара кайнă та, вĕсем икĕ ернерен каллех пысăк




18-мĕш ӳкерђ. Çӳревçĕсен çулĕсем.

çĕр курса йанă. Çав çĕр Австрали пулнă, унăн хĕвел тухăçĕ йенђи хĕррисене Йевроп çыннисем ун ђухне пĕлмен. Акăљђансем çыран хĕррине ансан, вĕсене хирĕç тиккисем сăнăсемпе, ђукмарсемпе тухнă, вĕсем йуна-йуна темĕскер кăшкăрнă. Тăлмађă сăмахĕсене вĕсем ăнланман, паллă туса та, вĕсене лăплантарма пулман. Çакăнта та акăљђансем малтан вĕт пуљђкăпа, кайран шултăра пуљђкăпа

пенĕ. Тиккисем тарсан, акăљђансем вĕсенĕн нађар шалашĕсене пăхса тухнă. Пĕр шалашĕнђе тиртен тунă хулхан (щит) айне пăхнă та, вĕсем унта икĕ пĕђĕк ађа пытанса ларнине курнă. Унтан вĕсем çыран хĕрринђен шалалла кайса пăхса çÿренĕ. Унта тĕлĕнмелле вăрмансем пулнă. Унти çÿллĕ йăвăçсем пĕр пĕринђен инçетре сайран ларнă. Йăвăçсем айĕнђе хÿхĕм улăхсем сарăлса выртнă; унта халиђђен курман курăксем, тĕрлĕ ђеђексем ÿснĕ. Улăхсем тĕлĕнђе çÿлте кĕмĕл тĕслĕ каккатуссем, темĕн тĕслĕ поппукайсем кĕтĕвĕ кĕтĕвĕпе вĕçсе çÿренĕ. Çынсене акăљђансем сахал тĕл пулнă: çав çĕрте çын сахал пулни курăнса тăнă. Çыран хĕррипе çур-çĕр йеннелле ишсе пынă ђух, Кук корал рифĕсем тĕлĕнђе карапне ђутах путарман. Вăл акă мĕнле пулнă. Пĕрре, çĕрле, карап, çилемай кайаканскер, сасартăк пит хытă ђĕтресе кайнă та, ђарăнса тăнă. Вăл шыв айĕнђи рифсем хушшине тĕл пулнă. Хумсем, ăна çĕклесе рифсем çине çапа пуçланă, вĕсем карап хăмисене тата тата ÿкернĕ; карап тĕпне (трÿмне) шыв кĕрсе кайнă. Тавлăкĕпех хумсем карапа рифсем çумне çаптарнă. Тепĕр каçхине тин, тинĕс шывĕ тапса килнĕ ђухне, карап çĕкленсе çавăнтан тухса кайнă. Çыран хĕррине çитсе тăратмалли вырăн тупсан, Кук карапне аран аран йусакаланă та, каллех малалла çур-çĕр йеннелле кайнă. Вăл, Торрес хушши тăрăх тухса, Йавă йатлă утрав патне çитнĕ.

Кук вара çакăнтан аран-аран Афрĕк çĕрĕн тавра çавăрăнса кайнă. Йевроп патне çитнĕ çĕре, унăн карапĕ пит хăтсăрланса çитнĕ. Парăссемпе канатсем кивелсе мăртса кайнипе çĕтĕлсе-татăлса пĕтнĕ. Ытти карапсем çав карапа хăваласа çитсе, ирте ирте кайнă: вăл, ывăнса çитнĕ çÿревçĕ пек, аран-аран малалла кайнă. Ак ĕнтĕ Ламанш! акă ĕнтĕ тăван çĕр-шывсем!

Çапла Кук тĕнђе тавра икĕ çул та тăхăр уйăх çÿренĕ.

1776-мĕш çулта Кук йулашки хут тинĕс çине çÿреме тухса кайнă. Ку хутĕнђе вăл çур-çĕр йенелле, Аслă оккеана, никам çитсе курман çĕре кайнă. Вăл унта Сантвиђ утравĕсене тупнă, вара Амерĕкĕн çур-çĕрпе хĕвел-анăç хушшинђи хĕррине курса тухнă. Унтан Уолђс принтсĕ сăмсине тупнă та, ăна карт çине ÿкернĕ. Пăрлă оккеана пырса кĕрсен, вăл çав оккеан урлă Атлант оккеанне тÿрех ÿкесшĕн пулнă, анђах пăрсем ђарса тăнă пирки, унăн кайалла тухмалла пулнă. Вăл вара тепĕр хут Сантвиђ утравĕсем патнелле кайнă. Унта тиккисем Кука турă вырăнне хунă. Вăл çыран хĕррине тухсассăнах, вĕсем ун умне ђĕркуççисем çине тăрса кĕлĕсем каланă. Пĕрре тата кĕлĕçсем ăна тăваттăн йăвăçран тунă турăсен кĕлеткисем тăракан çĕре илсе пынă та, пур халăх умĕнђе çÿлĕ пукан çине хăпарма хушнă. Çавăнта улăхса тăрсан, Кука

халăх парне панă: пĕр сыснапа пĕр татăк хĕрлĕ пусма. Çавăн ђухне кĕлĕçсем „Роно“ тесе темскер йурланă. Ăна кайран тин пĕлнĕ: Роно вăл пĕр авалхи пуçлăхăн йађĕ пулнă. Çав Роно авал кимĕпе оккеан варринелле ишсе кайнă, тухса кайнă ђух вăл: ўлéм çакăнта епĕ пĕр утрав çине ларса тавăрăнăп, тесе хăварнă. Парне хыçăн Кука пур те питĕ хисеплесе тăнă. Акăљђансем пурăнакан ăрашђара кашни кун ăна кĕл-туса; парнесем кўнĕ. Кук патне карап çине парне кўме сыснасем, măйăрсем, темĕн тĕслĕ çимĕçсем иле-иле пынă. Ахаљ çынсем ăна ан ђăрмантарђђăр тесе, акăљђансем пурăнакан çĕре кĕлĕçĕсем пĕр çынна та ура пуçма хушман. Вĕсем пурăнакан вырăна **таса вырăн, тапу,** тенĕ. Парнийĕ пит нумай пулнă: акăљђансем икĕ уйăх хушшинђе 2000 пăта йахăн сысна ашĕ хатĕрлесе хунă. Анђах унти халăхсем нађар пулнă, урăх парне кўме вăй çитереймен. Çавăнпа вĕсем Кука, ђасрах кай тесе, тархасла пуçланă. Кук малтан тĕлĕнсе кайнă, унтан ђухласа илнĕ те, ђасрах хатĕрленсе тинĕселле тухса кайнă.



18-мĕш ўкерђ. Тиккисем Кука пуççапаççĕ.

Çак тиккисем пăсăк çынсем пулман. Вĕсем çинђен Кук хăй ак çапла калать: ку таранђђен епĕ ныçта та çакăнти пек кăмăллă, хăйсене хăйсем ђипер тыткалакан тиккисене курман, тет. Вĕсем хăйсем сутмалли йапаласене тўрех пирĕн карап çине йарађђĕç те, унтан кĕçех хăйсем кимĕсемпе ишсе пирĕн пата пĕр пĕр йапала илме пырађђĕç, тет. Тўррипе каласан — таварпа тавар улăштарнă ђух, вĕсем пире нихăçан та улталас тесе шухăшламасђђĕç, тет. Анђах çакăн пек туслă пурăнăç вĕсенĕн халђхинђе пăрахăçа тухнă.

Кук Тинĕсе тухса кайсанах, хайар çил-тăвăл тухнă та, карап-тункати хуçăлса аннă, çавăнпа унăн кайалла тавăрăнмалла пулнă.

Ку хутĕнҫе тиккисем акăлҫансене тăшманăн курнă. Вĕсем акăлҫансенне йапаласем вăрла пуçланă. Ун пирки вĕсемпе кусем пĕр пĕринпе йатлаçа пуçланă. Пĕрре акăлҫансем карап çине ĕçмелли шыв тултарнă пиҫкесем кӳртнĕ, тиккисем хăйсенĕн çыннисене вĕсене пулăшма ҫара пуçланă. Çавна илтсен, Кук вĕсене пăшалпа пеме хушнă. Çапла вара вăрçă пуçланса кайнă. Тепĕр кунне Кук çыран çине тухнă та, тиккисенĕн короҫне тыткăна илесшĕн пулнă. Хăйсем пурĕ 11-рĕн анҫах пулнă. Тиккисем вĕсене хупăрласа илнĕ. Кук вĕсене пăшалпа пеме хушнă. Анҫах пĕрре персе тепре авăрлаҫҫен тиккисем акăлҫансем çине пырса кĕнĕ. Вара унта алăпа тытăнса вăрçнă, çавăнта пĕр тикки Кука çĕçĕпе хыçĕнҫен пырса ҫикнĕ те, вăл кайса ӳкнĕ. Вĕсем пур те хĕпĕртесе кăшкăрса йанă. Кукăн ӳтне çыран хĕррине сĕтĕрсе илсе суранлатса кайнă, ăна ҫиксе, касса пĕтернĕ. Йулашкинҫен пайăн пайăн пайланă та, çисе йанă. Матруссем, пăшалсемпе тухсассăн, хăйсен пуçлăхин хăш-хăш шăмми-шаккисене анҫах тупнă.

Çапла пĕтнĕ ҫаплă тинĕс çӳревçин Кукăн пурăнăçĕ. Вăл лутра патвар çын пулнă. Вăл пурне те хытă тытнă, анҫах пит тӳрĕ пулнă. Ăна пурте хисепленĕ. Ун çинҫен пĕр çын каланă: Кук — вăл ҫăн тинĕс çӳревçи пулнă, ун пек çӳревçĕ пулман, пулас та çук, тенĕ.

## 14. Ливинкстон

Ливинкстон Шотлантире 1813-мĕш çулта çуралнă. Унăн ашшĕ-амăшĕ наҫар çынсем пулнă, анҫах наҫар пулсан та, вĕсем пит тӳрĕ çынсем пулнă. Ливинкстон ăратĕнҫе тӳрĕ мар усал çын пулманпа пĕрех. Ливинкстонăн аслашшĕсен те, унăн хăйĕн те пĕр сăмах çеç пулнă — «тӳрĕ пул!» тени. Ливинкстонсем пурте çак сăмаха лайăх тытса туса пурăннă.

Ливинкстонăн 10 çултан пуçласах çемйине пĕҫĕк аллипе ĕçлесе тăрантарса пурăнмалла пулнă. Вăл пĕр хапрăкра ҫăн наҫар хура ĕçе ĕçлесе пурăннă. Каçпала, килне тавăрăнсассăн, ывăннине пĕлмесĕр, вăл, пĕҫĕкскер, вĕренме ларнă. Кăнтăрла та, ĕçленĕ ҫухне, вăл кĕнекине станок çине хурса вула - вула ĕçленĕ. Машшинсем шавлани те, çынсем калаçни те унăн хăлхине кĕмен. Çапла пит тăрăшса вĕреннипе Ливинкстон 16 çулта латтин ҫĕлхипе калаçма мар, çтихсем çырма та пĕлнĕ.

18 çула çитсен, Ливинкстона хапрăкра тĕртĕç (тĕртекен) тунă. Ку вырăнта унăн шалу кăшт хăпарнă. Çапла вăл каçпа, хапрăкран тавăрăнсан, метиҫҫин курсне вĕренме çӳре пуçланă. Вĕренсен вĕренсен, вăл тухтăра кĕме йексамĕн панă. Ливинкстон хăй пит йуратуллă ҫунҫĕреллĕ çын пулнă, çавăнпа çĕр çинҫи хурлăх курса пурăнакан наҫар

çынсенĕн пурăнăçне йепле те пулсан çĕклесђĕ тесе шухăшланă. Çак шухăша тытса вăл Афрĕк çĕрне кăнтăр йенелле кайнă. Унта Ораншă тейекен шыв хĕрринђе пурăнакан кафрсем патĕнђе ђылай çул пурăннă. Унта вăл вĕсенĕн ђĕлхине пит тĕплĕ вĕренсе çитнĕ. Вăл вĕсене, ађасене йуратнă пек, пĕтĕм ырă кăмăлтан йуратнă. Тĕрлĕ инкек-синкекре вăл вĕсене ырă сăмахсемпе йăпатнă; пурне те ăса вĕрентнĕ, ђирлисене емеллесе сыватнă. Çавăнпа та унăн ĕçĕ малалла кайнă, ăнса пынă: ун çинђен ырă йат йĕри-тавра темиçе çĕр çухрăм таран сарăлнă.



18-мĕш ўкерђ. Ливинкстон.

Ливинкстон, пурăннă çемĕн, çурçĕр йенелле куçса пынă. Çапла вăл Лимпоппо йатлă шыв патне çитнĕ те, пĕр Курумон йатлă йалта пурăнма пуçланă. Унта пурăнакан кафрсем Ливинкстонран малтан кулнă. Анђах кайран, вăл паттăр ђунлине курсан, ăна турă пек хисепле пуçланă. Вăл паттăр ђунли ак ăçтан палăрнă. Курумон йалне арăслансем тапăна-тапăна пит аптăратнă. Курумонсем вăл арăслансем çĕрле, йепле карта урлă сике-сике каçса, выђăха-ђĕрлĕхе çĕмĕрнине курнă та, анђах сехре хăпнипе нимĕн тума та пĕлмен. Вĕсем: арăслансене никам та нимĕнпе те çĕнтерейес çук, тесе шухăшланă. Ливинкстон: çак арăслансене тытма ухутана кайас, тенĕ. Ђăнах та вăл пĕрре темиçе харсăртарах çын илнĕ те, ухутана кайнă. Арăслансене хупăрласа илнĕ те, пăшалпа кĕрĕслете пуçланă. Арăслансем малтан тĕлĕнсе кайса, кайран хăраса тара панă. Анђах вĕсенђен пĕри пĕр йывăç тĕмĕ хыçне кĕç-вĕç сиксе ўкес пек, пытанса тăнă. Ливинкстон ăна курнă та, кĕрĕслеттернĕ пăшалпа, арăслан пăлтăр палтăр йăванса кайнă. Анђах унђен те пулман, сиксе тăнă та, Ливинкстона хăй урисем айне туса, унăн сулахай аллине кăшла пуçланă. Çав вăхăтра кусем патне пĕр кафр ђупса пынă. Вăл, Ливинкстона пит йуратаканскер пулнă. Арăслан çак кафр çине сиксе ларнă та, ăна пит хытă амантнă. Тепĕр кафрĕ ђупса пырса, арăслана сăнăпа ђикнĕ. Ливинкстон çак çынна, нумай пулмасť, вилес пек ђирлĕ выртнă çĕртен сыватнă. Арăслан Ливинкстона

10 çёртен суранлатнă, пуринҕен ытла сулахай аллине хытă амантнă. Вăл вара нумайҕҕен ҕирлесе пурăннă, сулахай алли унăн ёмёрлёхе вăйсăрланса йулнă.

4 çултан Ливинкстон авланнă та, арăмёпе пёрле Калаххари йатлă тип-хир пуçланса кайнă çёрте ларакан пёр кафр йалне вырăнаçнă. Ливинкстонран малтан Йевроп çыннисенҕен пёр çын та унта çитсе ура йарса пусман. Унăн арăмё те пит кăмăллă, хăравçă мар çын пулнă. Çак йалта Ливинкстон хăй аллипе шкул туса лартнă та, арăмёпе пёрле некёрсене вёрентме пуçланă, вёренекенёсем арçын-



16-мёш ÿкерҕ. Пёр кафр ҕупса пынă.

хёрарăм, ватти-вёттипех пулнă. Вёрентсе пётерсен, Ливинкстон арăмё йе апат хатёрленё, йе супăҕ тунă, йе çуртасем шăратнă, йе тата урăх та нумай пулăшнă. Ливинкстонё хăй йе каскаланă, йе тимёрçёре тимёр шаккаса пёр-пёр йапала тунă, йе сатра тăрăшнă; каç-пулттипе ҕирлекенсем патне кайа кайа пăхнă.

Пурăнсан пурăнсан, Ливинкстон Афрёк çёрне çурçёрелле кайса курасшăн пулнă. Вăл Калаххари тип-хирён леш йенҕе маккалол йатлă некёр халăхё пўрăнаҭ тенине илтнё. Вăл арăмёпе аҕисене илнё те, Калаххари урлă кайнă, вара Сампеçи тейекен пысăк шыв патне çитнё. Маккалолсем Ливинкстона савăнса хёпёртесе илнё. Вёсенён патши Ливинкстона, хăйне хисепленё пекех, хисеплеме хушнă. Ливинкстон йала пырса кёнё ҕухне, йал пуçлăхё: акă аслă пуçлăх Арăслан килет! тесе кăшкăрса тăнă.

Кунти çĕрте те Ливинкстонран малтан йевропсенҫен никам та пулман. Вăл çакăнти çĕрсем çав тери илемлине, ытла та пуйаннине курса шалт тĕлĕннĕ. Мамăк пек çемçе уй-хирсем, нӳрĕ парса тăракан шыв-шурсем, тимĕр-тăмăр тăприсем, ылттăн-кĕмĕл тымарĕсем, ытарма çук аслă васансем, кунĕ, ĕçҫен халăхсем—çаксем пурте етем куçне-пуçне савăнтарса тăнă.




22-мĕш ӳкерҫ. Çӳревçĕсен çулĕсем.

Кунтан çур-çĕр йенелли йалсем те Ливинкстона хĕпĕртесе хирĕç тухса илнĕ. Унта хĕрарăм патша пулнă, вăл Ливинкстонпа тус пулнă. Унăн хĕрĕ Ливинкстона кӳршĕ патша патне хăй усатса йанă, вăл патшан унăн муҫăшĕ пулнă. Патша хĕрĕ вăйлă çумăр

айён, ђăтлăх вăрман виттĕр, Ливинкстон караванĕсене йертсе пынă. Ку патша патĕнђе Ливинкстон хăй ĕмĕрĕнђе ђи малтан сăнђăрланă ђурасене курнă. Ку патшалăхри ђурасене ирĕксĕрлесе тытса парас йăла пулнă. Патша ăна пĕр 5 çулхи ађа-ђурана парасшăн пулнă, анђах вăл илмен те, леш унтан пит тĕлĕннĕ. Çак йалтан тухсан, вĕсем сарлака лама аннă. Ку ламра, çăмăр пĕр майах çунăран, пур çĕрте шыв кӳленсе тăнă. Вăкăр çинђе ларса пыракан Ливинксто-на шыв вырăнăн вырăнăн ђĕркуççине çитнĕ тĕлĕн-тĕлĕн пилĕке те çит-нĕ. Çак ламран иртсессĕн, йухан шывсем тĕл пула пуçланă. Вăл шыв-сем ĕнтĕ кăнтăр йенелле йухман, çур-çĕр йенелле йухнă. Вĕсем Сампе-çипе Конко турађĕсене уйăрса тăракан çӳлĕ сăрт çинђе пулнă.



24-мĕш ӳкерђ. Сăнђăрланă ђурасем.

Çакăнта çӳренĕ ђухне Ливинкстон темĕн ђухлĕ хăрушăлăх та курнă, калама та çук ывăннă, çитменнине тата ăна сивĕ ђир силле пуçланă. Çав тери йăвăр вăхăтра ăна унти пĕђĕк патшасем кайма паман. Вĕсем пит выçлăх пулнă, пысăк парнесем ыйтнă. Çапла пĕр патша патне вăл пуснă какайне парса йанă, анђах леш ăна илмен, çарпа пынă та, Ливинкстонран пĕр етем, пĕр вăкăр, пĕр пăшал, тата тарпа тумтир ыйтнă. Унăн салтакĕсем кăшкăрнă, Ливинкстона пăшалпа тĕллесе тăнă. Анђах Ливинкстон хăраман, вăл хуçмалла пукан çине ларнă та, хăйне хирĕç некĕр патшине лартнă, вара ăна шăрçасем панă, леш унпа тутă пулман, тата ыйтнă. Ливинкстон

сыннисем: вăрçма тытăнсан, епир вĕсене çĕнтеретпĕр, тесе пĕлтернĕ, анђах вăл етем йунне тăкасшăн пулман, çавăнпа патшана вăкăр панă, леш вара çырлахнă та, унтан пăрахса кайнă. Çавăнтан кайран Ливинкстон шутсăр хытă ђирлесе кайнă, вилес патнех çитнĕ, хăйĕн сыннисене те паллайми пулнă. Ливинкстон, пит хăватлă ђĕреллĕскер, çапах та ђĕрĕ йулнă. Йулашкинђен вăл порттукалсен Лоантă йатлă хулине çитсе кĕнĕ, кунтан вăл хăй çуралнă çĕр-шывне кайса тăван-пĕтенĕсене курса килнĕ.

Çакăнтан кайран вăл Сампеçи шывĕ йепле йухнине пĕлесшĕн пулнă. Вара 1855-мĕш çулта вăл çула тухса кайнă. Некăрсен патши Çеккелет ăна хăйĕн икĕ çĕр салтакĕпе ăсатса йанă. Каçпа выртма вырăн хатĕрлемешкĕн каравана малтан йанă. Ливинкстонпа Çеккелет кайран пынă. Вĕсем пыракан çул çинђе ђеђе (цеце) йатлă шăнасем пулнă. Çавăнпа вĕсем çула çĕрле, шăнасем вĕçме пăрахсан, тухса кайнă. Каç сĕм-тĕттĕм пулнă, вăхăђĕ вăхăђĕпе çиçĕм çиçнипе анђах çутăлса тăнă, унтан çумăр ђĕреслетсех йанă. Шăрăх кун хыççăн сивĕ каç пулнă. Ливинкстон йĕпенсе шăнса кайнипе ђĕтресе тăнă. Вĕсем вара малтан йанă сынсем вут хунă çĕре çитнĕ те, çавăнтах çĕр каçма шухăшланă. Ливинкстон нӳр çĕр çинех выртнă, витĕнме унăн нимĕнте пулман, мĕншĕн тесен, вăл витĕнмеллине малтан йанă. Çавăнпа Çеккелет, хăйĕн тумтирне хывса, ăна панă та, хăй çара çĕрех выртнă. Ливинкстонпа Çеккелет унтан Сампеçи шывĕ хĕррине пырса çитнĕ. Вăл тĕлте шыв сарлакăшĕ пĕр çухрăмран та ытла пулнă, вăл çавăнта пĕр çырмана татса кайнă та, сиктешĕн шывĕ питĕ шавласа сиксе йухнă. Сиктешин тарăнăшĕ 50 ђалăш пулнă. Шыв сиксе йухнă çĕрте шыв сирпĕнђĕкĕ темĕн ђухлĕ пулатӑ те, çӳлелле çавра-çил пек йупа пулса хăпаратӑ. Инçетрен пăхсан, сиктешрен тĕтĕм тухнă пек тăратӑ. Çавăнпала çав çĕрти сынсем ăна **Мĕкĕрекен Тĕтĕм** теççĕ. Ливинкстон акăлђан патши йађĕпе ăна Виктори тесе йат панă. Çав сиктеш патĕнђе вăл Çеккелетрен уйăрлнă та, 120 сынпа пĕрле малалла кайнă.

Çулĕ Сампеçин сулахай йенђен çӳллĕ хĕррипе пынă. Вырăнĕ питĕ хитре пулнă, сăртлă, илемлĕ саваннăсем (çеçен-хирсем) вăрмансемпе ылмашса пынă. Пур çĕрте те пит нумай ирĕкре пурăнакан кайăксем тĕл пулнă. Ак, сăмахран каласан, Ливинкстон хăйĕн Кун Кĕнекинђе çапла çырнă: „Епĕ сăрт çине хăпарсассăн, темиçе çĕр пуйвăлсем, çепрăсем куртăм, вĕсенĕн хушшинђе слонсем пит ђаплă çӳреççĕ. Çакна курсассăн, фотокрафипе ӳкерменшĕн епĕ питĕ ӳкĕнтĕм, мĕншĕн тесен, çак çĕре пăшал килсе кĕрсессĕн, вĕсем пурте пĕтмелле. Епĕр лапа ансассăн, çак кайăксем, епĕр сывăхарнине курсассăн та, пиртен пĕри те хăрамарĕç. Епĕр слонсем

патĕнђенех, пĕр 100 ђалăш ытларахран анђах, иртсе кайрăмăр. Вĕсем пире курман пек, пысăк хăлхисене сулласа, пĕр тапранмасăр йăвăççем айĕнђе тăрса йулђĕç. Çакна курни мана авалхи çинђен, малтанхи етемсем çинђен шухăша йађĕ, тенĕ. Некĕрсен йăхин пуç лăхĕсем Ливинкстон валђи çимĕççем йанă, ун вырăнне вăл вĕсене пĕрер аршăн пустав пек, кăшт-шар парнесем пара пара йанă. Некĕрсем ытлашши ыйтман та. Ливинкстонăн ухутана кайса килсен, кайăк ашĕ нумай пулсан, вăл вара ăна унти çынсене валеçнĕ. Хăйĕн çитмесен, ăна унти çынсем панă. Çакăнта Ливинкстона пысăк хуйхă тивнĕ: унăн йуратакан арăм вилнĕ. Вăл йаланах, упăшкинђен уйăрăлмасăр, унпа пĕрле, ăна пулăшса çӳренĕ.

Малалла кайсан-кайсан, вăл хăрушă Мпент патша çĕрне кĕнĕ. Çав Мпент вĕсене хирĕç вăйлă отрет йанă. Отретĕнђе вара икĕ старик тухнă та: ку мĕнле йут çын килђĕ? тесе ыйтнă. Ливинкстон: епĕ—акăлђан çынни, тенĕ. Лешĕ: епĕр ун пек халăха пĕлместпĕр. Есĕ портукал çынни пулмалла, епĕр вĕсемпе вăрçăллă, тенĕ. Ливикстон ђăнахах хăй портукал çынни маррине ĕнентерес тесе, вĕсене хăйĕн сарă çӳçне, шурă кăкăрне уçса кăтартнă. Стариксем вара нимĕн тумасăрах пăрахса кайнă. Унтан кайран Мпент аслă çынсене канаш тума пуçтарнă. Çав хутлăхра Ливинкстон, пĕр ђирлĕ некĕре илсе кайма тесе, йала пĕр çынна кимĕ илме йанă. Мпент, çавна пĕлсен, хĕпĕртесе каланă: ђăнахах ку шурă çын—пирĕн майлă çын, пирĕн тус: вăл некĕршĕн çав тери тăрăшат, тенĕ.

Хĕвел тухăçĕ йенђи Афрĕк çыранĕ патне тухсан, Ливинкстон акăлђансен карапне кĕтсе илнĕ те, ун çинђе килне тавăрăннă.

1864-мĕш çулта вăл каллех Афрĕк çĕрне кайнă та, унта хăйĕн кунĕ пĕтиђђенех çӳренĕ. 1873-мĕш çулта, ака уйăхĕнђе, шурлă çĕрсем урлă каçса кайнă, унтан Лопис сăрђĕсем çине улăхнă, вара вăл кунта ђарăнса тăнă, мĕншĕн тесен, ђире йерсе кайнипе унăн вăйĕсем пĕтсе килнĕ. Çу уйăхин 1-мĕш кунĕнђе ђăнах та унăн çыннисем ăна шалашра вилĕ тупнă. Вăл хăйĕн курăкран тунă вырăнĕ патĕнђе, пуçне аллисем çине ђиксе, ђĕркуççи çинђе тăнипех вилнĕ. Унăн çыннисем унăн ђĕрипе ăшђиккине çавăнта пысăк йывăç айне пытарнă; ӳтне типĕтсе, çыран хĕррине илсе кайнă та, акăлђансене панă, ӳђĕпе пĕрле Ливинкстонăн мĕн пур çырнă йапалисене, картсене, тата кашни кун çырнă кĕнекисене пĕтĕмпех парса йанă. Ливинкстон тунă ĕç—вăл питĕ пысăк ĕç: унăн кĕнекисем тăрăх Афрĕк варринђе мĕнле çĕр, мĕнле çанталăк, тата мĕнле халăхсем пуррине тин пĕлнĕ, унђен çаксене лайăхăн нимĕн те пĕлмен. Тата Ливинкстон вăл çавăнта пурăнакан тĕттĕм халăхсене

хура ўтлĕ некĕрсене, шкулсем туса, вĕрентсе, çутта кăлармалла тăрăшнă. Çапла Ливинкстон вăл ђăн тĕлĕнмелле кенийлĕ, çутă ђĕрелле, хăватлă етем пулнă. Ливинкстон пеккисем тĕнђере сахал пулаççĕ!

## 15. Стенли.

Иртнĕ ĕмĕрте, 60-мĕш çулсенђе, нумай çынсем Ливинкстон çинђен шухăшла пуçланă: пурăнат-ши ку, пурăнмаст-ши? Пурăнат пулсан, мĕншĕн çак пилĕк çул хушшинђе ун çинђен ним сас-хура та илтĕнмест? тенĕ. Вара Амерĕкре пĕр хаçат кăларакан пуйан çын хăйĕн йулташне, Стенли йатлăскере, Ливинкстона шырама Афрĕке йанă.

Стенли 1871-мĕш çулта Санçипара çитсен, вăл унта шăрçасем, вунă пăта йахăн пăхăр пралук, тата темиçе пин аршăн çĕр мамăкĕнђен тунă пусма илнĕ. Шăрçасем Афрĕкре пăхăр укçа вырăнне, пăхăр пралук ылттăн вырăнне, çĕр-мамăкĕ пусми кĕмĕл укçа вырăнне çўренĕ.

Афрĕк çĕрне çитсессĕн, Стенли пĕр уйăх хушшинђе Танканайка пĕрин хыççăн пĕрне пилĕк караван йанă. Хăй вăл: Ливинкстон çавăнта пурăнат пулĕ, тесе шухăшланă. Караванĕсем унăн пĕр пек пулман, хăшĕ пысăк, хăшĕ пĕђĕккĕ пулнă. Йулашки караванпа Стенли хăй те кайнă. Вăл питĕ пысăк пулнă, унта çынсăр пуçне 17 ашак, 2 йытă, тата лаша пулнă. Пĕр лаши питĕ лайăх пулнă, ăна Стенлийе Санçипар султтанĕ парне панă.

Вĕсен пĕр май сукмакпа вăрман виттĕр каймалла пулнă. Çул икĕ айăккипе те питĕ паха вырăнсем пулнă. Çавăн ђухлĕ çаран çинђе пулсан та, унти халăх выђăх-ђĕрлĕх çапах усрайман, мĕншĕн тесен, унта ђеђе (цеце) йатлă шăнасем нумай. Малтанах Стенлин ашаксемпе лашисем ним сисмесĕр малалла кайнă. Çапла вĕсем пĕр асап курмасăр пĕр пĕђĕк шыв хĕррине çитнĕ. Çав шыв хĕрринђе вĕсене хайхи шăнасем тапăннă.

Стенли каланă тăрăх, çав шăнасем пĕр пек пулман: хăшĕ пысăк пулнă, хăшĕ тата хамăр пўртри шăнасенђен ытла пысăках та пулман. Сăрлатасса та вĕсем пĕр пек сăрлатман. Пысăккисем мăн сасăпа, пĕђĕккисем çинçерех сасăпа сăрласа çўренĕ. Çак шăнасем лашапа ашаксене питĕ хытă сăхнă, лашисем ђĕп-ђĕр йун пулса, ним тума пĕлмесĕр, сиксе кăна тăнă.

Стенли нумай шăнасем тытнă та, çав шăнасенђен ђеђе хăшĕ тесе, уйăрасшăн пулнă. Малтан вăл ђи пысăкки ђеђе пулĕ тесе шухăшланă, анђах ђи пысăккисем Ливинкстон каланă пек, ђеђе пулман. Çавăнти çынсем: çав шăнасем выђăх-ђĕрлĕхе пит пĕтереççĕ,

тенĕ. Ђеђе пўртри шăнасенђен кăшт анђах пысăкрах пулнă. Вăл хуллен аљтпа йурланă, сăхсан, питĕ ыраттарнă. Çавна Стенли кайран тин пĕлсе çитнĕ. Çапла, темиçе кун иртсен, султтан панă арап лаши вилнĕ. Стенлин хăйпе пĕрле илсе пынă ытти выљăхсем те пĕђĕккĕн-пĕђĕккĕн вилсе пĕтнĕ. Вĕсем те ђеђе çыртнăран, те урăх йапаларан вилнĕ, ăна Стенли пĕлме пултарайман.

Çăва тухни пĕр уйăх çитсен, Стенли арапсен пĕр пысăк караванне тĕл-пулнă. Çав караван çинђе 300 слунăн асав шăлĕсем пулнă, Танканайăк йатлă кўлĕ патĕнђен илсе пынă. Арап çынни, караван пуçлăхĕ, Стенлийе Ливинкстон çинђен каласа пĕлтернĕ: вăл унпала пĕр пўртрех икĕ ерне хушши пĕрле пуранна. Тата вăл Стенлийе Ливинкстон ватăлни çинђен, унăн сухалĕсем ўссе вăрăмланса кайни çинђен, вăл уçă мар выртса нађарланни çинђен йалтах каласа кăтартнă.

Çурма çула йахăн кайсассăн, Стенлийе нийепле те малалла кайма май килмен. Вăл кайас çĕре вăрçă çавăрса илнĕ. Некĕрсен королĕ Мирампо,халăх йунне ĕçме йуратаканскер, çавăнти çула çавăрса илнĕ те: ĕнтĕ ку çулпа нимĕнле каравана та йамастăп, тесе пĕлтернĕ. Арап хуçисем некĕрсенђен икĕ пин салтак пухнă та, Мирампона хăваласа йарас тесе, ăна хирĕç кайнă. Стенли те хăйĕ тарçисемпе пĕрле вĕсемпеле кайнă. Анђах çапăçма патне çитсен унăн тарçисем пĕтĕмпех тарма тытăннă. Стенли хăй те кĕç тыткăна ленкмен.

Çакăн пек ăнман хыççăн, Стенли Мирампоран кăнтăрла йенне пăрăнса нимĕн çулсăрах айăкран иртсе кайнă. Йапаласене йăтса пыракансем питĕ сахалăн пынă, çавăн пирки унăн хăш-хăш йапалисене арапсем патнех хăвармалла пулнă. Çўлĕ вăрман виттĕр, саваннă хирсем урлă кайнă, унта ђас-ђасах çепăр кĕтĕвĕсем, тата пуйвăл кĕтĕвĕсем тĕл пулнă, шывсенђе кроккотилсем йăшăлтатса çўренĕ. Пĕр çĕрте питĕ тăрă шыв йухса выртнă. Çав шыв хĕрринђе Стенли салтăннă та, шыва кĕрес тесе, сикме аллисене тăснă, анђах сасартăк шывра темĕскер, хураскер, вăрăмскер, выртнине курах кайнă. Лайăхрах пăхсассăн, вăл кроккотил пуçне курнă та, пит хăранă. Çавна курсан, Стенли: ĕнтĕ темĕнле тăрă шыв курсан та, Афрĕкре шыва кĕрессĕм çук, тенĕ. Караван Танканайăк патне çите пуçласан, йалсем курăна пуçланă. Çав йалсенĕн патшисем питĕ пысăк çул парăмĕ ыйтнă. Стенли малтан парсах пыркаланă, анђах парса пĕтерсессĕн, Ливинкстон патне унăн ним хатĕрсĕрех пырса кĕмелле пулнă. Çавăнпа вăл парăмсене текех парасшăн пулман та, ђейеленнĕ: вăл йаланах йалсем патăнђен каçпа питĕ хуллен ирте ирте кайнă, Йулашкинђен Стенли вăрăм çула пĕтернĕ. Çул çине тухнăранпа

236-мӗш кунӗнҗе Стенли умӗнҗе ҫап-ҫутӑ сарлака кӳлӗ, тата йӗри-тавра паљмӑллӑ йал курӑнса кайнӑ. Вара Стенли: ҫак Уҗиҗи йалӗ. Ура! тесе кӑшкӑрса йанӑ. Ун хыҫҫӑн пур те хӗпӗртенипе аслати пек кӑшкӑрнӑ. Ҫав кунах вӑл Ливинкстона курнӑ. Ливинкстон уҫӑ мар пулнӑ, унӑн ним хатӗр те пулман, ныҫтан илессине те кӗтмен. Хатӗрсемсӗр пуҫне тата Стенли Ливинкстон патне ҫырусем илсе пынӑ. Ҫав ҫырусем 5 ҫул хушши Санҫипарта купаланса выртнӑ.

Кайалла кайнӑ җух, Ливинкстон Стенлийе хӑй хатӗрӗсене парса йанӑ. Арап ҫӗрне ҫитиҗҗен ӑсатса йанӑ. Унта вара вӗсем пӗр-пӗринҗен уйӑрӑлнӑ. Ливинкстон каллех Афрӗке кайнӑ, Стенли Америке таврӑннӑ.

1874-мӗш ҫулта, Ливинкстон вилсессӗн, Стенли хӑй тепӗр хут ҫул ҫӳреме тухса кайнӑ. Танканайӑк кӳлли патне ҫитсессӗн, унӑн караванӗ ҫурри те йулман: хӑшӗ-хӑшӗ тиккисемпе вӑрҫнӑ җух вилсе пӗтнӗ, ыттисем тата ҫул ҫинҗи йӑвӑрлӑхсенҗен хӑраса кайалла тарнӑ.

Танканайӑк кӳллинҗен хӗвел-анӑҫнерех ҫын ҫийекен етемсем пурӑннӑ. Стенли, шикленнӗ майӗпе, хӑйӗн караванне ҫӗмӗрттерес мар тесе, пӗр пуйан арап ҫыннипе ак ҫапла килӗшӳ тунӑ: арап ҫыннин 250 салтакпа виҫ уйӑхҗен вӗсене сыхласа ҫӳремелле, уншӑн ӑна 5000 толлӑр укҫа тӳлемелле пулнӑ, пурӗ вӑл 10,000 тенкӗ пулатӑ. Ҫаксем, тапранса кайнӑ кайманах, пӗр пысӑк сӗм-вӑрмана пырса кӗнӗ. Ку вӑрманта питӗ тӗттӗм пулнӑ. Ҫавӑнпа Стенли тӑптӑр кӑнтӑрлара анҗах хӑй кӗнеки ҫине аран ҫыркаланӑ. Йӑвӑҫсем ҫинҗен сывлӑм, ҫумӑр ҫунӑ пек, шӑпӑртатнӑ. Ҫавӑнпа вӗсенӗн тумтирӗсем пӗртте типсе курман. Ҫӑрӑнса тӑракан пыљҗӑк ҫинҗе урисем пута-пута ларнипе асапланнӑ, аллисемпе ҫыхланса ларнӑ йӑвӑҫ тураҗӗсене сирсе пынӑ, ҫитменнине вырӑнӗ вырӑнӗпе пуртӑпа касса ҫул уҫмалла пулнӑ. Икӗ ерне хӗвел ҫутти курмасӑр, вӑрманпа пырса, йулашкинҗен Ливинкстон тупнӑ Луалан йатлӑ шыв хӗррине пырса тухнӑ.

Нил шывӗ-ши ку, Конко шывӗ-ши? пирӗн ҫакна, мӗнле те пулин, пӗлме тӑрӑшас пулатӑ, тенӗ Стенли. Ҫак вӑхӑтра Стенли ҫыннисемпе арап салтакӗсем: калла кайатпӑр, тесе кутӑнлана пуҫланӑ. Стенли тем каласа йӑпатсан та, вӗсенӗн шухӑшланӑ шухӑшне ҫавӑрса йарайман. Вара Стенли пурне те пӗр ҫӗре пухса каланӑ: епӗ пӗҗҗенех Пысӑк Тӑварлӑ-Шыв патне, оккеан патне, ҫак ҫырмапа ишсе кайӑп: есӗр, манпа пӗрле ҫакӑн җухлӗ килнӗскерсем, мӗнле вара мана пӗҗҗен пӑрахса хӑварӑр? Есӗр вилес пулсан та, аҗисем ашшӗ хыҫҫӑн пынӑ пек, ман хыҫҫӑн пымӑр-и вара? тенӗ. Пӗр некӗр

çавăнта ђупса пырса, Стенли урисене ыталаса илсе, хытă каланă: пуçлăхăм, пăх-ха: епĕ пурăнмалла пулсан та, вилмелле пулсан та, санран уйăрăлассăм çук! тенĕ. Çавăнтах: епĕ те! епĕ те! тенĕ сасăсем илтĕнсе кайнă. Çакна кура, вара арапсем те малалла кайма шухăш тытнă.

Стенли вара кун хыççăн хăйĕн екçпетитсине икĕ ушкăна уйăрнă. Пĕр ушкăнĕ шывпа ишсе пынă, тепĕри çырма хĕррипе ђăтлăх вăрман хушшинђе çул уçса пынă. Каç пулттипе, çĕр каçма, икĕ ушкăнĕ те пĕр çĕре пуçтарăннă. Çырма хĕррипе пыракан ушкăнĕ нумай йал виттĕр тухкаланă. Çак йалсен урамĕсене илемшĕн шаљça тăррине çын пуçĕсене çака çака йанă. Кунта çын çийекен етемсем пурăннă. Салтаксем пыра пуçласан, вĕсем вăрманалла тарнă, анђах



23-мĕш ўкерђ. Кимĕсемпе малалла кайнă.

кăшт тăрсанах, вĕсем пĕрле пухăнса, сисĕнђексĕр пыра пыра çĕмĕрнĕ. Стенли, йал тĕлĕнђен иртсе пынă ђух, ђас ђасах çав некĕрсем калаçнине илткеленĕ. Вĕсем: аťăр, хĕвел çыннисен какайне çийĕпĕр ĕнтĕ, пирĕн какай нумай! тенĕ.

Пĕр çĕрте çапла Стенлийе хирĕç тиккисем вун-тăватă кимĕпе тухнă. Пĕр тиккисен ђĕлхине пĕлекен вĕсене: пирĕн мĕн пурĕ те пĕр пысăк кимĕпе пилĕк пĕђĕк кимĕ анђах, епĕр—вăрçакан çынсем мар, сывмар çынсем илсе пыратпăр! тесе кăшкăрнă. Анђах тиккисем айакранах, хайар сассисемпе кăшкăрса, ухăсемпе пере пуçланă. Стенли вара хăйĕн салтакĕсене тиккисен киммисене тĕллесе харăс

пеме хушнă. Тиккисен киммисем шăтнипе пĕри шыв тĕпнелле пута пуçланă. Çакна курсан, тиккисем тарма тытăннă. Çавăнтан кайран вара шывра та, çĕр çинђе те вăрçă тапранса кайнă. Стенли çине пĕр шыв хирринђе пурăнакан етеме çийекен некĕрсем анђах мар, тата çитменнине вăрман ăшĕнђе пурăнакан лутакай çынсем те (карликсем) пыра пыра çĕмĕрнĕ. Çак лутакай çынсем ађа пек пĕђĕккĕ, упăте пек çăмламас пулнă; куçĕсем те упăтесен пек пĕр пĕрин çывăхĕнђе тăнă. Вĕсем питĕ сийен тăваканскерсем пулнă, мĕншĕн тесен, вĕсем уххисенĕн йĕпĕсен вĕçне вĕлерекен йапала сĕрнĕ. Пĕрре çапла Стенли çыннисем сухаллă пĕђĕк çынна тытнă. Вăл



23-мĕш ӳкерђ. Çапла вĕсем пусака патĕнђен иртсе кайнă.

хăранипе ђĕтресе çеç тăнă. Аллисенђе унăн ухă аврипе темиçе ухă йĕппи пулнă, вĕсенĕн вĕçĕсене хурапа сĕрнĕ пулнă, çийелтен тата çулçăпа ђĕркенĕ. Стенли пĕр уххине илнĕ те, çулçисене илсе пăрахса, лутакай çынна тăрăнтаран пек тунă. Лешĕ аллисене кăкăрĕ çине хурса: ан вĕлер! тесе кăшкăрса йанă.

Тиккисем Стенли çарне кăнтăрла та, çĕрле те канăç паман, пĕр майах тапăннă. Каçхине, çывăрнă ђухне, тапăр пек туса, ăна йĕритавра пĕренесемпе, çапăсемпе картланă, тата хуралсем тăратнă. Ђас ђасах вĕсен каçхине тăрса çапăçмалла пулнă. Халран кайнипе апат çук пирки, салтак хушшинђе ђирсем сарăла пуçланă, вара

кунсерен икшер-виҫшер ҫын вилнĕ. Арап ҫынни малалла кайма пăрахнă, калаҫнă тăрăх, унăн тата сакăр тытăм (переход) каймалла пулнă. Стенли хăй те апла кайма пулас ҫуккине пĕлсе тăнă, ҫавăнпа вăл арапа пĕр хирĕҫтермесĕрех укҫине тӳлленĕ те, килне йанă. Ҫавăнтан кайран Стенли хăй ҫĕрле пĕр хирĕҫекен йала сисĕнђĕксĕр пырса кĕнĕ те, унтан ҫирĕм виҫĕ кимĕ вăрласа пынă, вара хăйĕн ҫыннисене ҫав кимĕсем ҫине лартса, малалла иртсе кайнă. Анђах екваттăр патĕнђе, пăртак хĕвел анăҫнерех, шыв ҫавăрăнăшĕнђе кĕтмен инкек тĕл пулнă: кунта сиктешсем, пусакасем, ђул куписем йĕрки йĕркипе пынă.

Айакранах Стенли шыв хайаррăн шавланине илтнĕ, патне ҫитсессĕн, вăл акă мĕн курнă; ҫав тĕлте ҫырми ансăр пулнă, сиктешсенђен шывĕ, пĕтĕмпе кăпăкланса кайса, хăрушăн сиксе йухнă. Стенли ирĕксĕрех киммисене, шывран кăларса, ҫырма хĕррипе сĕтĕрсе пымалла пулнă, вăрманне касса, ҫул уҫмалла пулнă, ҫитменнине тата ҫынна ҫийекен тиккисем, пухăна пухăна, вĕсене тапăннă. Хăйсем: какай! какай! тесе кăшкăрнă. Стенли хăйĕн салтакĕсене икĕ ушкăна уйăрнă: пĕри ҫапăҫнă, тепри кимĕсене сĕтĕрсе пынă. Малтанхи пусака патĕнђен типĕ ҫĕрпе иртсе кайма пурĕ 78 сехет тертленмелле пулнă! Ҫапла вĕсем иккĕмĕш пусака патĕнђен, виҫҫĕмĕшĕ патĕнђен, йулашкинђен ҫиђђĕмĕшĕ патĕнђен туха туха иртсе кайсан тин, сарăлса пĕр пек йухакан шыв ҫине пырса кĕнĕ.

Малалла кайнă ҫемĕн кайса, Стенли иккĕмĕш хут екваттăр урлă каҫнă та, Конко шывĕ оккеана йухса кĕнĕ ҫĕрти сакăлтаклă ҫĕре ҫитсе тăнă, унта тем пысăкăш ђулсем пулнă. Кунта каллех кимĕсене шывран кăларса, ҫыран хĕррипе сĕтĕрсе пымалла пулнă, пĕђĕкрех сакăлтаксенђе канат вĕҫҫĕн йарăнтарса пынă. Ҫапла мĕн пурĕ 32 шыв сакăлтакĕ тĕл пулнă, вĕсем патĕнђен тавра ҫӳресе 31 кун иртнĕ. Йулашкинђен Санҫипартан тухни икĕ ҫул та тăватă уйăх тулнă ҫĕре Конко шывĕ варрине Стенли аран аран пырса тухнă. Унтан тинĕс хĕррине ҫитсе, прахут ҫине ларнă. Вара Афрĕк ҫĕрĕ тавра кăнтăр йенђен кайса, Стенли хăй ҫыннисене пурне те килĕсене ҫитерсе хăварнă.

Ҫакăнтан кайран Стенли Афрĕке кайса Конко тăрăх тата виҫĕ хут ҫӳресе тухнă. Унти некĕрсемпе суту-илӳ тумалли пасарсем нумай тунă, тата Конко тăрăх прахутсем те ҫӳреме пуҫланă.

## 16. Пршеваљски.

Пршеваљскин тĕп-аслашшĕ Пароваљски йатлă касак пулнă. Вăл пит харсăр ҫын пулнă пулмалла, мĕншĕн тесен, Пароваљски теми пăсĕпех ӳкерекен тени пулаť. Ҫав касак XV-мĕш ĕмĕрте Пољшăна

пурăнма куçнă, унта унăн хушаматне Преваљски, кайран Пршеваљски тесе улăштарнă. Çураласса Пршеваљски çӳревçĕ Смоленски кĕпĕрнинђе пĕр йалта 1839-мĕш çулта çуралнă.

Пршеваљски пĕђĕкренпех хăйĕн пĕђĕк шăллĕпе вăрмана çӳреме йуратнă. „Епĕ йалта кайăк пек ӳсрĕм“, тенĕ вăл çитĕнсе çитсен. Килтен кайма ăна кирек хăш вăхăтра та йуранă, ђаракан никам та пулман. Ђĕреслетсе çăвакан çăмăр айĕн вăл пĕр хут кĕпепех ђупса çӳренĕ. Икĕ пĕр тăван, ӳссе çитсен, Смоленскине вĕренме кайнă. Унта вĕсем пĕр пĕђĕк хваттерте пурăннă. Вĕсене пăхса усраканни пĕр тĕреклĕ тарçă пулнă. Пршеваљски вĕренессе аван вĕреннĕ. Унăн тăнĕ-пуçĕ ас-тăвас тĕлĕшрен майсăр хастар пулнă, анђах вăл пит ђăрсăр ађа пулнă. „Рускă сахал лекмен мана килте те, шкулра та“, тенĕ вăл çитĕнсен. Пĕрре ăна шкулран кăларса йама тытăннă. Амăшĕ пынă та: кăларса йариђђен, лайăхрах çаптарăр ăна тесе, йăлăнса, кăларттарман. Çакăн çинђен Пршеваљски калаť: мана çавăн ђухне хĕнемесĕр кăларса йанă пулсан, манран ырă çын пулас çукђĕ, тет.

Вĕренме пăрахсан, вĕсем çулла килне пурăнма кайнă. Вĕсем унта уйрăм çуртра хăйсенĕн муђђĕшĕпе пурăннă. Вăл вĕсене пăшал пеме вĕрентнĕ, вĕсемпе пĕр майах йĕ ухутана, йе пулă тытма çӳренĕ. Киле вĕсем çывăрма кăна таврăннă. Йаланах ухутара çӳресе, Пршеваљски тĕреклĕ алăллă, вăйлă куçлă пулса кайнă.

16 çулта шкулран вĕренсе тухсан, вăл слушпăна кĕнĕ. Унта вăл 5 çул пурăннă. Çакăнтан кайран, вăл йăнаралштапăн аккатемине кĕнĕ. Унтан вĕренсе тухсан, Варшшаврა кеокрафи вĕрентсе пурăннă.

1867-мĕш çулта вăл Çĕпĕре, хĕвел тухăçне, слушпăна куçнă. Ун ђух вăл первейхи çӳреве тухса кайнă. Унтан кайран вара хăйĕн пурăнăçне вăл Аçи çĕрне пĕлесшĕн çӳресех ирттернĕ.

Вăл малтан Уссури çĕрне кайнă. Унта унђен Йевроп çыннисенђен никам та çитсе курман темех пулаť, мĕншĕн тесен, унти çĕрсене аслăшĕпе ђăнах та никам та пĕлекен пулман. Вара



24-мĕш ӳкерђ. Пршеваљски.

Пршеваљски ҫавӑнта икӗ ҫул хушши сӑнаса ҫӳренӗ, унти ђӗр-ђунсене, йӑвӑҫ-курӑксене, тата тӗрлӗ йапаласене урӑх та пит нумай пуҫтарнӑ. Унта пурӑнакан етем пит сахал пулнӑ. Пршеваљски хӑй калаӑ: ҫын мӗн нысҫта та курӑнмасӑ, хӑш ђухне пӑт-пат сунарҫӑсем тӗл пулкалаҫҫӗ, йе тата вырӑнтан вырӑна куҫса ҫӳрекен тикки ҫынсен ӳплисем ларкалаҫҫӗ, тет. Анђах ҫанталӑк унта тӗлӗнмелле пуйан пулнӑ та, ирӗк пулнӑ. Пуринђен ытла Пршеваљскийе кайӑк - кӗшӗк тӗлӗнтернӗ: вӗсем ҫуркунне пуҫлансанах ҫурҫӗрелле, пинӗ пинӗпе карталанса, ирте ирте кайнӑ.

1870-мӗш ҫулта Пршеваљски Питӗре (халхи Ленинкрата) тавӑрӑннӑ та, унта тӑватӑ хутђен ҫав хӑй ҫӳренӗ ҫӗрсем ҫинђен каласа кӑтартнӑ. Йулашкинђен вӑл: Аҫи варне кайса курас пулаӑ, тенӗ. Ӑна унта йама пулнӑ. Ђӑнах та вара вӑл унта 3—4 хут та ҫитсе курнӑ. Унран пуҫне унта, Маркко Полоран пуҫласа, урӑх никам та кайса ҫӳремен.

Вӑл виҫҫӗмӗш хут ҫӳренине епир ҫакӑнта кӗскенӗн каласа парӑпӑр. Вӑл ун ђухне, Типет ҫӗрне кӗрсе, **Лхас** хулинех ҫитсе курма шухӑш тытнӑ. Питӗртен тухсан, вӑл ҫунапа 5 ернере Киттай ђиккинђи Сайсана ҫитнӗ. Унта вӑл ҫул ҫинђе мӗн кирлине пурне те хатӗрленӗ те, 1879-мӗш ҫулта, пуш-уйӑхӗнђе ҫӳреве тапранса тухнӑ. Унпа пӗрле унӑн 2 йулташӗ пулнӑ, тата 3 салтак, Ҫӗпӗр касакӗсем 5-ӗн, пӗр унтӗр ухвитсер.

Киттай ђиккинђен каҫсан, Пршеваљски Ђункари ҫеҫен хирӗ урлӑ кайнӑ. Унӑн караванӗ кунне 25-шер ҫухрӑм тунӑ. Вӗсем ирхине, хӗвел тухсанах, тухнӑ та, 6—7 сехет кайнӑ; йулан-утлисем хӑшӗ малалла кайнӑ, хӑшӗ тӑра тӑра йулнӑ, вӗсем ҫапла саланса ҫӳресе, тӗрлӗ ӳсен-тӑрансем пуҫтарнӑ, ҫӗлен-калтасем тытнӑ, тата тӗл пулакан тӗрлӗ ђӗр-ђунсене пӑшалпа пере пере тытнӑ. Пӗр вун ҫухрӑмне вӗсем асӑрхамасӑрах кайнӑ, тепӗр вун ҫухрӑмне кайнӑ ђухне, вӗсем ӗшеннӗ пек пулнӑ. Пӗҫерте пуҫласан, вӗсем пурте, пӗр пӗр ҫӑл ҫукши тесе, малалла пӑха пуҫланӑ. Ҫӑл патне ҫитсен, тӗвисем ҫӗре выртнӑ, вара вӗсем ҫине тийенӗ йапаласене пушатнӑ. Касак вут ђӗртсе йарса ђей вӗретнӗ, вут-шанкӑ вырӑнне типсе хытнӑ тислӗк ҫунтарнӑ, ӑна монколсем **аркал** теҫҫӗ. Ђӑн ырӑ аркал вӑл — ӗне выљӑхин, унтан тӗвепе лашан, кирлӗ ђухне сурӑх аркалне те тиркемен.

Икӗ уйӑхран Пршеваљски Тањ-Шањ тӑвӗсем патне ҫитнӗ. Ҫу уйӑхӗ вӗҫӗнђе пулин те, вӑл тусем ҫинђе йур выртнӑ, тата йурлӑ хутӑш ҫӑмӑр ҫунӑ. Пршеваљски вара, калама ҫук пыљђаклӑ ҫулсемпе кайса, йурсем ҫинђен аша-аша пырса, аран аран тусем урлӑ каҫнӑ та, Хами айлӑмне анса ҫитнӗ. Кунта кӑшт пурӑнсан,

вăл Хами хирне çитсе кĕнĕ. Вăл хирĕн икĕ хĕрри те аслă тип уйсемпе пĕрлешсе тăраççĕ: пĕри — хыçал йенҫи Такла Макканпа, тепри — хĕвел тухăçнелли Хопипе.

Çул çинҫе пынă ҫух, унта пĕр майах вилнĕ лаша, вилнĕ тĕве шăммисем тĕл пулнă. Ĕнсе хĕрсе кайнă çĕртен çӳлти сывлăш темĕскерле саррăн, тĕттĕмĕн курăннă. Пĕр çил татăкĕ те пулман, хутран-ситрен анҫах хĕрсе çитнĕ çавра-çилсенĕн вăрăм йуписем, тусана вĕçтерсе, ирте-ирте кайнă. Кăнтăрла шăрăх 40° йаҳăн пулнă, çавăнпа караван çĕрле çӳренĕ. Ку хирте çăлсем (пусăсем) сахал пулнă, çитменнине тата шывĕсем те вĕсенĕн тăварлă пулнă. Çавăнпа унта Пршеваљски пĕр етем кил-çуртне те, иртен-çӳрене те тĕл пулман. Çапла хуллен кайа-кайа, вăл сăртлă Наҧ-Шаҧ йатлă çĕре çитсе кĕнĕ.

Н а ҧ-Ш а ҧ тăвĕсем çине хăпарсан, Пршеваљски унта халиҫҫен никам пĕлмен икĕ çӳллĕ ту курнă. Çав тусем тăрринҫе ĕмĕр кайми йур выртнă. Темĕн ҫухлĕ хĕн пулсан та, вăл унта хăпарса пăхнă. Вăл улăхнă тăвăн çӳллĕшĕ 17.000 фут пулнă, ытти ту тăррисем тата çӳлĕрех пулнă. Унтан ансан, Пршеваљски нумайҫҫен айалта курăксем пуçтарса çӳренĕ, тата ту çинҫи тискер к а й ă к с е н е: ту такисене (архҳарсене), пысăк йышши паха пăлансене (маралсене) тискер йаксене пăшалпа персе çӳресшĕн йĕрлесе çӳренĕ. Çапла çӳренĕ хушăра унăн Йекорăв йатлă сынни ҫутах пĕтмен.

Вăл ĕç ак çапла пулнă. Пĕр тарăн хĕсĕк çырмара унҫҫен малтанхи кун пăшалпа персе аматнă тискер йак выртнă. Йекорăвпа тепĕр касака çавна шырама йанă. Çырма патне çитсен, вĕсем йĕр тăрăх тискер кайăка шыраса кайнă. Çапла йĕрлесе пынă ҫух, сисмен хутрах, вĕсем пĕр пĕринҫен уйăрăлса кайнă; касак, архарсене ытараймасăр, вĕсем хыççăн ҫупнă, çав вăхăтра вара Йекорăв куçран çухалнă. Касак ăна тĕттĕмҫенех шыраса çӳренĕ, анҫах тупайман та, килне кайнă. Тул та çутăлнă, Йекорăв çапах тавăрăнман. Çанталăк сивĕ тăнă. Йекорăв кĕпе вĕççĕн анҫах пулнă, унăн вут ҫĕртмелли тавраш та пулман. Пршеваљски Йекорăва шырама отрет кăларса йанă. Аманнă тискер кайăк йĕрĕпе пырсан-пырсан, касаксем çавăнтах Йекорăв йĕррине те курнă. (Унăн уринҫе хăй тунă кĕлĕсĕр атă пулнă).

Пĕр-икĕ çухрăм кайсан, касаксем аманнă тискер йак выртнă йĕр тĕлне çитнĕ. Çав йĕр çине пăхсан, паллă пулнă: Йекорăв, нимĕскер, ăна-кăна асăрхамасăр, кайăк çывăхнех пырса тăнă мĕн, лешĕ вара выртнă çĕртенех ун çине ыткăннă. Тискер йакăн йĕррипе тата пăртак малалла кайсан, касаксем хăш-хăш тĕлте Йекорăв йĕррине те тĕл пулкаланă. Анҫах тата виçĕ çухрăмран, çав йĕрсем пĕтĕмпех çĕтнĕ. Тепĕр кунне кăвак çутăллах Пршеваљски, пилĕк

çын илсе, Йекорăва шырама хăй кайнă. Вăл каçђенех тусем хушшинђе сулланса çӳренĕ, кашни тарăн çырмарах пăшалпа пенĕ, анђах Йекорăв сас паман. Çĕртме уйăхĕ пулсан та, çанталăк сивĕ тăнă. Ир-ир сивĕ çиђĕ крата (7°) йахăн пулнă, кăнтăрла çил вĕрсе, сывлăшра тусан мăкăрлантарса тăнă. Пршеваљски: ку Йекорăв монколсем патне ленкмен-ши? тесе шухăшла пуçланă. Вара вăл вĕсем патне, Йекорăва шырама, касаксене йулан утсемпе йанă. Касаксем виçĕ кун тусем çинђе шыраса çӳренĕ, монколсем патне çитсе ыйтнă, анђах лешсем: епир ун пекскер курман, тенĕ. Пршеваљски Йекорăва: вилнĕ ĕнтĕ вăл, тесе шутласа, çав вырăнтан хĕвел-анăçĕ йеннелле кайнă. Пĕр 25 çухрăм кайсан, вĕсем çăл-куç патĕнђе пăртак каннă та, каллах малалла кайнă. Караван хăйĕн йĕркипе пынă, никам та пĕр сăмах та ђĕнмен, пур те йывăр хуйхă çинђен шухăшласа пынă. Сасартăк çав вăхăтра малта пыракан



24-мĕш ӳкерђ. Тусан йĕрсĕр мăкăрланни.

касак, хăйĕн витĕр куракан куçĕпе айăкра, караванран сылтăм йенђе, пĕр темĕнскер ту çинђен мăкăљтетсе аннине курах кайнă. Малтан ăна тискер кайăк пулĕ тесе шухăшланă. Анђах Пршеваљски, тĕкĕр витĕр пăхсан: ку — çын, ку — Йекорăв! тесе кăшкăрса йанă. Касаксем Йекорăв патне çил пек вĕçтернĕ. Пĕр çур сехетрен ăна вĕсем, лаша çине лартса, илсе пынă. Пршеваљски ун çинђен, ак çапла каласа парать: Йекорăва курсан, епĕр пур те тупăннăшăн хĕпĕртенипе хĕрхенсе макăрса йатăмăр. Вăл нађарланса хуралса кайнă, хĕрелсе кайнă куçĕсемпе тискерĕн пăхать. Унăн çара ӳтне пĕр кĕпи çеç çийелтен витсе тăрать; унăн карттусĕ те, йĕмĕ те çук; урисене çĕтĕк-çурăк тутăр татăкĕсемпе ђĕркекелесе йанă. Пĕр икĕ

çухрăм кайсан, çăл-куç тĕл пултăмăр. Вара унта ђарăнса Йекорăва ђей вĕретсе ĕçтертĕмĕр. Пăртак сывлăш çавăрсан, Йекорăв пире хăй çухалса çӳрени çинђен каласа пађĕ. Малтанхи çĕр вăл пĕр майах утнă. Тул çутăлсан, сывлăшра тусан йĕрсĕр мăкăрланса тăнипе, Йекорăв хăй ăçта çитсе тăнине нийепле те ђухласа илеймен. Виçĕ талăк вăл çапла аташса çӳренĕ. Çав вăхăтра нимĕн те çимен, ревен курăкĕн йӳçĕ çулçисене çех ђăмлакаланă, ђас-ђасах тата шыв ĕçнĕ. Йекорăв çапла каласа панă: çийесси аса та килмесђђĕ: тусем çинђе тискер кайăк пек çăмăллăн ђупса çӳретĕп, тенĕ. Çапла çӳресе унăн аттисем шăпăртах çĕтĕлсе пĕтнĕ. Вара вăл çара урисене хăйĕн çĕтĕк йĕмĕпе ђĕркесе йанă. Урине нимĕн тăхăнма çук пирки, Йекорăв ури тупанĕсене шĕвĕр çивĕђĕ ђулсемпе пĕтĕмпех ватса пĕтерне. Çĕрлехи вăхăта вăл ђуллă сăртсем айĕнђе выртса ирттернĕ. Вут ђĕртес пулсан вăл ак мĕн тунă. Пушă патрон ăшне хăйĕн карттусĕнђен çĕрмамăкĕ татса хунă. Перcе йарсан, çĕр мамăкĕ мăкăрлана пуçланă. Çавна илсе вара Йекорăв, йакăн типсе кайнă тислĕкне пуçтарса, вĕре-вĕре ђĕртнĕ. Анђах çĕрĕпех вут çунтарма май килмен, çавăнпа Йекорăв, хытă шăнса кайасран, кĕпи ăшне (çурăм хыçне) каллах йакăн типшĕрнĕ тислĕкне тултарнă. Унтан ђĕрĕп пек хутланса çыварнă. Тăваттăмĕш кун çинђе вăл пит ыvăннă, хырăмĕ те шутсăр выçса кайнă. Пăртак та пулсан, хырăм выççине ирттерес тесе, мулкађă тытса, ăна ђĕрĕллех çинĕ. Çиђђĕмĕш кунне вăл: пĕтрĕм ĕнтĕ, тесе шухăшланă. Вара вилĕмлĕх кĕпи шурă пултăр тесе, мĕн пур йулашки вăйне пуçтарса, ăçта та пулсан, шыв хĕрринђе, кĕпине çуса тасатас тесе кайнă. Анђах ăна çавăнта вилмелле çырман иккен. Икĕ кун хушшинђе вăл ђыллайах самайланнă, тĕве çинђе ларса çӳреме те пултарнă.

Ђайтам (Цайдам) йатлă çара лаптăк тусем урлă каçса кайсан, Пршеваљскин караванĕ çӳллĕ сăртлă Типет çĕрнелле хăпарса кайнă. Çавăнта тусем çинђен йухса анакан шыв айламĕсенђе, тата лапасенђе курăк çисе çӳрекен кайăксем нумай пулнă. Пршеваљски ун çинђен çапла калат: пире çул çинђе пĕр майах кулансем, йаксем, анттилопсем тĕл пулађђĕç, вĕсем, караванран тĕлĕнсе, пĕр хăрамасăр пăхса тăрађђĕç. Кулансем кĕтĕвĕ-кĕтĕвĕпе пирĕн умран кăшт пăрăнађђĕç те, пире çул парађђĕç. Хăш ђухне тата тĕрлĕ йышши анттилопсем улăхсенђе, пĕр шикленмесĕр, ђип-ђипер курăк çисе çӳређђĕç, çул урлă йуланутпа пыракан умĕнђенех каçа-каçа кайађђĕç. Тутă выртакан йаксем, хăйсем патĕнђен пĕр ђĕрĕк çухрăмран иртсе каймалла пулсан, тăрса тарма шухăшламасђĕç те. Пире йумахри пекех туйăнса кайрĕ, тет.

Тĕслĕрен кайăк тирĕсене пуçтарас тесе, Пршеваљски ђарăна

ђарăна кайăка çӳренĕ. Кайăксем, пăшал сассине илтменскерсем, сасартăк хăраса, тарас вырăнне, ушкăнĕпе пуçтарăнса, пĕр пĕрин çумне хĕскеленсе, пĕр вырăнтах тапăртатса, сиккелесе тăнă.

Акă кĕр çитнĕ. Йупа уйăхĕ пуçламăшĕнђе малтанхи йур та ӳкнĕ, вăл çӳлĕ тусене те лаптак сăртсене те, тарăн варсене те шурăпа витнĕ. Унтан пит вăйлă çил-тăман тухнă пирки, Пршеваљскин теминçе кун пĕр вырăнтах карăнса тăмалла пулнă. Çакăнта тăнă ђухне, вăл хăйсен шалашĕ патĕнђе темĕн ђухлĕ йаксем, ытти тĕрлĕ кайăксем те кĕтĕвĕ кĕтĕвĕпе ирте ирте кайнине курнă, вĕсем кăнтăралла Кăвак Шыв лапнелле хӳтĕ ăшă çĕре кайнă. Çавăнта çул-пуçĕ, Монкол çынни, çӳревçĕсене кайалла, Ђайтама тавăрăнас тесе, йăлăна пуçланă. Вăл каланă: кайăксем, кунта хăвăрт хĕл пулассине сиссе, кунтан кайаççĕ, тенĕ. Пршеваљскийĕ: мĕн пулсан та пулĕ, епĕр хамăр малаллах кайăпăр, тенĕ. Тăман ђарăнсан, вара караван малалла тапранса кайнă. Анђах йур хĕвелпе пит йăлтăртатса тăнă пирки, пурин те куçĕсем ыратма пуçланă; çыннисем анђах мар, выљăхĕсем те аптăраса çитнĕ. Вара тĕвесенĕн куçĕсене ђей шывĕпе тата хура тăхлан (свинец) шывĕпе çунă. Çынсем те çав амаљсемпех усă курнă. Кăвак куçлăхран питех усси пулман Касаксем тата хăйсен куçĕсене тутăрсемпе çыхнă. Çав çул-пуçĕ, кăшт кайсанах, çулне çĕтернĕ те, ăна вара килне йанă.

Пршеваљски Тан-ла йатлă çӳлĕ тусем урлă каççан, çакăнта ăна килçуртсăр пурăнакан типетсем хупăрланă. Çав типетсем малтан çу сутан пек пулса, караван патне пынă та, калаçма пуçланă, унтан сасартăк, асăрхаман хушăра, сăннисене, хĕçĕсене туртса кăларнă та, тапратнă çӳревçĕсене çĕмĕрме. Алă вĕççĕн кусене çĕнтерес çуккине курнă та, типетсем ту çинелле тарнă, вара унта пăшал хăйĕвĕсене ђĕртсе йанă, тата хăйсем ђĕнрен тунă ђăлтăркисем çине (прашђасем çине) хурса, ђулпа пит вирлĕ пере пуçланă. Пăшал пени илтĕнсен, темиçе пуљккă шăхăрса иртсе кайсан, Пршеваљски те касаксене вăрçă тапратма хушнă. Тăват вăрă-хурах çавăнта вилсе выртнă, тата аманнисем темиçе те пулнă. Ыттисем хăранипе тарма тытăннă. Çĕр каçах таврари тусем çинђе тискер сасăсем илтĕннĕ: типетсем хăйсене хур тăвакансене хирĕç тавăрма хатĕрленнĕ. Тепĕр кунне ирхине ђăнах та каравана утлă типетсем йĕритаврах хупăрласа илнĕ, вĕсем мĕн пурĕ 70 çын патнеллех пулнă. Çав вăрçăра Пршеваљски Типет çыннисене çĕнтернĕ.

Тан-ла çинђен ансан, каравана тĕл пулнă Ђайтамри виçĕ монкол. Çав çынсем ак мĕнле хыпар çитернĕ: типетсенĕн тĕп хулинђе, Лхассăра, вырăссем талай-лама (патшана) вăрлама килеççĕ тенĕ сăмах сарăлнă. Çавăнти халăх çав сăмаха ĕненнĕ те, каланă: малтан

пире вырăссем пурсăмăра та вĕлерсе пĕтерђђĕр те, вара хулана кĕресси мĕн пулĕ унта, тенĕ. Унђђен те пулман, Типет ĕçлĕ çыннисем канвуйсемпе Пршеваљски патне кĕçех çитнĕ. Çав ĕçлĕ çынсем каланă: сире Типетри пуçлăхсем малалла йама хушмарĕç, тенĕ. Пршеваљски вара вĕсене хăйĕн Киттай пилетне кăтартнă та, малалла çул пама ыйтнă, ĕçлĕ çынсем каравана ђарăнса тăма хушнă та, хăйсен Лхасса çын ђуптарнă. Çавăнтан хыпар икĕ ернесĕр кайалла килме пултарайман. Каравана çакăнта ђарса тăратни пит йуранă, мĕншĕн тесен, çынсем те, выљăхсем те пит ывăнса çитнĕ пулнă. Пршеваљски вара çав таврара куçса çӳрекен кил-çуртсăр Типет халăхĕ йепле пурăннине лайăх курса пĕлсе çитнĕ.



5-мĕш ӳкерђ. Путек-кайăкĕсем.

Вĕсем йак çăмĕнђен тĕртсе тунă шурă хура ђатăрсенђе пурăннă; ђатăрĕ тӳпинђе сутă кĕмелĕх, тĕтĕм тухмалăх тĕнĕ пулнă. Тĕнĕ тĕлĕнђе çĕрте, вуђахра, пĕр майах вут (аркал) çунса тăнă; çĕр-урайне вуђаххи тавра выртма-ларма така тирĕсене сарса хунă. Ђатăрĕнђех каткисенђе йак сĕђĕсем йуçсе ларнă. Йаксем—вĕсемшĕн пит усăллă выљăхсем, мĕншĕн тесен, вĕсем сĕт те, çăм та параççĕ. Çав выљăхсем пăр çинђен те пит аван çӳреççĕ, ытла шуçлак (йака) çĕрте вĕсем тăрмалапа (куђккипе) кайнă пекех ђĕрнисемпе шуçаççĕ. Типет çыннисем сĕтрен пуçне тата така какайĕ çийеççĕ; какайне

вĕсем ђас ђасах пĕçермесĕрех çийеççĕ; çинĕ ђухне, кил хуçи ыттисене ашне, каса каса илсе, йытăсене пăрахса панă пек, пăрахса парат.

Тĕнĕ вĕсен Пут тĕнĕ; вĕсем пит турă шутлă: çӳренĕ ђухне те пĕр майах кĕлĕсем калаççĕ, сулахай аллинђе пурак пек çавракa йапала çĕклесе çавăрсах çӳреççĕ, унăн ăшĕнђе кĕлĕ çырнă хут татăксем пур. Кашнийех мăйĕсенђен пĕђĕк арђа пекки çакса çӳреççĕ, ун ăшне туррисен кĕлеткисене, тата темĕн тĕрлĕ акăш-макăшсем тултарнă. Çынна хăналантарма вĕсем йуратман, шутсăр укçашăн пулнă, тата пит суйеçтерме йуратнă. Çавăнпа Монколсем вĕсем çинђен ак çапла каланă: вĕсен ђунĕсем хăрăм пек, тенĕ. Монколсем калани ђăнах та вырăнлă пекех пулнă.

Вилесене вĕсем нихăçан та пытарман, йаланах путек-кайăкĕсене, (ягнятниксене), тата хуркайăкĕсене кăлара кăлара пăрахса панă. Çав кăйăксем типетсем, çапла вĕрентнĕ пирки, пĕр майах Пршеваљски караванĕ патне хăйсен шутсăр пысăк çунађĕсемпе вĕçе вĕçе пынă, вĕсенĕн çунађĕсем, сарса йарсан, 9 фута йахăн пулнă.



24-мĕш ӳкеђ. Пршеваљски памăтникĕ.

Талай-лам йанă çынсем вунултă кунтан çитнĕ те: вырăссене малалла йамалла мар, тенĕ. Иртсе кайсан кайран Пршеваљски ак çапла сăмах илтнĕ: вырăссем Лхасса ан килсе кĕђђĕр тесе, унта кĕлĕсем тунă тет, тата ламсем пĕр кĕлĕ-çуртĕнђе, йытă пуçĕсене çура çура, ђĕлхе вĕрсе хăтланнă, тет.

Кайалла тавăрăннă ђух, Пршеваљски Кукку-Нор кӳллине, тата Сарă шыв пуçламĕшне лайăх пăхса пĕлсе тухнă та, вĕсене план çине паллă тунă; унтан вара Копи урлă Раççейе тавăрăннă. Пршеваљски çапла 2 çул çӳренĕ, çав вăхăтра вăл Вăта Аçи çĕрне тата кайса çӳренĕ. Ђи йулашкинђен, 5-мĕш хутĕнђе, вăл Ыссык-Кӳлĕ хĕрринђе ђирленĕ те, пĕр хулара вилнĕ; çав хулана кайран ăна асăнмалăх Пршеваљски тесе йат хунă.

Çак Пршеваљски кана пĕлмесĕр сăнаса çӳренипе Аçи варринђи çут çанталăка та етемсем пĕлсе çитнĕ. Анђах унта мĕн пурри-

çуккисене унти çĕршывсене пурне те халиђђенех тĕрĕслесе тухайман. Пуринђен ытла ку ĕçе вырăссемпе акăђђансем пикенсе тăваççĕ.

## Миклухха-Маклай.

Миклухха-Маклай Новкăрăт кĕпĕрнинђе çуралнă. Ун ашшĕ хаххул йăхĕнђен пулнă. Вунă çула çитиђђен вăл йалта пурăннă. Вăл унта йалти ађасемпе пĕрле вăрманта çÿреме, шыва кĕме йуратнă; тата вăл выртмара вут хĕрринђе ларма пит йуратнă. Вĕренессе вăл Питĕрте, иккĕмĕш кимнаçире, унтан универççиттетре, кайран тата йут патшалăхри аслă шкулсенђе вĕреннĕ.

1871-мĕш çулта, 23 çула çитсен, Миклухха-Маклай Çĕнĕ Квиней йатлă çĕр çине кайса курма шухăш тытнă. Унђђен Çĕнĕ Квиней çинђен никам та пĕлмен. Вăл: унта кайса, тиккисем хушшинђе пурăнса, вĕсенĕн пурăнăçне пĕлес, тенĕ.

Шывпа çав тери инçе кайма вăй çитмен пирки, вăл Кеокрафи йышĕнђен пулăшу ыйтнă. Лешĕ ăна пăртак укçа панă та, Аслă оккеан çинђе çÿрекен „Витязь“ (Паттăр) йатлă карап çине вырăнаçтарнă. 1871-мĕш çулта, çу уйăхĕнђе, çак карап Аслă оккеан çине тухнă. Вăл 4 уйăх çур-çĕрпе хĕвел-анăç хушшинђе ишсе пынă. Хăш-хăш утăсем тĕлĕнђе вăл ђарăнкаланă. Кайсан кайсан, авăн уйăхĕн 8-мĕш кунĕнђе вĕсем айакранах Çĕнĕ Квинейĕн çÿлĕ ту тăррисем курăна пуçланă.

Миклухха-Маклай каланă тăрăх, карапĕ Астроđапи кукăрне кĕнĕ. Кунта халиђђен никам та Йевропран килсе курман. Çав кукăра кĕрсен, вĕсем çыран хĕрринђе сĕм-вăрман çитĕнсе ларнине курнă. Унта ниçта та етем пурăннă палли курăнман. Катара (айакра) çÿлĕ, шĕвĕр тăраллă тусем курăннă. Ту тăррисем пĕлĕтрен те çÿлте пулнă. Паттăр машшинисем ĕçлеме ђарăннă та, йакăр пăрахнă. Кăпиттан тĕкĕр витĕр пăхнă, вăл вăрмантан çара - пакартан, хура ÿтлĕ, кăтра çÿçлĕ çынсем тухнине курнă. Вĕсен пуçлăхĕ малтан пынă. Вăл пуçлăх пулни пуçĕ çинђи ерешлентернĕ капăр тĕксенђен паллă пулнă. Ун хыççăн улттăн йĕркипе коккос мăйăрĕсем йăтса пынă, тата икĕ тикки икĕ пĕђĕк хĕрлĕ йытă çавăтса пынă. Лейттенант кулса каланă: кусем пире парне парасшăн пулмалла. Вĕсем нихçан та карап курман пулĕ - çке, тенĕ,—Пăхăр - ха, пăхăр! тесе кăшкăрса йанă Маклай: вĕсем мăйăрĕсене çĕре хуђĕç, йыттисене пусаççĕ! тенĕ. Паллах тиккисем „Паттăра“ Турă вырăнне хунă та, ăна парне парса çырлахтарасшăн пулнă. Анђах çавăнта сасартăк кĕтмен йапала пулнă тăнă. „Паттăрăн“ машшина пăхаканĕ çыран хĕрринђе мĕн пулнине курман та, карап клаппăнне уçса йанă, вара вăйлă сасă йанăраса тухса кайнă, карапăн хура трупине пăс

хупласа илнӗ. Паппуассем хӑраса, аллисемпе сулкаласа, хӑлхисене хупласа, вӑрмана тарса кӗнӗ, ҫыран хӗррине коккос мӑйӑрӗсем, пусса пӑрахнӑ йытӑсем анҕах выртса йулнӑ. Миклухха - Маклай хӑйӗн икӗ тарҫипе кимӗ ҫине ларнӑ та, ҫыран патнелле ишсе кайнӑ. Тарҫисем пӗри швет ҫынни Уиљсоон, тепӗри Полинеҫи аҕи пулнӑ. Вӗсем унта тиккисен киммисене хӑйӑр ҫинҕе выртнине курнӑ. Вӑл вырӑнтан утма-ҫул вӑрманалла кӗрсе кайнӑ. Маклай ҫав ҫулпала пӗҕҕен пӑшалсӑрах шалалла кӗрсе кайнӑ. Пӑртак кайсан, коккос паљмисем хушшинҕе ларакан йал патне ҫитнӗ. Пӳрҕӗсем патӗнҕе ик-виҫ хуралҫӑ тӑнӑ, йалӗнҕе урӑх никам та пулман. Анҕах вӗсем те, Маклайа курсан, тарма тапратнӑ. Маклай вӗсене хӑваламан, вӑл аллисемпе кӑтарткаласа, сире тивес ҫук, тесе, пӗлтерме тӑрӑшнӑ. Пӗҕӗккӗн-пӗҕӗккӗнех тиккисем хӑйуланса ун ҫывӑхнерех пынӑ. Маклай вара вӗсене ҕалкар пир татӑксем, шӑрҫасем кӑтартма пуҫланӑ. Унтан ун ури патне икӗ сысна ҫыхса пырса хунӑ. Миклухха кулкаласа, пуҫне тайса, хӗпӗртенине пӗлтернӗ. Хӑй алисемпе кӑтарткаласа, вӑл хӑй кимми ҫине сыснисене леҫсе пама хушнӑ. Вӑл паппуассене астарса, карап ҫине илсе кайса, кӑтартасшӑн пулнӑ. Вӑл карапне кӑтартса, у н т а н хӑрамалла маррине пӗлтересшӗн пулнӑ, анҕах лесшем пырасшӑн пулман. Вара ултавпа тиккисен пӗр киммине пукҫирпа тытнӑ та, икӗ тиккине вӑйпа карап ҫине ҫӗклекелесе хӑпартнӑ. Малтан вӗсем шӑнтакан ҕир пек ҕӗтренӗ; унтан хӑйсене никам та нимӗн усал туманнине курнӑ та, аҕасем пек хӗпӗрте те пуҫланӑ. Пур йапала та вӗсене тӗлӗнтернӗ; нимрен ытла вӗсем, тӗрлӗ тимӗртен тунӑ йапаласене курсан, тӗлӗннӗ. Тата вӗсене пысӑк куҫ кӗски те кӑмӑла килӗшнӗ. Унта вӗсем хӑйсене курсан, нумайҕҕен каҫса кайса кулнӑ. Ҫавӑнтан кайран тиккисене килне йанӑ.



25-мӗш ӳкерҕ. Маклай ҫурҕӗ.

Виҫҫӗмӗш кунне 110 матрус Миклухха-Маклай ваљљи пӳрт тума ҫыран ҫине тухнӑ. Никам тӗкӗнмен вӑрманта матруссем пӗр

вырăна суйласа тасатнă та, пўрт туса лартнă. Пўртне пысăк пўлĕмлĕ тунă. Пўлĕмне икĕ пайа уйăрнă. Пĕр пайĕ Маклай вађђи, тепĕри икĕ тарçи вађђи пулнă. Пўрт çине пађмă çулçисемпе витнĕ. Йунашар пĕр кивĕ паппуас пўрђĕ пулнă, ăна кухнĕ тунă. Питех кирлĕ мар ытлашши йапалисене малалла вађђи пўрт айĕнђи нўхрепе тултарнă. Унпа йунашар тепĕр нўхреп пулнă, унта темиçе пăт тар тултарнă. Пўрт умне йăвăç сађĕ туса лартнă. Мађђи тăррине Раççей йалавне çакса йанă. Каппиттан Маклайа виçĕ кĕсменлĕ пысăк кимĕ панă. Ун çинђе кăшт ишсе çўреме те лайăх пулнă, тиккисенђен тармалла пулсан, вăрăм çула тухса кайма та йуранă.

Каппиттанĕ те, ухвитсерсем те, Кука тиккисем вĕлерсе çисе йанă пек, Маклайа та çапла тăвĕç тесе хăранă. Ухвитсерсем ăна çимĕçĕсенђен рис, ђей, сахăр, тата консервăсем парса хăварнă. Акă ĕнтĕ уйăрăлса йулмалли вăхăт çитсе тăнă: Миклухха-Маклай пуринпе те ђуп-туса тухнă та, кимми çине ларса çыран хĕррине кайнă, карапĕ вара пăс кăларса тинĕселле, тухса кайнă.

## Миклухха-Маклай паппуассем патĕнђе пурăнни.

Карап хускалса кайсассăн, паппуассем Маклайран шикленсе ăна тăшманăн кура пуçланă. Вĕсем кăшкăрса, аллисемпе тинĕс йенне кăтартса каланă: ăçтан килтĕн çавăнтах кай, тенĕ. Вăл йал патне пыра пуçласанах, хĕр-арăмсемпе ађасем шăри-шари кăшкăрса, тарса пытаннă; арçынсем аллисене вăрçă-хатĕрĕсем тытса, ăна çавăрса илсе, вăрçăри пек кăшкăрашнă. Темиçе хутђен ун пиђĕ çумĕнђенех çĕмĕрен те йанă, çăварне сăнă вĕçĕпе хайăрса уçнă. Çаксене пурне те Миклухха-Маклай ђăтса, лăпкăн ирттерсе йама тăрăшнă, аллине те хĕç-пăшал тытман. Йалсене кĕрсен, хăйне курса, сасартăк хăраса ан ўкђĕр тесе, патне çывхарсан, шăхлиђĕпе шăхăртнă. Çапла вара хĕр-арăмсемпе ађасем вăл пырассине пĕлсе, ђасрах тĕмесен айне пытаннă. Йерри-йерипе тиккисем Миклухха-Маклайа хăнăхма пуçланă; вăрçă хатĕрĕсем те аллисене сахал тытнă. Темиçе уйăх иртсессĕн, Миклухха-Маклай вĕсен ђĕлхине ђухласа çитнĕ. Унтан вара вăл хăйне сывлăшра çўрекен турă вырăнне хунине ăнласа илнĕ. Миклухха калаť: „Епĕ асăрха пуçларăм,—вĕсем калаçнă ђух, ђас-ђасах: каарăм-тамо, теççĕ. Каарăм вăл уйăх тени, тамо—çын тени пулаť. Епĕ малтан ку сăмахсем мĕне пĕлтернине ăнланаймастăмђђĕ, пурăна-киле вара пĕлсе çитрĕм: вĕсем мана уйăх çинђен аннă çын тенĕ мĕн,“ тет.

Тиккисем ăна çынсенђен уйăрса хисеплесессĕн те, çапах та темиçе хутђен вĕлерме тăнă. Пĕрре çапла вăл, пысăк пуху çуртне

пырса кĕрсен, хăй çинђен хытă тавлашнине илтнĕ. Тавлашсан-тавлашсан, вĕсенђен пĕри Миклуххаран: епир пĕлес тетпĕр, есĕ пирĕн пекех вилĕмлĕ-ши? тенĕ. Маклай темиçе минутђен нимĕн те калама пĕлмен. Унтан çтена çумĕнђе çакăнса тăракан сăнна курнă та, ăна илсе, тиккийе парса каланă: ак сăнаса пăх, тенĕ. Паппуас сăннипе сулса йанă, анђах çавăнтах унăн аллисем лаштах кайнă та, вăл сăннине вырăна çакса хунă. Вăл: есĕ вилĕмлĕ пулсан, хăна ху вĕлерме памăттăн, тенĕ. Маклай пĕр йалта хăйне вĕлерессшĕн тенине тата илтнĕ. Вăл çинђех çав йалăн пуçлăхĕ патне кайнă та, пĕр сăмахра пулнă çынсене пурне те пуçтарма хушнă. Лешсем пуçтарăнсассăн, Миклухха-Маклай вĕсене каланă: „Халĕ епĕ çывăрма кайатăп, есир мана вĕлерес тетĕр пулсан, вăл ĕçе хăвăртрах, епĕ çывăрнă ђухнех, ăйхăран вăранса вăй кĕриђђен, тума тăрăшăр,“ тенĕ. Çакăн хыççăн Маклай ђăнах та ђасах выртса çывăрса кайнă. Пĕр сăмахра пулнă çынсем, ăна вĕлерме, аллине çĕклеймен.

Çав хутлăхра Миклухха-Маклай паппуассен пурăнăçне, вĕсен йăлисене сăнаса пĕлсе çитнĕ. Вăл халăхсен пурăнăçĕ йалт ђи малтанхи етем пурăнăçĕ пекех пулнă. Вĕсем тимĕр-тăмăр таврашне пĕлмен. Мĕн пур ĕç таврашĕсене ђулран, шăмăран, йăвăçран тунă. Вут тупас йĕркине пĕлмен пирки, йаланах вут çунтарнă. Çĕр ĕçлес пулсан, вĕсен арçыннисем темиçен йĕркипе тăрса, вĕçлĕ патакпа çĕре алтнă. Вĕсем хыççăн хĕр-арăмсем пысăк çĕр муклашкисене кĕреçепе çĕмĕрсе пынă. Хĕр-арăмсем хыççăн ађа-пăђасем йерипе шуса çара аллисемпех çĕре ватса пынă.

Миклухха-Маклай хăй мĕн сăнанисене, курнисене пурне те, хăйĕн Кун Кĕнеки çине çырса пынă. Унтан пуçне тата вăл йапаласен коллексисене пуçтарнă. Анђах ăна йаланах çапла ĕçлеме килсенех йернĕ сивĕ-ђир кансĕрленĕ. Унăн тарçисем те çав ђирпех ђирленĕ, вăл вĕсене те хăйех пăхнă. Çамрăк полинеçи çынни емел ĕçмен пирки вилнĕ.

1872-мĕш çул иртсе пынă ђухне, пирĕн çӳревçĕсенĕн пурăнăçĕ пит кансĕрленсе çитнĕ. Маклайăн тарçи, швет çынни, ђирлĕ выртнă хушăрах, хин те, çими те пĕтнĕ. Çавăнпа вĕсен тиккисем çининех çимелле пулнă. Малтанласа Маклай ухутана кайса, хирсыснисем те тыткаланă, анђах халĕ курăк пĕтсе килнĕ. Ура-тăхăнăвĕ çĕтĕлнипе унăн урисем суранланса кайса тӳрленми пулнă. Шăрпăк ђĕрĕлнĕ пирки вăл хăйĕн пӳрђĕ çумĕнђе йаланах вут тытнă, çурђĕн тăрри çĕрсе, çумăр кайа пуçланă. Йуписем кăткăсем кăшланипе йăвана пуçланă. Çапла нимĕн тума май пулман пирки, вăл паппуассенђен сăрт çине хăй вађђи çĕнĕ çурт туса пама ыйтнă.

1872-мĕш çулта, раштав уйăхĕн 19-мĕш кунĕнђе ирхине Миклухха хăйĕн çĕнĕ çурђĕ çинђен калаçма тесе йала кайнă. Ăна хирĕç паппуассем ђупнă. Вĕсем тинĕсрен пĕр çĕрте тĕтĕм тухаť! тесе кăшкăрнă. Ђăнах та çанталăк хĕрринђе инçетре тĕтĕм çавăрăнса тухнă, ун хыççăн карап та курăннă. Кăнтăрла иртсен, тинĕс кукăрне, пухта, вырăс çар-карапĕ Исумрут кĕнĕ. Миклухха Маклайĕ ваљђи ăна йури йанă. Вăл васкаса, хăйĕн коллексийĕсене, çырăвĕсене пуçтарнă та, карап çине куçнă.

Кайађђен вăл икĕ кун, икĕ каç кӳршĕ йалĕсене çӳренĕ. Унти çынсем ăна факкĕлсемпе илсе çӳренĕ. Тиккисем ăна хăйсем патĕнђен йарасшăн пулман: ан кай, тенĕ. Йулсан, ун ваљђи кашни йала çĕнĕ çурт туса пама пулнă.

Миклухха Исумрут çине ларнă та, Йавă çине сивĕ-ђирĕнђен сывалма кайнă. Кайран вăл темиçе хутђен Сон утравĕ тăрăх, Интокиттай тăрăх, Полинеçи утравĕсем тăрăх çӳренĕ. Темиçе хут Çĕнĕ-Квинейе те пынă. Унти пĕлекен тиккисем, ăна хавас туса йаланах хирĕç тухса илнĕ.

Пĕр май сивĕ-ђирпе аптăранăран унăн сывлăхĕ пĕте пуçланă 1886-мĕш çулта вăл Питĕре пынă. Хăй мĕн курса илтнине каласа пĕтерейменсĕрех вăл унта вилнĕ. Унăн мĕн курнине çырнă кĕнекисене халĕ те çапман, вĕсем Кеокрахви Йышĕн аллинђе. Вĕсене лайăхрах уйăрса та илеймен-ха. Унăн паха, хаклă коллексийĕсене Пĕлĕмлĕхсен Аккатемийĕнђи Етнокрафи Муçейĕнђе курма пулаť. Вăл пурăннă Квиней çыранне унăн йађĕпе Миклухха çыранĕ теççĕ.

## Нанссĕн.

Фриттиоф Нанссĕн вăл Норвеки çынни. Вăл Норвеки пуçхули Христианирен инçех мар, Скантинави тăвĕ айĕнђе, 1861-мĕш çулта çуралнă. Вăл ту çинђен йухса анакан пĕђĕк шыв тăвĕ хĕрринђе, вăрман варринђе, пĕр пĕђĕк именире ӳснĕ. Çав шывра ишсе çӳреме, ту çинђен йĕлтĕрпе йарăнма вăл питĕ йуратнă. Реаљни шкулран вĕренсе тухсан, вăл универçиттете кĕнĕ. Унтан вĕренсе тухсан, вăл çурçĕрти пољус патĕнђи çĕрсене пĕтĕмпех пĕлесшĕн пулнă.

Нанссĕн 1885-мĕш çулта Кренлантийе витĕр тухма шухăшланă. Ĕлĕк çавăн пек Кренланти витĕр икĕ çын тухасшăн пулнă: пĕри швет çынни Нортейншшељт пулнă, теприАмерĕк çынни Пири пулнă. Анђах вĕсем пĕри те тухайман. Нанссĕн Кренланти витĕр йĕлтĕрпе кайас тенĕ. Вăл унта малйенђи, çын пурăнман çĕртен, пăр купаланса тăракан вырăнтан пырса кĕнĕ. Нанссĕн хăйпе пĕрле пилĕк çын илнĕ: вĕсенђен виççĕшĕ Норвеки çыннисем пулнă, иккĕшĕ

лоппарсем пулнă. Вĕсем пăрлă тинĕсе тӳленсем тытма кайакан карап çине ларнă. Çав карап Кренланти çывăхне çитнĕ те, анђах сыран çине тухма май пулман. Тинĕсре пăр пит нумай пулнă, вăл пăрлă уй пек темиçе мил тăсăлса йухса пынă. Пăр татăкĕсем çинђе тӳленсем йухса пынă; тинĕс кайăкçисем çав тӳленсене тытасшăн çӳренĕ. Пĕр уйăх иртнĕ, пăр çаплах вĕçĕ-хĕрри çук йухнă; кӳсменпе ĕçлесе, пит хытă йухăмпа кĕрешмелле пулнă; тата пăрсем пырса çапăнасран, вĕсем пуртăпа, йе пакурпа ĕçленĕ. Темиçе хутђен пысăк пăр тăвĕсем çула пӳлсе тăнă. Пĕр тăвè катмар çуртпа пĕрех пулнă: унăн тăрринђе пашнĕ пулнă, айĕккинђе хуракăвакăн курăнакан шăтăк пулнă; вăл шăтăка хумсем çапа-çапа шăтарнă. Тепри лаптак тăрлă пулнă. Нанссĕн ун çине улăхса пăхнă, çав ту çӳллĕшĕ тинĕсри шывран 33 ђалăш çӳлте пулнă. Çакăн пек пăрсем çыран хĕррипе темиçе вуншарăн та, çĕршерĕн те йуха-йуха пынă. Вĕсем хушшинђен туха-туха кайма хăрушă пулнă та, тата ытла та йăвăр пулнă; мĕншĕн тесен, Нанссĕнсем пынă çĕртех пăр куписем ишĕлеишĕле аннă, йе ту пек пысăк пăрсем салана-салана кайнă, йе тата ђипер пыракан пăрсемех савăрăна-савăрăна кайнă,



23-мĕш ӳкерђ. Нанссĕн.

вара унта тинĕс вĕресе кăпăкланса анђах тăнă. Çӳресен-çӳресен хайхи Нанссĕн хăй тухас тенĕ çĕре, пĕр фиорт патне çитнĕ. Ун тăрăх темĕн ђухлĕ пăр тинĕселле кайнă. Киммисене вĕсем çĕр çине кăларнă та, ђул айне купаласа хăварнă. Унтан мĕн пур йапаласене 5 çуна çине тийесе те, турттарса кайнă. Пăрлă çĕр çуркаланђăк пулнă, тата пит ђăнкă ту пулса, çӳлелле тăсăлса кайнă. Нанссĕнсем аран-

аран мěн пур вăйпа çунисене вěренрен туртса пынă. Кайран Нансěн çавăн ђухнехине асăнса калаť: пěтěм кěлеткем çěмěрěлђě, хулсем ыратнипе вут пек çунђěç, тет. Оккеан шывěнђен çӳлерех пěр-ик çухрăм улăхсассăн, çул сěвекленерех панă, унтан вěсене йурлă-пăрлă тӳрем çěр курăнса кайнă. Çавăнта унта-кунта ту тăрринђе хура ђулсем анђах курăнкаласа тăнă, вěсене нунаттак, теççě.

Анђах çак çěрěн тěсěсем те ђасах çухаљђěç, йěри тавра пăрпа йур анђах пулнă, вăл куçпа та пăхмалла мар йăлтăртатса тăнă. Пурте тěттěм куçлăх тăхăнса, вуаљпе пěркенсе пынă. Хěвел ђылай хытă хěртнě, çийелти йур ирěлнипе шěлкěшленнě; анђах, хěвел ансанах, шăнта пуçланă та, сивě пěр 30—40 крата йахăн пулнă. Çěрле вара Нансěнсем хӳшě карса, пăлан тирěнђен тунă çывăрмалли михěсем ăшне кěрсе выртнă. Анђах михе ăшěнђе те



27-мěш ӳкерђ. Нанссěн вěсене уйăх çуттипе курнă.

пит сивě пулнă, вěсенěн пуçěсем ир йенне пасара-пасара кайнă. Авăн уйăхěн 5-мěш кунěнђе вěсем лаптак тăвăн ђăн çӳлě тӳпинђен каçса кайнă. Унăн çӳлěшě 8,900 фут пулнă. Вěсем тата икě ерне пăрлăх тăрăх çӳренě, унтан вара çěр хěвел-анăç йенелле сěвеклене пуçланă. Вěсен телейне кура çула май вăйлă çил тухнă. Вара Нанссěн пре-çентрен парăс тунă та, çуни çине карса йарнă. Çапла вěсем парăспа çěрěн-кунěн йарăнса кайнă. Анђах кайсан-кайсан, вěсем ђутах пěтмен: вěсем пынă çěрте пěр тěлте пăр çуркаланса пěтнě, çурăксен тарăнăшě 50 ђалăшран ытла пулнă. Нанссěн вěсене уйăх çуттипе курнă та, хăйěн йулташěсене ђасрах систернě.

Ансăр çурăксем урлă вěсем йěлтěрпе ђипер каçа-каçа кайнă; унта кěрсе ӳксен те, йěлтěр патаккисене çурăк урлă хурса, шăтăка

анса кайасран хӑтӑлса йулнӑ. Авӑн уйӑхӗн 24-мӗш кунӗнђе тин вӗсем, хӗвел анӑç йенђи тинӗс хӗррине çитсе тӑнӑ. Çапла вӗсем 450 çухрӑм тунӑ Тевис тийекен тинӗс пырӑнђе Нанссӗн Йевропа кайакан йулашки пӑрахут çине ларасшӑн пулнӑ та, анђах пӑрахуђӗ вӗсем çитиђђен тухса кайнӑ. Вара вӗсенӗн çав хӗле ескимоссем пурӑнакан йалта пурӑнса иртермелле пулнӑ.



27-мӗш ӳкеђ. Пӑрсем çине кӗнӗ.

Нанссӗн Кренлантирен тавӑрӑнсан, çурçӗрти пољус патне кайса çӳреме шухӑш тытнӑ. Вара вӑл пӑр çӗмӗрейми тӗреклӗ карап тӑвас та, çав карап çине ларса, Аçи хӗррипе Çӗнӗ Çӗпӗр утравӗсем патӗнђен ишсе кайас тенӗ; унтан çурçӗр йенелле тухса, пӑрваррине кӳртсе шӑнтса лартас та, шыв йухӑмӗпе малалла кайас тенӗ. Унӑн шухӑшӗпе çак тинӗс йухӑмӗ ӑна пољус урлӑ, йе ун çывӑхӗнђен каçарса кайса, Кренланти патне илсе тухмалла пулнӑ. Нанссӗн хӑйӗн карапне **Фрам** йатлӑ хунӑ, Фрам тени **Малалла** тени пулаť. Карапне вӑл йуманран тутарнӑ, тата сӑмсине, хӳрине, пӑр ан çӗмӗртӗр тесе, хӗстерсен те, çӳлелле çӗклентӗр тесе, вӑл хурçӑпа çаптарнӑ. Пољус патне кайас текен нумай пулнӑ, анђах Нанссӗн вӗсенђен вуниккӗшне кӑна суйласа илнӗ. Çветрупа



27-мӗш ӳкерђ. Нанссӗн йыттисем.

кăппитан тунă, вăл шывçинҫе çӳрекелесе курнăскер п у л нă, тата Кренланти витĕр тухнă ҫухнехи шанҫăклă йулташĕ пулнă. Йохансcĕне вут хуракан кăҫакар тунă, вăл Норвекире ҫăн ăста кимнаст пулнă.

1893-мĕш çулта, Нанссĕн çула Норвеки çĕрне пăрахса тухнă та, Кар тинĕсĕ йенелле кайнă. Çав тинĕсре вăл пĕр çыранта ҫаръннă та, кӳлсе çӳрекен Çипир йыттисене туйаннă, вăл йытăсене ун патне Оп йатлă шыв патĕнҫен илсе пынă. Пĕр уйăхран вăл Ҫелӳскин йатлă çĕр сăмси патне çитсе тăнă, унтан тинĕсе тухнă та, пăрсем çине кĕнĕ. Çавăнта вăл пĕр пысăк пăр çумне пырса ҫаръннă та, ăна йери-таврах пăрсем çавăрса илнĕ. Çакăнтан пуçласа вара Фрам пăрсем шунă майĕпе анҫах шунă. Карап хӳри ванса ан ӳктĕр, тесе ăна илсе хунă; ăшĕнҫи машшини ан тутăхтăр тесе, ăна та пуçтарса хунă. Пăрсемпе пĕрле карап тинĕс тăрăх унталла та кунталла шуса çӳренĕ. Йулашкинҫен 1895-мĕш çулта çуркунне Нанссĕн хăйĕн карапĕ поҫус патĕнҫен иртсе пыине пĕлнĕ. Çавăнпа вăл карап çинҫен аннă та, 25 йытă кӳлсе Йоханссĕнпе пĕрле çур-çĕрелле кайнă. Вĕсем пĕр çĕр кунлăх апат илнĕ. Вĕсен пăр урлă каймалла пулнă, çул çинҫе тороссем тĕл пулкаланă, çулĕ питĕ хĕн пулнă. Йыттисем аран-



28-мĕш ӳкрҫ. Пăрлă тинĕс хĕрренҫии кайăксм.

аран пынă. Çунисене пĕр майах пăр куписем урлă сĕтĕре-сĕтĕре каçармалла пулнă. Пилĕк ерне хушши Нанссĕн пĕр майах çурçĕрелле кайнă; анҫах çавăнта йытăсем пĕтĕмпех ывăнса çитнĕ. Поҫус патне çитесси тепĕр 400 çухрăм йулнă. Çак тĕрлĕ хĕн çулпа унта çитсе курасси çинҫен шухăшлама та май килмен. Нанссĕн вара кайалла таврăннă.

Çав вăхăтра Фрам поҫусран айакрах пулман пулсан та, Нанссĕн йепле çӳренине пĕлмен. Çавăнпа вăл Франс Иоççиф çĕрĕ патнелле кайнă. Унта çитес пулсан, Пăрлă оккеан тăрăх пĕр 500 çухрăм каймалла пулнă.

Çак çул çинче Нанссĕн асапне те, хăрамаллине те курса пĕтнĕ. Çапла пĕрре вĕсене шурă упа тĕл пулнă та, Йоханссĕне чутах çыртса çурман. Вăл Йоханссĕне сылтăм хăлхинчен çапса ӳкернĕ те, хăй айне тĕркелеçе чикнĕ; унтан йытăсене курнă та, вĕсем патнелле кайнă, Йоханссĕне пăрахса хăварнă. Çав вăхăтра Нанссĕн кайакран пăшал туртса кăларнă та, упана персе вĕлернĕ.




20-мĕш ӳкерч. Çӳревçĕсен çурçĕрти çулĕсем.

Кайсан-кайсан, вĕсем йухăм пăрсем хĕррине çитсе перĕннĕ. Таса тинĕсе курсан, пит хĕпĕртенĕ. Çавăнтах кимĕсене салтнă та, çунисене унта тийесе, парăс туртса карнă, вара Франс Иоççиф çĕрĕ патне часах ишсе çитнĕ. Унта вĕсем пĕр тинĕс утравĕ çине тухнă,

вара пăрсăр вырăн тупса, хĕл каçма ÿпле туса лартнă. Ÿплен çтенисене ђулран купаласа тунă, тăррине моршă тирĕсемпе витнĕ. Ђас ђасах çав утравăн çыранĕсем патне тискер моршăсем ишсе пырса, хăйсен виђкĕн шăлĕсемпе пăрсенђен çакланса, çынсем çине пăхса выртнă, йе пăр çине тухса выртса çывăрнă. Çак çÿревçĕсем хăш-хăш ђухне пăрсем çине тухса, моршăсене пăшалпа пере-пере тытнă. Пăшал тивсен, вĕсем пит хытă мĕкĕрсе, шыва ђăмса, çынсем тăракан тĕлти пăра пуçĕсемпе çапса çĕмĕрме хăтланнă. Моршăсене тытни çÿревçĕсене нумай усă кÿнĕ: моршă çăвне çунтарса, вĕсем ÿплине ăшăтнă, тата вăл çутма та аван пулнă. Çийессине вĕсем шурă упа какайне çинĕ. Упасем унта моршă какайĕпе моршă çуне сиссе нумай



30-мĕш ÿкерђ. Упа Йохансс̆ене çапса ÿкернĕ.

пынă. Çапла вара полђус çывăхĕнђе виççĕмĕш çĕре Нанссĕнпе Йохансс̆ен никам пурăнман утрав çинђе хăйсен аллипе тунă ÿплере ирттернĕ.

Çак çĕре каçасси вĕсене шутсăр киђемĕн, вăрăмăн туйăннă. Çак çĕре вĕсем puринђен ытла хăйсен ђулран тунă вырăнĕ çинђе çывăрмалли михĕ ăшĕнђе ирттернĕ. Ÿплерен вĕсем çанталăк мĕнлине пăхма, тата ĕçес килсен пăр илме, çийес килсен какай илме, тата çутмалли çу илме анђах тухкаланă. Çак хĕл хушшинђе вĕсене полђус тиллисем питĕ аптăратнă. Нанссĕн хăй çак тилĕсем çинђен ак мĕн калаť: Вĕсем пирĕнне мĕн ленкнине пĕтĕмпех сĕтĕрђĕç; хурçă пралуксене, карппунсене, пуçтарса хунă тĕрлĕ ђулсене, мăксене, çип çăмхисене, термометрсене, тата ытти йапаласене те, тет. Çапла хĕл ирткеленĕ.

1896-мĕш çулта, çу уйăхĕнђе, çÿревçĕсем вăл вырăнтан малалла тапранса кайнă. Малтан вĕсем пăрсем тăрăх çунисене сĕтĕрсе пынă,

унтан кимĕсемпе шыв тăрăх кайнă. Тинĕсре унта темĕн ђухлĕ моршăсем йăшăлтатса çÿренĕ. Пĕр майах вĕсем çак çÿревçĕсем хыççăн хăваласа пынă. Пĕрре Нанссĕн ларса пыракан кимĕ тĕпне шăтарнă. Çĕртме уйăхин пуçламĕшĕнђе Нанссĕнпе Йоханссĕн Франтс Иоççиф çĕрĕнђи кăнтăрти утравĕ патне çитсе ђараннă. Пĕрре вĕсем, ирхи апат валли моршă какайне пĕçернĕ ђух, сасартăк йытă вĕрнĕ сасса илтнĕ. Нанссĕн йĕлтĕр тăхăннă та, тĕкĕр илсе, шырама кайнă. Нумай та кайман,



31-мĕш ÿкерђ. Сивĕш шевли.

вăл йытă йĕррисем тупнă, унтан çынсене курнă. Çав вырăнта акăљђансен експетитсийе тухнă çыннисем Ђексон йатлă пуçлăхĕпе пĕрле пурăннă мĕн. Нанссĕн вара вĕсемпе пĕрле килне таврăннă. Тепĕр ерне иртсен, Фрам та çитнĕ. Фрама пăрсем Шпитсперкĕн патне пырса лартнă. Ăна пăр варринђен пăрне тарпа çĕмĕрсе кăларнă.

## Пири. Кук. Рос.

Çак Нанссĕн çитсе курасшăн пулнă çурçĕрти пољус патне Америк çынни Пири çитнĕ. Çакă кана пĕлмен çын хăйĕн ĕмĕрĕнђе виçĕ çул çурçĕрти пăрлă уйсене курса пĕлес тесе çÿренĕ. 1908-мĕш çулта, çула вăл караппа Кренлантин çурçĕр йенђи вĕçне çитсе тăнă; унта вара çуркунне пуçламăшĕнђех, пăр çирĕп ђухне, вăл 1 некĕрпе, тата 5 ескимоспа пĕрле йытăсем кÿлсе ларнă та, пољус патне çитнĕ.

Кăнтăрти поԓус çавраки урлă ԓăн малтан каçса кайаканни тинĕс çинԓе çӳрекен акăԓԓан çынни Кук пулнă. Тĕнԓе тавра иккĕмĕш хут кайнă ԓухне вăл Кăнтăрти Поԓус патĕнԓи Çĕре шыранă, анԓах тупайман. Темиçе хутԓен вăл кăнтăралла инçерех кайма тăрăшнă, анԓах вĕçĕ-хĕррисĕр пăрсене, хайар сивĕсене, тĕтресене курсан, вăл йалан кайалла пăрахса тавăрăннă, çапла вăл шухăшланă: кăнтăрти поԓус çĕрĕ пулсан та, ăна пăрсем хупласа тăнă пирки, унта кайма пулас çук пулĕ, тенĕ. Ун çинԓен Кук çапла каласа çырнă: епĕ хăйса калатăп: пĕр çын та манран инçе кайма шухăшлас çук; çапла ĕнтĕ епĕ çитнĕ вырăнтан кăнтăрта пĕр-пĕр çĕр выртаť пулсан та, ăна нихăçан та кайса курса пĕлес çук, тетĕп, тенĕ.



33-мĕш ӳкерԓ. Йурпа пăрпа хупланса ларнă вулккана курнă.

Кук çапла каласа хурсан, кайран нумайԓԓен никам та кăнтăрти поԓус çĕрĕсене кайса курасшăн пулман. 50 çул иртсен тин, 1-мĕш Александăр хушнă тăрăх, унта вырăс експетитсийĕ кайнă. Вăл Кронштатран 1819-мĕш çулта икĕ карап çине ларса кайнă, пĕр карапĕ „Восток“, тепĕри „Мирный“ йатлă пулнă. Вĕсене май пур таран поԓус патнерех çитме хушса йанă.

Вырăс çыннисем кăнтăрти поԓус çавраки урлăултă хутԓен татса каçнă, нумай тĕлте вĕсем кăнтăра Кукран та шаларах кайнă. Кăнтăрти Америкрен инçех мар вĕсем йурпа пăр айне пулнă утрав тупнă, ăна 1-мĕш Петĕр утравĕ тенĕ.

Çавăнтан кайран, 20 çул иртсен, акăԓԓан çынни Росс Çĕне Çĕлантирен кăнтăрта йурпа, пăрпа витĕнсе выртакан çĕре курнă,

ăна Кăнтăрти Виктори тенĕ, пăрсем картласа тăнă пирки, унта пырса кĕме ниçтан та май пулман.

Çак çĕр хĕррипе кăнтăралла кайнă ђухне, Росс хăй умĕнђе тӳрех йурпа, пăрпа хупланса ларнă вулккана курнă, вăл ун ђухне лапах темĕн ђухлĕ тĕтĕмпе кĕл пĕрĕхтерсе тăнă. Йурпа пăр хушшинђе çавнашкаллине курасса никам та сунман. Çав вулккан çӳллĕшĕ 4 çухрăм пулнă, ăна хăйсен кимми йађĕпе Росс **Ерепус** тенĕ, йунашар тăракан тепĕр сӳнсе ларнă вулкканне тепĕр кимĕ йађĕпе **Террор** тенĕ. Çак вулккансем патĕнђен Россăн кайалла тавăрăнмалла пулнă, мĕншĕн тесен, вĕсен çулне пăрлă çтена картласа тăнă. Çав çтена тавра çавăрăнса кайас тесе, Росс ун çумĕпе кайнă, анђах темĕн ђухлĕ кайса та, унăн вĕçĕ пулман. Çтени çине çӳле хăпарма та нимĕнле май пулман; вăл тӳп-тӳрĕ, ђăнкă пулнă та, тата çӳллĕшĕ те унăн 25 ђалăшран пуçласа 50 ђалăша çитнĕ; мађтă тăррисем çав пăрлă çтена çуррине анђах çитнĕ.

## Амунтсĕн. Скотт.

1910-мĕш çулта кăнтăрти полђус патне икĕ експетитси кайнă: пĕри норвекисен, тепри—акăлђђансен. Норвекисен пуçлăхĕ Амунтсĕн пулнă, акăлђђансен—Скотт пулнă. Амунтсĕн унђђенех Пăрлă оккеанра çӳренипе ђапа тухнă. Ун ђухне вăл 6 çынпа пĕрле кит тытмалли кимĕ çине ларса, Паффин уринђен пуçласа, Перинк пырĕ патне çитиђђен витĕрех тухнă, кăнтăрти полђус патне вăл Нанссĕн тунă Фрам йатлă караппа ишсе кайнă. Малтан вăл карапа пăспа çӳрес вырăнне ăшăпа çӳремелле тунă, пăс машшинине илсе, ун вырăнне моттор лартнă.

1911-мĕш çулта, кăрлађ уйăхĕнђе,. Фрам йухса пыракан пăрсем хушшинђен ишсе пырса, Росс тинĕсне кĕнĕ те, унта Пăрлă Парйĕр патне çитсе ђарăннă. Çавăнта пăр çтена пек пулнă, унăн çӳллĕшĕ 15-20 ђалăша йахăн пулнă. Çав пăр çтена 1000 çухрăм ытла тăсăлса кайнă. Çав 1000 çухрăм хушшинђе вăл пĕр тĕлте—Кит тинĕс куккăрĕнђе анђах лутра пулнă. Çавăнта çитсен Амунтсĕн ђарăннă та, пăр çине тухнă.

Çавăнтан вăл йытăсем кӳлсе кăнтăралла темиçе хутђен çӳренĕ. Вăл виçĕ склат тунă; пĕрне 80-мĕш кратра, тепĕрине 81-мĕш кратра, тата тепĕрине 82-мĕш кратра. Çав склатсене аш-кĕрпи, пискворт, шокколат, хытнă сĕт, краççын, йытăсем валли тӳлен ашĕ, тата урăх йапаласем те тултарнă; тӳленĕсене Кит куккăрĕнђе тытнă.

Ака уйăхĕнђе полђус каçĕ пуçланса кайнă. Пĕр май йур çунă та, вĕсем йур айне пулса йулнă. Тула тухса çӳремешкĕн, вĕсем кĕрте алтса каллерейсем тунă. Вĕсем çанталăка пăхмашкăн анђах

тухкаланă. Авăн уйăхĕн, 13-мĕш кунĕнђе питĕ-питĕ сивĕ пулнă. Ђелçи кратăсĕ нуђрен 59 крат айалта кăтартса тăнă.

Çурла уйăхĕнђе 24-мĕш кунĕнђе тин хĕвел пăхса йанă. Авăн уйăхĕнђе вара Амунтсĕн çула кайма хатĕрлене пуçланă. Йупа уйăхăн 20-мĕш кунĕнђе вĕсем 5 йулташĕпе тăвата çунапа пођус патне тухса кайнă. Кашни 13-шер ескимос йытти кÿлсе йанă. Вĕсем çийелтен йурпа витĕнсе тăнă пăрлă çулпа тÿрех кăнтăралла кайнă.

Калла тавăррăннă ђухне аташас мар тесе, вĕсем кайнă ђухне çул çине майаксем туса хăварнă. Кашни майак çине нумăрсем, ата пĕр майакран тепĕр майак хушши миçе çухрăмне çырса хăварнă. Ак малта вĕсене тусем курăнса кайнă. Çав тусем çинђен пăрсем ишĕле-ишĕле аннă. Çав тусем тăрăх улăхса, вĕсем лаптак сăрт çине çитсе ђараннă. Унăн çÿллĕшĕ 3 çухрăм пулнă. Çав лаптак сăрт тăрăх кайса, çÿревçĕсем йулашкинђек кăнтăрти пођус патне çитнĕ те унта вĕсем Норвеки йалавне лартнă.




35-мĕш ÿкерђ. Пођуса кайнă çÿревçĕсен йађĕпе кăларнă митал.

Пођус йепле тăнине вĕсем хĕвел çÿренĕ тăрăх сăнанă. Çавăнта хĕвел тавлăкĕпех çÿлелле хăпармасăр, айалалла анмасăр пĕр çулпа çÿресе çавăрăннă, кăнтăрла тĕлĕнђе те, сурçĕр тĕлĕнђе те пĕр пек çÿренĕ. Хĕвел çÿренине сăнанă ђух йанăш пулма пÿлтарнă. Çавăнпа çÿревçĕсем лайăхрах сăнамашкăн пур йеннелле те 18-шар çухрăм айаккалла кайса çÿренĕ. Çанталăк ун ђухне пĕр майах ăшă, лăпкă тăнă. Теміператтур 19 крат нуђран айалта тăнă. Парометрпе вĕретмелли (кипятильник) лаптак сăрт çÿлĕшĕ оккеанри шывран 3070 метр çÿлĕрех пулнине кăтартса тăнă. Сывлăш сахал пулнă та, çÿревçĕсем кăкăр пÿлĕннипе аптăранă. Амунтсĕн калать: çапла! тесе каламашкăн, пирĕн малтан икĕ хутђен сывлăш çавăрмалађђĕ, тет.

Пођус патĕнђе ђатăр ăшне Амунтсĕн икĕ çыру хăварнă—пĕрне Норвеки королĕ VII-мĕш Хааккон валли, тепĕрине кăппиттан Скотт

валли. Унтан кайалла кайма тытăннă. Çул çинђе аташса кайасран, вĕсен пуринђен ытла пĕр пек пушă хирте склатсене тупмашкăн тăрăшмалла пулнă. Хĕвел куçа ан йăмăхтартăр тесе, вĕсем çĕрĕ-çĕрĕпе, хĕвел вĕсене кай йенђен пăхнă вăхăтра, утнă. Йуртан тунă майаксем вĕсене темрен паха пулнă: хĕвел çуттипе çавсем малта електритсă майакĕсем пек йăлтăртатса тăнă. Тăманлă ђухне, тата тĕтреллĕ ђухне, вĕсем темиçе хутђен çул çухаткаланă, вара, шырасан-шырасан, çав майаксем патне пынă. Çанталăк пĕр пек аван пулнă; çил кăнтăр йенђен çÿревçĕсем хыçĕнђен вĕрнĕ. Çавăнпа вĕсене йĕлтĕрпе малалла кайма çăмăл пулнă.

Кăрлађăн 25-мĕш кунĕнђе, 1912-мĕш çулта, вĕсем Кит тинĕс ури патĕнђи пÿрђĕсем патне пынă. Вĕсем çÿрени çапла 99 куна çитнĕ; вĕсем мĕн пурĕ 3000 çухрăма йахăн тунă. Йыттисем 11 анђах тавăрăннă; ыттисене пере-пере вĕлернĕ те, ашне йыттисене те панă, хăйсем те çинĕ. Çÿревçĕсем кайалла пурте сывă тавăрăннă, хăшин-хăшин анђах питçăмартисене тăм илкеленĕ. Тăм илни вĕсен Фрампа Кăнтăр йенђи Америке çитсен тин хăйпăна-хăйпăна ÿкнĕ.

Çав хушăра акăљђансен Скоттпа кайнă експетитсийĕ пит телейсĕр пĕтнĕ. Кăппиттан Скотт та кăнтăрти пољус патне, Амунтсĕн хыçĕнђен пĕр уйăхран, çитнĕ; анђах кайалла тавăрăннă ђухне, вăл çул çинђе пĕтнĕ.

Скотт хăйĕн Кун-Кĕнекийĕ çине вилес умĕн ак çапла çырса хăварнă: кайалла тавăрăннă ђух, пирĕн пĕр лайăх çанталăк та пулмарĕ. 88 крат сарлакăшĕнђе, 3000 метр çÿлĕшĕнђе, темпператтур лаптак сăрт çинђе кăнтăрла 30°, каçхине 47° пулђĕ. Çитменнине тата çул çинђе пĕр майах питĕ хирĕçле çил вĕрсе тăђĕ. Çапах та епир, çил-тăвăл склатран 11 милре ђарман пулсан, çитнĕ пулăттăмăр, çимелли те унта тупнă пулăттăмăр... Апат пирĕн тепĕр ик кунлăх анђах йулђĕ. Хайар çил-тăвăл тăвату кун ĕнтĕ пире ђатăртан тухма памасть. Епир аптăраса çитрĕмĕр, ĕнтĕ епĕ аран-аран çыратăп, тет. Çав телейсĕрскерсене шырама кайнă çынсем вĕсене тупнă та, ђатăрах хунă, çийелтен йур купаласа, çыруллă хĕрес лартса хăварнă.

Çакăнтан кайран Амунтсĕн тата тĕрлĕ çĕре çитсе курнă.

1918-мĕш çулта вăл çурçĕрти пољуса кайма тухнă, анђах темĕн тĕрлĕ хĕн-хурлăх курса пĕтнĕ пулин те, унта çитеймен. Апла пулсан та, Амунтсĕн пек хăватлă ђĕреллĕ çынсем пĕрре тытăннă шухăша ђас пăрахмаççĕ. Вĕсем ахаљ лармаççĕ, хăйсем тăвас тенине мĕнле те пулсан тăвасшăн, мел тупма тăрăшаççĕ. Амунтсĕн те пĕр канмасăр кунĕн-çĕрĕн ĕçленĕ.

Вăл авиатси ĕçĕ аталанса, çирĕпленсе пынине хытă асăрхаса,

сӑнаса пуранна. Йулашкинђен вӑл акӑ мӗн шухӑшласа хунӑ: сывлӑшра ҫӳресси вӑл ҫӗр ҫинђе ҫӳренинђен те, шывра ҫӳренинђен те хӑрушӑсӑртарах та, лайӑхрах та, тенӗ; унтан тата пођусри ҫӗрсене кайса пӗлме вӗҫекен кимрен лайӑххи нимӗн те пулас ҫук, тенӗ.

Вӗҫекен кимпе ҫурҫӗрти пођуса кайма хӑтланнисем пулкаланӑ. Амунтсӗн хӑй те ҫапла 1918 ҫулта кайма тухнӑ. Анђах ку таранђђен вӑл ӗҫ ӑнман, телейсӗр пулнӑ. Амунтсӗн вӗҫекен кимпе ҫӳрес ӗҫе лайӑхрах, тӗплӗрех ӑнласа илесшӗн пулнӑ. Вӑл ӑна йӑлтах пӗлсе ҫитес тесе нумай тӑрӑшнӑ. Шыракан тупаť теҫҫӗ. Амунтсӗн те, мӗн кирлине пурне те тупнӑ.

Пођус ҫӗрне вӗҫекен кимсемпе каймашкӑн укҫа та нумай кирлӗ пулнӑ, тата ӗҫе пӗлекен маттур ҫынсем те кирлӗ пулнӑ. Телєйне кура Амунтсӗнӗн укҫи те, ҫынӗсем те тупӑннӑ. Ђу-Йоркра вӑл 1925-мӗш ҫулта пӗр Елсворт йатлӑ ҫамрӑк иншенерпе паллашнӑ. Ҫак Елсворт хӑйне те, хӑйӗн мӗн пур мулне те ҫак Амунтсӗн аллине панӑ. Ҫапла вара Амунтсӗн вӗҫекен кимпе ҫурҫӗрти пођуса кайма хатӗрлене пуҫланӑ.

Ђӑн малтан вӑл йаропланпа тиришепӗле сӑнаса пӑхнӑ: пођусра вӗҫӗ-хӗрри курӑнми пӑрлӑ ҫӗрте ҫӳреме ђӑн лайӑххи тиришепӗл кирлӗ пулнине вӑл пит тӗплӗ пӗлсе ҫитнӗ. Вара вӑл хӑйне кирлӗ тиришепӗле Итталире тулнӑ та, ӑна „Норвеки“ йатлӑ хунӑ. Ку вӗҫекен кимӗн тӑрӑшшӗ 350 фут пулнӑ, унӑн ӑшӗнђе 18 ҫын ларса пыма пултарнӑ.

Пӗлтӗр, 1926-мӗш ҫулта, Амунтсӗн хӑй ҫыннисемпе пӗрле ҫав кимӗ ҫине ларса, ҫурҫӗрти пођуса кайма тухнӑ. Вӗсем: малтан Пӑрлӑ оккеанри Шпитсперхӗн утравӗ ҫине вӗҫсе ҫитес те, унтан тӳрех пођус урлӑ кайас, вара Ађаскӑ ҫур утравӗ ҫине пырса анас та, унтан Америке ҫитес, тенӗ. Ҫапла ҫӳресе тухма пурӗ 2000 мил тумалла пулнӑ. Ҫав тери вӑрӑм ҫула Амунтсӗн 2 кун ҫурта вӗҫсе тухма пулаť тесе шухӑшланӑ.

Ваттисем каланӑ: пӗр кун кайаслӑх ҫӗре 7 кунлӑх ҫӑкӑр ил, тенӗ. Амунтсӗн апат-ҫимӗҫпе пур тӗрлӗ хатӗре 6 уйӑхлӑх илнӗ, мӗншӗн тесен, ҫав тери инҫетри хӑрушӑ ҫул ҫинђе тем те пулма пултарнӑ. Кунсӑр пуҫне тата Амунтсӗн пођусри ҫанталӑкпа пурӑнӑҫа нумайтарах сӑнаса, лайӑхрах пӗлесшӗн пулнӑ.

Тухса кайасса вӑл Йевропран ҫу уйӑхӗнђе (майра) кайнӑ, мӗншӗн тесен, ун ђухне пођарта ҫил-тӑвӑлсем ђарӑнаҫҫӗ, тата ним курӑнми тӗтресем те тухмаҫҫӗ. Ҫавӑнпа ҫу уйӑхӗнђе вӗҫсе ҫӳреме те, ҫӳлтен сӑнама та пит лайӑх.

Ђӑнах та, Амунтсӗн йепле шухӑшланӑ, ҫапла пулнӑ. Шпитсперхӗнтен Ађаскӑ утравне ҫитеђђен 2-3 кун анђах вӗҫнӗ. Вӗҫсе пынӑ

ђухне вěсем фоттокрафипе мěн курнине пурне те ўкерсе пынă, тата тěрлě хатěрсемпе сывлăша, сивве-ăшша, ытти нумай йапаласене сăнаса пынă.

Аљаскăран Амунтсěн Америке кайнă.

Ђăн тěлěнмелле ěнтě етемěн ăс-хакăлěнђен: ěлěк темиçе çул хěн курса çўресе тухассине халě вăл, темěскерле йумахри вěçекен кайăк пек, 4-5 кун хушшинђе пěр пăтăрмахсăр вěçсе тухнă!

Çапла ěнтě XX-мěш ěмěрте тин çěр çинђе етем çитсе курман вырáн йулман: етем хăй кил-çурђěн тулашне — çěрěн сăннесăпатне — пěлсе çитнě.

---

## Йулашки сăмах.

Епир кěнеке вěçне тухрăмăр, ђаплă хастар çўревçěсен пысăк ěçне те пăртак ăнласа илтěмěр: халě ěнтě çěр çинђе мěн пуррипуккине лайăх пěлеççě.

Çěр аслă, çěр пуйан, унăн темене хисепсěр. Анђах унăн пуйанлăхěпе, унăн ырăлăхěпе ку таранђђен пěтěм етем ывăлě-хěрě ырă курса пурăнман, мěншěн тесен, ăна ђи ђейисем, ђи выçă-куçлисем йарса илнě. Çěр кăккăрне халě вěсем çеç ěмсе пурăнаççě. Пěр пирěн Совет Республěкěнђен çеç вěсене хăваласа йанă.

Вěсем нумайăн та мар, анђах мěн пур ырăлăх вěсенěн аллинђе. Вěсем выљаса, кулса пурăнаççě, ыттисем, нумайăн пулсан та, тертленсе, куççулě тăкса пурăнаççě. Лешсем — тутă, кусем — выçăхса сěмрен кайнă. Лешсем çутă та йап-йака, кусем тěттěм те лăпсăркка. Лешсем — „ырă“, кусем — „мěскěн“. Лешсем çўлте, кусем — айалта.

Сěмрен кайнă тěттěм етеме çав çўлти кăласра, çўлти хутра пурăнаканнисенђен хăйне тивěç ырăлăха туртса илес шухăш нумайђђен аса та килмен. Çапла ěмěр хыççăн ěмěр ирте-ирте кайнă. Çапла вěсем темиçе пин çул хурлăх курса ђăтса пурăннă: çўлте—турă, айалта патша, турă çырат, патша тăват, тенě.

Анђах халě çěр çинђи етем ывăлě-хěрěсенěн куçěсем ěнтě уçăлаççě. Вěсенěн куçне уçаканнисем вěсем вут ђěреллě револђутсионерсем. Вěсем çěр çинђе пурăнакан етемсене пурне те пěрлештерсе çитересшěн те, пěрле ырă курса пурăнмалла тăвасшăн.

Анђах лешсем, çўлте пурăнаканнисем, хăйсенěн аллинђи ырăлăха тўрех парасшăн мар. Çавăнпа ăна вěсенђен вăрçăсăр туртса илейес çук. Ку пěр кунта, пěр çулта пěтес вăрçă мар, мěншěн тесен,

ку пётём етем вăрçи. Ку вăрçăран вăрçа кěмесěр никам та пытанса йулайас çук, мěншěн тесен, вăл етемěн йулашки вăрçи.

Вăл пěтсен тин, вара çак çěр ирěке тухнă етем ывăлě-хěрěн ђăн кил-çурђě пулě.

Пултăр, пултăр, пултăр!

## Çырма пулăшнă кěнекесем:


1. Жюль-Верн. Завоевание земли.
2. „Вокруг Света“ шурналри статйасем.
3. Иванов Г. И. Начальный курс географии, часть 2-ая. Азия, Африка, Америка. Австралия. Издание 6-ое. Петроград. 1919 г.




## ТУПМАЛЛИ:


| | Стр. |
|---|---|
| Авалхи ҫынсем ҫӗр ҫинҗен мӗнле шухӑшлана | 3 |
| Җӑн авалхи ҫӳревҫӗсем | 5 |
| Неарх, Страпон, Птоломей | 7 |
| Фа-Хиан | 8 |
| Җиркӳ ҫӗр ҫинҗен вӗрентни | 9 |
| Арап ҫӳревҫисем | 9 |
| XIII—XIV ӗмӗрти ҫӳревҫӗсем | 10 |
| Колумп Америке тупни | 12 |
| Васко те-Кама Афрӗк тавра кайни | 15 |
| Фертинант Макеллан | 18 |
| Ҫемен Тешњов | 21 |
| Тшон Франклҗӑн | 24 |
| Паљма | 26 |
| Тинӗсри ҫӳревҫӗ Җемс-Кук | 28 |
| Ливинкстон | 34 |
| Стенли | 41 |
| Пршеваљски | 46 |
| Миклухха-Маклай | 55 |
| Нанссӗн | 59 |
| Пири. Кук. Рос. | 66 |
| Амунтсӗн. Скотт | 68 |
| Йулашки сӑмах | 72 |

# Ђăваш Кĕнеки Уйрăмĕ

**ШУПАШКАР** **ГИЗ** **ЧЕБОКÇАРЫ**

**КАНАШСКАЯ ДОМ № 15**

**Кашни хресЂен, кашни ĕçлекен**
**ЂĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔ** **кăларнă**

## КĔНЕКЕСЕНЕ

**илсе вуламалла:**

1. **В. И. Ленин**—Копператси çинЂен вĕрентни 18 п.
2. **В. И. Ленин**—Çĕрпе хресЂен çинЂен.
3. **В. И. Ленин**—Екконоĕккăн çĕнĕ политтĕкĕ çинЂеп . . . . . . . . . 10 п.
4. **В. И. Ленин**—Йалти Ђухăнсем çинЂен.
5. **В. И. Ленин**—Совет йĕрки çинЂен.
6. **В. И. Ленин**—Хĕрарăм çинЂен.
7. **В. И. Ленин**—Сахал пулин те, лайăхрах пултăр.
8. **В. И. Ленин**—Ĕçлекенсемпе хресЂенсен çыхăнăвĕ çинЂен . . . . 13 п.
9. **В. И. Ленин**—Вĕренес ĕç çинЂен.
10. **В. И. Лекин**—Релйки çинЂен.
11. **Сталин**—Ленинпа ленинисăм çинЂен . . 40 п.
12. В. И. Ленина аса илнисем . . . . . . . 35 п.

Кусемсĕр пуçне В. И. Ленин çырнă ытти кĕнекесем те пур. Вĕсем çинЂен тĕплĕрех пĕлме—катталăк ыйтса илĕр. Ăна укçасăрах йараççĕ.

**В. И. Ленин кĕнекисен хакне—йўнетнĕ.**

**Хакĕ 60 пус.**